Леонид Агаков

# Çапăçу хирĕнче



Чăвашгосиздат

1 9 4 [illegible]

Гос.
Публичная
Библиотека
в
Ленинграде

ПРОВЕРЕНО
20 07

ЛЕОНИД АГАКОВ

Чув.
2-527а
С(чув)
К А23

# ÇАПĂÇУ ХИРĔНЧЕ

*Калавсем*

*ЧĂВАШГОСИЗДАТ*
*Шупашкар—1944*

*Тăван Çĕршывшăн паттăрăн çапăçса пуçне хунă ВЛАДИСЛАВ шăллăма асăнса*

***АВТОР.***

Ф/х 28206 - чув.

Рес[redacted]ская

[redacted]

# Вĕри чĕре

## I.

Нимĕçсем килессине ялçыннисем пĕр эрне малтанах пĕлчĕç, мĕншĕн тесен ялтан çич-сакăр çухрăмри мăн çул тăрăх вĕсен танкĕсем, машинĕсем хĕвелтухăçнелле иртсе кайнине нумайăшĕ курнă, тата таврари ялсенчен те хыпарсем çитнĕ. Вăл хыпарсем калама çук нумай тĕрлĕ пулнă, хăшне-пĕрне ĕненес те килмен—ытла та тискер, тӳсме çук хăрушă пулнă вĕсем. Çавăнпа та нимĕçсем пырса кĕрес саманта пурте шикленсе, хăраса, пĕтĕм чĕрепе çӳçенсе кĕтсе тăчĕç. Халь тин ĕнтĕ аякри ырăнсене тухса кайма та май килмен,—ку района нимĕçсем пĕтĕмпех çавăрса илнĕ. Çитменнине, вăйпитти арçынсем унччен пурте Хĕрлĕ Çара кайнă, ялта хĕрарăмсем, тата ватăпа вĕтĕсем çеç тăрса юлнă. Мĕн тума пултарнă-ха вĕсем?

Германи салтакĕсем пĕтĕмпех çаратаççĕ, кĕлетсенчен пĕр пĕрчĕ юлми шăлса тухаççĕ тенине илтнипе—кашни килтех кăшт пахарах япаласене, тумтирсене, тырра-пулла пытарма тăрăшрĕç, уллахрах ырăнсене шăтăксем алтса çĕре чикрĕç. Çапах та, нумай çулсем хушши пухăнса пынă пĕтĕм пурлăха ăçтан пытарса çитерен? Хăшĕсем тата, нимĕç салтакĕсем чăн-чăн хурахсем пулнине пĕлсе çитейменнипе, ытлашши тăрăшсах та каймарĕç кун пирки.

— Пур ăпăр-тапăрпа мĕн туччĕр-ха вĕсем? Салтака

хресчен япалисем мĕн тума кирлĕ пулччăр?—тени те илтĕнкелерĕ унта-кунта. Чăнах та, кайран вĕсем питех те ӳкĕнчĕç, анчах ним тума та май килмерĕ...

Ялăн анат вĕçĕнче, масар патĕнче пурăнакан Наум Рыбаковпа унăн арăмĕ Ларис та чылай япаласене пытаркаларĕç. Анчах нумай пурлăх çаплипех, пытармасăрах юлчĕ. Ларис хăй ĕçлеймерĕ—ăна вăл йывăр çын пулни кансĕрлерĕ; унăн упăшки, сывлăхĕ начар пирки çара каяссинчен те хăварнăскер, ку йĕпе-сапара пĕрмай халсăр çӳрерĕ.

— Мĕн пуласси—пулĕ, текех пĕр састăп çĕр те алтмастăп,—терĕ те вăл каçалапа пахчаран йĕп-йĕпе таврăнса, пылчăклă аттисене хывмасăрах вырăн çине тăсăлса выртрĕ. Ирччен те тăмарĕ вара.

Çав каçах, пĕр тăхăр сехетре, вĕсем патне учительница Нина Филипповна чупса пычĕ. Пулас ача валли кĕпе çĕлесе ларакан Ларис, ăна алăк уçса кӳртсенех, вăл таçта кайма хатĕрленнине ăнланчĕ: илемлĕ çамрăк хĕр, ку таранччен яланах пит таса тумланса çӳренĕскер, халь амăшĕн кивĕ сăкманне тăхăннă, пилĕкне чĕн пиçиххипе çыхнă, уринче темле пысăк сăран атă, çурăмĕ хыçĕнче—кутамкка.

— Мĕне пĕлтерет ку?—тĕлĕнсе ыйтрĕ Ларис.

— Ним те ан шарла,—терĕ Нина.

— Ара эс...

— Каятăп. Сана ик сăмах калас тесе çеç килтĕм. Питĕ васкатăп хам.

Хĕрĕн сассинче вăл хытă пăлханни, унăн чĕри сиксе тухас пекех тапни, çав хушăрах вăл питех те кĕтмен хыпар çинчен каласшăн пулни сисĕнчĕ.

— Ăçта каятăн?

— Хамăрăннисем патне каятăп...

Капла калани Лариса тата ытларах тĕлĕнтерчĕ. Учительница çине пăхса тăрса, вăл хăй те пăлханса кайрĕ халь.

— Епле хамăрăннисем патне?—урмăшнă сасăпа тĕпче-

ме тытӑнчӗ вӑл.—Хӗрлӗ Ҫара-и? Нимӗҫсем чугунҫул урлах каҫса кайнӑ, тет вӗт. Пурӗпӗр ямаҫҫӗ сана, тытаҫҫӗ...

— Тытасси вӑл паллӑ мар-ха, анчах манӑн кунта юлсан та ҫав-ҫавах вилмелле пулать. Таврари ялсенче пӗтӗмпех нимӗҫсем, паян-ыранах пирӗн пата та ҫитсе кӗмелле. Вӗсен куҫӗ тӗлне пулсан—пӗтрӗм вара эп, пӗр сӑмахсӑрах.

— Мӗншӗн?

— Мӗншӗнне ыйтса тӑмӗҫ вӗсем. Этемсем мар вӗт, нимӗҫсем килеҫҫӗ.

— Кам пӗлет, тен тивмӗҫ?

— Кам пӗлет мар, тусӑм, хамах пӗлетӗп. Ҫителӗклех илтнӗ ӗнтӗ вӗсем ман йышши ҫынсене мӗн тунине. Хаҫатсенче те вуланӑ, радиопа та калаҫҫе.. Никама тивмесен те—мана ҫакаҫҫех. Пӗлетӗн вӗт: эп комсомолка, активистка, райком членӗ, икӗ пичче—фронтра, фашистсене хирӗҫ ҫапӑҫаҫҫӗ...

Ларис самантлӑха шухӑша кайса, ӑна лӑплантармалли сӑмах шырарӗ.

— Ун ҫинчен нимӗҫсем пӗлмеҫҫӗ·ҫке!

— Э-э, пӗлтерекенӗсем тупӑнӗҫ вӗсем,—аллипе сулчӗ учительница.—Ялта пӗр-пӗр сутӑнчӑк тупӑнатех!

Вӑл сӗтел ҫинчи самовартан шыв ярса ӗҫрӗ те, тарӑнӑн сывласа ячӗ.

— Эпӗ акӑ мӗн пирки килтӗм сан пата, Ларис... Манӑн каймаллах ӗнтӗ, ниепле майпа та юлма юрамасть, ун ҫинчен калаҫмалли те ҫук. Хӑҫан тавӑрнасси паллӑ мар. А манӑн килте анне юлать. Чирлӗ вӑл. Унӑн чирӗ пиркиех кунтан тухса каяймарӑмӑр эпир. Аслӑ пиччен ҫемьи патне, Атӑл ҫине кайма май пурччӗ пирӗн...

— Пелетӗп, пӗлетӗп,—пуҫӗпе сулчӗ Ларис.

— Тархасшӑн, кайса пӑхкала эс ӑна. Самайланаймасан, пулӑшкала пӗртак. Чипер сывӑ пулсан—сана темле майпа та тав тӑвӑп уншӑн!

— Юрӗ ара, юрӗ,—хавасланса килӗшрӗ Ларис.—Анчах та, манӑн ҫуратмалли вӑхӑт ҫитсе килет пулмалла-

ха, тем—çак кунсенчех пулассӑн туйӑнать... Хама та пӑхакан кирлӗ пулмӗ-ши, тетӗп...

— Ун пек пулсан, санӑн упӑшку пур вӗт.

— Вӑл апла та-ха...

— Сываларах парсан, анне хӑй те килсе пулӑшма пултарать сана... Тупата, урӑх никама та калама пӗлместӗп, пӗр эсир çеç пирӗн çывӑх çынсем. Çак йывӑр самантра тархасшӑн ан пӑрахӑр!

— Юрӗ, терӗм-çке, ан пӑшӑрхан. Мӗн май килнӗ таран пулӑшатпӑрах ӗнтӗ.

— Шансах каятӑп эппин, Ларис...

— Шанмасӑр тата!

Нина пукан çинчен тӑчӗ те, Ларисӑна алӑ пачӗ.

— Ну, сывпул, тусӑм... Те курмалла пулӗ урӑх, те—пулмӗ... Калама хӗн. Ятӑм пачах çухалсан—асӑнӑн вара, çавӑн пек лара-тӑра пӗлмен хӗр пурччӗ, тесе...

— Тен, ялтах юлсан та нимех те пулмӗччӗ?—татах, юлашки хут ӳкӗтлеме тӑчӗ ӑна Ларис. Унӑн халь ӑна çав тери хӗрхенсе, епле те пулин ыр тӑвасси килчӗ.

— Çук, çук...—пуçне пӑркаларӗ Нина.—Маншӑн халь пӗр çул кӑна. Вӑхӑтлӑха та пулин кунти çынсен куçӗ умӗнчен çухалас пулать.

Вӑл Лариса майӗнчен ыталаса илчӗ те, хытӑ чуптурӗ. Иккӗшин те куçӗсем шывланчӗç.

Ларис Нинӑна ӑсатма çенӗке тухрӗ.

— Çапах та, ӑçта каятӑн-ха эс халь?—ыйтрӗ вӑл унтан крыльца çинче.

— Хам та пӗлместӗп,—иккӗленерех ответ пачӗ Нина.— Ытлашши инçех мар пулмалла. Пурӑна-киле паллӑ пулӗ-ха. Ну, тата тепӗр хут сывпул! Мана юлташсем кӗтсе тӑраççӗ...

Нина йӑпӑртах крыльца çинчен анчӗ те, каçхи тӗттӗмлӗхре çухалчӗ. Ларис темиçе самант хушши унӑн ури сассисене итлесе тӑчӗ. Кунпа пӗрлех, ун хӑлхине инçетре тупӑсем ухлатнӑ сас пырса кӗчӗ. Тӗттӗм витӗр тавралла пӑхсан, икчиç çӗрте вӑйлӑ пушар çуттисем курӑнса кайрӗç. Нумаях та пулмасть телейлӗн, ним хуйхи-суй-

хисĕр пурăнна ялсем халь вутпа хыпса кĕл пулнă унта, вĕри çулăмра совет çыннисен пурлăхĕ, вĕсен тарĕ, вĕсен юнĕ çунна...

Сивĕ çил пÿрт çумĕнчи йывăçсен çара тураттисене силлерĕ, майĕпе çăмăр шăпăртатма пуçларĕ. Ларисăн чĕри сасартăк ыратса пăчăртанчĕ.

— Епле хăрушă...

Вăл часрах çенĕк алăкне питĕрсе кĕчĕ те, кровать патне пырса упăшкине хулпуççинчен тĕкрĕ:

— Сик-ха, Наум... Шăнса карăм эпĕ.

Упăшки нимĕн те чĕнмерĕ, вăранмарĕ пулас, сăмси витĕр вăрăмăн сывласа ярса, тепĕр айăкĕ çине çаврăнса выртрĕ çеç. Ларис ун çумĕнче часах ăшăнчĕ, анчах çывăрса каяймарĕ. Унăн шухăшĕсем таттисĕрех Нина таврра çаврăнчĕç. Ăна вăл пĕтĕм чĕререн хĕрхенсе выртрĕ.

— Ăçта кайрĕ-ши ĕнтĕ вăл çак пÿтсĕр çанталăкра? Мĕн айăпшăн килне пăрахса кайса асапланас пулать-ха унăн? Эх, ку вăрçă...

Нинăна Ларис мĕн пĕчĕкренпех пĕлнĕ, вăл унăн куçĕ умĕнчех ÿснĕ. Пĕр хĕл вĕсем шкулта та пĕрле вĕренпĕ, пĕр парттă çинче ларнă. Ашшĕ пулманнипе, Нинăсем колхоз пуçланиччен яланах выçăллă-тутăллă пурăннă. Кайран, пиччĕшĕ тахăш хулари заводра ĕçлеме пуçласан, ăна хăй патне илсе кайса вĕрентнĕ те, вара вăл яла учительница пулса таврăннă. Ялти шкулта пĕтĕмпе те пĕр хĕл çеç ĕçлерĕ-ха вăл, анчах ăна пурте юратакан пулса çитрĕç. Пурте ăна „пирĕн Нина“ тесе чĕнчĕç.

— Килтех юлмаллӑччĕ унăн, ниçта та каймалла марччĕ,—çаплах хăйĕн пăçархи сăмахĕнчен пăрăнасшăн пулмарĕ Ларис.—Ниушлĕ вара вăл комсомолка пулни çинчен кам та пулин каласа парĕччĕ-ши? Ялти çынна таçти ют çĕршывран килнĕ тăшмана сутма—камăн чĕринче хал çиттĕр? Ун пек çĕлен чĕреллĕ çын чăнах та тупăнсан—ăна çавăнтах, пĕр сăмахсăрах çапса пăрахас пулать. Пĕтĕм халăх умĕнче, урнă йытта вĕлернĕ пек, çĕр тĕслĕ асаплантарса вĕлермелле вăл йышши этеме!..

2.

Ку тепĕр куннех пулчĕ. Ирхине Ларис вут хутса янăччĕ кăна—вĕсем патне çав тери хăраса ӳкнĕ кӳршĕ хĕрачи Мотя чупса пычĕ.

— Пĕтрĕмĕр, инке, çитрĕç хайхисем!

— Камсем?

— Пĕлместĕн пулать? Нимĕçсем!..

— Чăнах-и?!—Ларисăн сăнĕ шуралса кайрĕ, алли-уринчи вăй сасартăках таçта кайса кĕчĕ.

— Урам туллиех, инке! Темле хурарах симĕс шинельсемпе, хура кĕске пăшалсемпе, майракаллă хура тимĕр калпаксемпе... Чисти шуйттансем пекех!

— Мĕн тăваççĕ ĕнтĕ вĕсем?

— Кам пĕлет! Халь чиркӳ патĕнче чарăнса тăчĕç те, хăйсен чĕлхипе пакăлтатаççĕ кăна. Тем мурĕ йăслаççĕ, ним ăнланмалли те çук... Ну, машин вара, машин!.. Пирĕн кĕтӳре сурăх та ун чухлĕ çук пуль. Эпир Санькăпа пахчаран шăтăк витĕр пăхса тăтăмăр... Шутсăр хăрушă, инке!

— Мĕн калăн ĕнтĕ... Тем те курса ларатпăр пуль-ха!

Урамра ура сассисем илтĕнчĕç. Мотя чӳрече патне чупса пырса пăхрĕ те, хăйне такам питрен çапнă пекех аяккалла сиксе ларчĕ.

— Килеççĕ!..—кăшкăрса илчĕ вăл.

— Кунта-и?—ни чĕрĕ, ни вилĕ пулса тăчĕ Ларис.

— Кунта пулмалла. Тăваттăн!

Чăнах та, урам алăкĕ хыттăн уçăлса хупăнчĕ, унтан пусма картлашкисем кĕмсĕртетрĕç те—пӳрте тăватă нимĕç кĕрсе тăчĕç. Мотя каланă пекех, шуйттан тĕслĕскерсем, кĕске майракаллă хура калпаксемпе...

Тăрук ӳкесрен, Ларис хăрах аллипе кăмака хĕрринчен тытрĕ.

— Где хозяин?—ыйтрĕ пĕри.

— Пĕлместĕп .. Таçта тухса кайрĕ...—пуçне пăркаласа, пăшăлтатса илчĕ Ларис.

Нимĕçсем унталла-кунталла пăхкаларĕç.

— Матка! Давай яйки! Пятьдесят штук!—терĕ вара малтан ыйтнă нимĕçех, Лариса темле шăнтса яракан куçĕсемпе хыпашласа.—Ещо масло, килограм, два, три!

Нимĕç виçĕ пӳрнине çĕклесе кăтартрĕ.

— Ун чухлĕ çук манăн,—терĕ Ларис, сăмахĕсене пыртан аран пăчăртаса кăларса.

— Ну, давай!

Ларис, урисене аран шутарса, хăй мĕн тунине те лайăххăн туймасăр, çенĕкри чăлана тухрĕ. Ун хыççăн пĕр салтакĕ пычĕ. Ик минутранах вĕсем каялла кĕчĕç,—нимĕç салтакĕ тимĕр калпакне хывса унта çăмарта тултарнă, тепĕр аллине икĕ автан тушки тытнă.

— О-о, карош, карош! Зер гут!*)—куçне хĕссе, шăл витĕр кулса илчĕ тепри, куна курсан.

Ларис çаплах сывламан пек пулса тăчĕ.

Нимĕçсем пӳртрен тухса кайрĕç. Анчах вĕсем пусма картлашки çинчен ансанах, сасартăк икĕ хутчен пăшал сасси кĕрслетрĕ. Ларис:—ай! терĕ те, сак çине йăванса кайрĕ. Килхушшинчен нимĕçсем ахăлтатни илтĕнчĕ, унтан татах пăшал печĕç. Кăмака хыçĕнче пытанса тăнă Мотя, нимĕçсем Лариса персе вĕлерчĕç пуль тесе, часрах ун патне сиксе тухрĕ.

— Инке! Инке! Мĕн пулчĕ сана?—силлеме тытăнчĕ вăл кăвакарса кайнă Лариса.—Тăр-ха, кала, мĕн пулчĕ?..

Ларис куçĕсене уçрĕ те, чылайччен ним калаçмасăр выртрĕ. Мĕн пулса иртнине ниепле те тавçăрса илеймерĕ пулас.

— Ого-го-го!—ахăрса ячĕç нимĕçсем килхушшинче. Мотя ирĕксĕрех чӳречерен пăхрĕ те, вĕсем Ларисссен сысна açине тăваттăн тăватă уринчен тытса сĕтĕрнине курчĕ. Паçăр вĕсем сыснана пенĕ иккен...

— Мĕн унта?—ерипен кăна ыйтрĕ Ларис.

— Тухса кайрĕç,—терĕ Мотя. Ăна татах пăлхантарас

---

* Пит аван!

мар тесе, вёсен пĕртен-пĕр сыснине илсе кайни çинчен шарламарĕ вăл.

— Вилсех каяттăм хăранипе,—терĕ Ларис.

— Эп хам та çав...—пуçĕпе сулчĕ Мотя.—Сана персе пăрахрĕç пулĕ, тесе...

— Чим-ха, персе те пăрахĕç...

— Эп таратăп.

— Ăçта таратăн ĕнтĕ халь тин? Пур çĕрте те нимĕç...

— Вăрмана таратăп.

— Мĕнле пурăнатăн вара унта? Пурĕпĕр вилетĕн...

— Вилместĕп. Вăрманта халь çын нумай!

— Камсем пулччăр?

— Пирĕн ялсем те пур...—Мотя унăн-кунăн пăхкаласа илчĕ.—Асту, никама та ан кала! Эп сана вăрттăн çеç калатăп,—терĕ вăл шатах мăн çын пек.—Пĕлессӳ килет пулсан, унта халь пысăк отряд пухăннă!

— Ăçтан пĕлетĕн эс?—Ларис хăрах чавси çине çĕкленсе, хĕрачана тĕлĕнсе пăхрĕ.—Камран илтрĕн?

— Илтрĕм. Мана Санька каларĕ. Вĕсен куккăшĕ кайнă унта. Нина та çавăнтах кайнă. Вĕсем хăйсене партизансем, тесе чĕнеççĕ тет. Пăшалсем те, тем те пур тет вĕсен...

— Авă мĕн..—ăнланса илчĕ Ларис.—Нина унта кайнăха эппин! Маттур хĕр, тупата... Çакнашкал хăраса пурăниччен—вăрмана кайни пин хут лайăхрах ĕнтĕ... Йывăр çын пулман пулсан, хам та паянах каймалла.

Çак вăхăтра Мотя амăшĕ чупса кĕчĕ. Ачи кунтине курсан, савăнсах кайрĕ.

— Эп сана паçăртанпах шыратăп!

— Мана юлташлăх пулчĕ вăл,—терĕ Ларис.—Халь çеç нимĕçсем килсе кайрĕç те, иксĕмĕр те чĕтресе ларатпăр-ха...

— Кунта та çитрĕç эппин?—тарăнăн сывласа илчĕ Мотя амăшĕ.—Пирĕн пата та пычĕç... Анчах эп вĕсем пынине курсанах пахчаналла тухса тартăм. Хуть те мĕн туччĕр, пуçăм кăна çăлăнтăр, терĕм.

— Мĕн тунă вара?

— Пĕлместĕп, киле кĕрсе те пăхман... Ялта мĕн пулса пынине пĕлместĕн-и-ха эс? Ним те илтмен-и? Турăçăм! Ара вĕт тамăк пуçланса кайнă, чăн тамăк! Леш енче ик хĕрарăма персе пăрахнă ĕнтĕ...

— Мĕншĕн?

— Кам пĕлет! Кĕлет уççисене паман тет-и... Колхоз председателĕн шăлнĕне, леш чахоткăллă Сёмкăна, хăйсен урам хапхин каштинченех çакса хăварнă, ту вĕçĕнчи Матрешкăна—вăрçă пуçлансанах хуларан таварăннăччĕçке-ха, çавна—кĕпине уçсах пăшал шомполĕпе хĕнесе тăкнă... Йĕркипех, йĕркипех çапла! Арçын тенисене халь пĕр çын юлмиччен шкул умне пухаççĕ. Тем тума вара! Сан старикку ăçта?

Ларисăн чĕри яштах турĕ.

— Пĕлместĕп ăçтине... Ирех, тимĕрçĕ патне тесе, кайрĕ те, çук-ха.

— И-и, тимĕрçи лекнĕ ĕнтĕ!—аллипе сулчĕ Мотя амăшĕ.—Ăна халь çеç мана хирĕç виççĕн тытса хăпарса кайрĕç. Хăрах куçĕ шыçса ларнă, сулахай хăлхинчен юн сăрхăнса пырать—питĕ хытă çапнă пулмалла.

— Ман Наум та лекнĕ пуль эппин!—аллисене кăкăр умне хĕреслесе тытса, куçĕсене чарса пăрахрĕ Ларис.—Ма ятăм, ма чармарăм! Тупата, килтех лартмаллаччĕ...

— Ăна-куна кам пĕлнĕ!

— Пĕлмен çав, нимĕçсем килни çинчен те Мотяран тин пĕлтĕм,—куллянса илчĕ Ларис.

— Тепĕр тесен, тытса каяс пулсан вĕсем хуть те ăçтан та тытма пултараççĕ, вĕсенчен вăрмана тарнипе çеç хăтăлма пулать,—хушса хучĕ Мотя.

Хĕрарăмсем ахлатрĕç, хуйхăрчĕç, ниçта кайса кĕрейми куллянчĕç. Анчах тин ку хурлăхран хăтăлмалли меслет тупăнмарĕ вĕсемшĕн.

— Пĕтмелли çитрĕ. Вилĕм кăна кĕтсе лар ĕнтĕ халь,—терĕ Мотя амăшĕ.—Антихрист килет, тетчĕç. Çавсем çитрĕç ĕнтĕ. Çĕр айĕнчи сатанасемех килчĕç!

— Ӗмĕрлĕхех мар пуль-ха, тен Хĕрлĕ Çар тавăрăнса килĕ те, вĕсене каялла хăваласа ярĕ?—сăмах хушрĕ Мотя каллех.

— Кам пĕлет, ачам, кам пĕлет... Ун пек пулсан вара эпир тупăкран чĕрĕлсе тăнă пекех пулĕччĕ те, кам пĕлет?

— Санькăсен куккăшĕ чăнласах каларĕ тет: эпир нимĕççене пурĕпĕр нумай тăратмастпăр, хăваласа яратпăр, тесе каларĕ, тет!—хăй шухăшĕ çинчех тăчĕ Мотя.

3.

Кун иртрĕ, каç пулчĕ. Наум таврăнмарĕ.

Ларис чĕри хыпса тухас пекех çунчĕ, вăл ниçта лармалла тăма та вырăн тупаймарĕ.

Ӑçта кайса кĕчĕ-ши? Нимĕççен аллинех лекрĕ-ши? Мĕн турĕç-ши вара ăна вĕсем? Вĕлерчĕç-ши, таçта илсе кайса хупрĕç-ши? Тен, хальччен шăмми-шакки те сивĕнсе хытрĕ-и унăн?

Темиçе хутчен урамалла тухса пăхрĕ, тĕл пулакан хĕрарăмсенчен ыйтрĕ. Ним усси те пулмарĕ, упăшки çинчен нимĕн те пĕлеймерĕ. Ыттисем çинчен нумай каларĕç: пĕрине персе вĕлернĕ, теприне хăй килĕнчех штыкпа чиксе пăрахнă, виççĕмĕшне ним пĕлми пуличчен хĕнесе тăкнă...

Çĕр каçа чăлăм та куç хупмарĕ вăл.

Урампа иртекен кашни çынăн ура сассинех тăрса итлерĕ, кашнинчех Наум килнĕн туйăнчĕ. Анчах кĕтни ахалех пулчĕ.

Çурçĕр тĕлĕнче ял хыçĕнче пулемет шатăртатма тапратрĕ, темиçе хутчен те вăйлă взрывсем илтĕнчĕç—пӳрт кантăкĕсем те чĕтренсе илчĕç. Ларис чĕри кăкăртан сиксе тухас пек тапрĕ.

— Пĕреххут, сасартăк мĕн те пулин пултăрччĕ...

Çапла шухăшланă вăхăтра ăшри ачи тапăлтатса илчĕ. Ларис хăйĕн пысăкланса кайнă хырăмне ыталаса, шăлне çыртса лартрĕ.

— Мĕн тума çуралатăн-ши эс?..

Ку—унăн пирвайхи ачи пулнă, унăн тин кăна амăшĕ пулма тӳр килнĕ. Малтанхи ачана хĕрарăм яланах пит пысăк савăнăçпа кĕтсе илет, теççĕ, анчах Ларисăн ку пачах урăхла пулса тухнă. Хырăм пулман пулсан, нимĕçсен тыткăнĕнчен ăçта та пулин тарса ӳкме пулатчĕ и,—каплипе ăçта каян? Вырт та—вил...

Ирхиве каллех Мотя чупса пычĕ.

— Эс çĕрле мĕн те пулин илтрĕн-и?—хашкаса ыйтрĕ вăл.

— Илтрĕм... Пит хытă печĕç,—сӳрĕккĕн ответ пачĕ Ларис.

— Мĕн пулнă, тетĕн?

— Ăçтан пĕлем эпĕ? Ниçта та тухман, никампа курса калаçман...

— Пирĕн ялтан кайнă партизансем нимĕçсене килсе тапăннă, инке! Каларăм вĕт сана, вăрманта отряд пур тесе...

— Вара мĕн пулнă-ха?

— Çирĕм нимĕçе вĕлернĕ, тет. Гранатăсемпе пенĕ. Анчах пирĕннисенчен те пĕри вилнĕ... Малтанах вилмен пулнă та, кайран, нимĕçсем сĕтĕрсе килсен, вилсе кайнă тет вара...

— Кам пулнă вăл?—сасартăк Мотя сăмахне пӳлчĕ Ларис. Унăн пуçĕнче çак самантра çиçĕм пек шухăш вĕçрĕ: тен, Наум ăна каламасăрах партизансемпе кайнă пуль те, кĕçĕр вĕсемпе пĕрле çапăçава кĕрсе—пуçне хунă...

— Тимĕрçĕ ывăлĕ, Тимоха,—терĕ Мотя.—Халь вара уншăн ашшĕне, тимĕрçине хăйне çакаççĕ, тет. Шкул умĕнче виселица тăваççĕ... Наум пичче тавăрнмарĕ-и?

— Çук, тавăрнмарĕ,—хаштах сывласа ячĕ Ларис.—Пĕтрĕ пулмалла ĕнтĕ...

Ларис питĕ хуйхăрнине кура, Мотя кăштах шарламасăр ларчĕ те, ăна лăплантарма пикенчĕ:

— Эс ытлах ан çун, тен нимех те пулман-тăр. Пытанать пуль ăçта та пулин.

— Пытанас пулсан та, мана систермелле-çке вăл!
— Апла та... Тен, май килмен?
— Тем ĕнтĕ, шанмастăп тин...
Мотя тухса кайсан Ларис вырăн çине тайăнчĕ те, чунĕ хурланса килнипе макăрса ячĕ. Ăна халь унăн пурнăçĕ яланлăхах пĕтсе килнĕ пек туйăнчĕ. Упăшкине нимĕçсем вĕлернех пулсан, ăна тата йывăртарах пулать-çке... Эрнерен е иккĕрен ача çуралмалла, пĕччен мĕн тума пĕлес пулать унпала? Ни Наумăн, ни унăн хăйĕн пĕр тăван та çук—вĕсем иккĕшĕ те тăлăх пулнă,—кӳршĕсем халь сынна пулăшма мар, хăйсем епле пурăнса çитерессине те пĕлмеççĕ... Ма пулчĕ-ши ку ача пĕреххут, ма пулчĕ-ши!
Ларис каллех Нинăна аса илчĕ.
— Тупата, манран вăл пин хут телейлĕ...
... Талăк çура ытла сывăрмансker, ывăнса çитнипе, ерипен тĕлĕрсе кайрĕ. Анчах çур сехетренех çавтери хăраса вăранчĕ.
— Вставайт!—тесе хыттăн кăшкăрчĕ ун çине тахăшĕ.
Куçĕсене уçса пăхрĕ те—чутах чĕри тапма чарăнатчĕ. Пӳртре каллех темиçе нимĕç тăраççĕ мĕн.
— Давай германский солдат хороший вещь! Сундук давай, чемодан, амбар, все!—кăшкăрса пăрахрĕ пĕри.
Тăруках ăнланса илеймерĕ Ларис. Нимĕçсем çине ухмаха ернĕ çын пек пăхса ларчĕ. Çав вăхăтрах тепĕр нимĕçĕ вырăн çине сарнă ăшă одеяла карт! туртрĕ те Лариса çĕрелле шутарса антарчĕ. Одеялне çавăнтах хутлатса теприне тыттарчĕ.
Унтан вара ним майсăр çарату тапранса кайрĕ...
Сĕтел çинчи самовара илчĕç, пăтари ик кĕрĕке, шкапри кĕмĕл кашăксене, арчари тĕрлĕ çитцă-пурçăнсене, ăшă кĕпесене, тутăрсене, пушмаксене. Юлашки икĕ çул хушшинче Лариссем нумай паха япаласем туяннăччĕ,—пурнăç аван пулнă-çке-ха,—темиçе минут хушшинче нимĕн те юлмарĕ! Çие тăхăннă ăшă кофтăна та пулин кăрт-карт турткаласа хывса илчĕç.
Ларис пушă пӳрт варринче юпа пек хытса юлчĕ. Па-

чах ăнран тухса кайрĕ вăл. Макăрма—куççулĕ пулмарĕ, кăшкăрма—сасси тухмарĕ... Чылай вăхăт иртсен тин, кăмака хыçĕнче выртнă кивĕ сăкмана пĕркенсе Мотясем патне кайрĕ те, чĕри кӳтсе килни сирĕличченех макăрчĕ вара.

## 4.

Çĕрле Ларис килне пĕччен тавăрăнма хăрарĕ, вăл хăйпе пĕрле Мотяна илсе пычĕ. Пăч тĕттĕм урам тăрăх сапурсем çуммипе, шăппăн, ним сассăр шуса хăйсен килĕ патнерех çитсен, вăл ту енчен такам хуллен кăна юрласа килнине илтрĕ:

— Бывали дни веселые,
Гулял я молодец...

Ку сасă ăна Наум сасси пекех туйăнса кайрĕ, анчах куна тăруках ниепле те ĕненес килмерĕ.

— Чим-ха, тăрар, иртсе кайтăр çав çын,—терĕ вăл Мотяна хуллен. Хăй çавтери тинкерсе итлерĕ. Юрлакан çын çывхарнă çемĕн çывхарчĕ.

— Бывало, вспашешь пашенку,
Лошадок уберешь,
И к ней тропой знакомою
В заветный дом пойдешь...—

юрларĕ вăл. Халь ĕнтĕ иккĕленсе тăмалли пĕтрĕ. Ларис хăй упăшкин сассине уççăнах уйăрса илчĕ.

— Мĕн пулнă куна?—тĕлĕнсе хытсах кайрĕ вăл.— Çакăн пек хăрушă та тискер вăхăтра, йĕри-таврара вĕçĕмсĕр юн юхнă вăхăтра... темĕнле ĕçкĕ юрри юрлать! Ухмаха ермен-и вăл? Çынна ытлашши асаплантарсан, вăл тăнран тухса каять, теççĕ...

Çапла шухăшсемпе, ним чĕнмесĕр, сасартăк шăннă пек пулса чĕтресе кайрĕ те, сапур çумне хытăрах йăпшăнчĕ.

Наум хапхаран кĕрсе кайрĕ, пӳрт алăкне хăнтăртаттарса уçрĕ. Ун хыççăн Лариспа Мотя та васкасах кĕчĕç.

— Кам ку? — хыттӑн ыйтрӗ вӗсенчен тӗттӗм пӳрт варринче тӑракан Наум. — Мӗншӗн ҫутӑ ҫук?

— Эпӗ-ха ку, лампине халех ҫутӑпӑр, — терӗ ӑна хирӗҫ Ларис, халь те чӗтреме чарӑнаймасӑр.

— Мана кӗтмерӗн пуль-ха эс!

— Ма апла калатӑн? Кӗте-кӗте ӑнран тухса каяттӑм, чӗррӗн курасса та шанми пултӑм...

— Э-э, эп халех вилес ҫук-ха! — Наум мӗлки тӑй-тай турӗ те, вӑл сак ҫине йывӑррӑн ларни илтӗнчӗ.

— Ларис лампа ҫутрӗ, часрах упӑшки ҫине пӑхрӗ. Икӗ кун ҫухалса пурӑннӑ хыҫҫӑн вӑл сыввӑн таврӑннине те ӗненесшӗн пулмарӗ вӑл.

— Чиперех-и эс, ним те пулман-и?

Наум ун ҫине ыйхӑланӑ тӗслӗ хӗсӗк куҫӗсемпе тӑрӑнчӗ те, сасартӑк кулса ячӗ.

— А мӗн пултӑр мана? Кам тивтӗр?..

— Ҫынсене нумай пӗтерчӗҫ вӗт...

— Ҫынсем вӑл — ҫынсем, а эпӗ вӑл — эпӗ, Наум Рыбаков, пурӑнма пӗлекен этем... Ӑнлантӑн-и? Пыр та калаҫ манпа!

Упӑшки ҫӑмӑлланса калаҫни Лариса иккӗлентере пуҫларӗ.

— Ай, Наум, эс ӳсӗр мар-и ҫак?

— А мӗн? — кӑпӑкланнӑ тути хӗррисене шӑлса илчӗ ку.

— Тупата, эс ӳсӗр вӗт!

— Пулма та пултарать.. Ӳсӗрех мар конешнӑ, но ӗҫнӗ. Так, иккӗн пӗр литр... Французски эрех ӗҫнӗ, польски колбаса ҫинӗ. И тата германски папирос туртатпӑр...

Наум кӗсйинчен вӑрӑм ҫинҫе пирус кӑларчӗ те, ӑна чӗртме лампӑ патнелле пӗр утӑм ярса пусрӗ. Анчах ҫавӑнтах тайӑнса кайса пуканран такӑнчӗ.

— Э-э, чорт! Хаяр-ҫке эрехӗ! Урараан тытать... — кулкаласа мӑкӑртатма тапратрӗ вӑл. — Закуски мировой вара! Сан тутанса пӑхасчӗ... Теприниче илсе килетӗп-ха, ҫитерсе пӑхтарӑп заграничный паштет...

Ларис чӗри теме сиснӗ пек пӑлхавлӑн тапма пуҫларӗ.

Упăшкин сăмахĕсем, пĕр-пĕринпе питех çыхăнса пыман пулин те, ăна хытах шухăшлаттарма пуçларĕç.

— Кам ĕçтерчĕ капла сана? — ун çумне пырса ларса, куçĕнчен тĕпчевлĕн пăхрĕ вăл.

— Чаплă çын,— терĕ Наум. — Шутсăр...

— Кам ара вăл, пит чаплăскер? Эс ĕнер ирхине тимĕрçĕ патне каятăп, тесе тухса карăн вĕт-ха?

— Э-э, тимĕрç! — аллипе сулчĕ Наум. — Çук ĕнтĕ вăл. Каюк!

— Кампа пултăн эппин? — çаплах тĕпчерĕ Ларис.

— Вот çыпçăнчĕ! Кампа, кампа... — Наум пирус тĕпне пăрахрĕ те, кровать патнелле тайкаланса кайрĕ.

— Каламасан — тупата çывăратмастăп сана! — сассине хытарчĕ Ларис. — Эп саншăн кунта тем чухлĕ куççуль тăкрăм, хуйхăра-хуйхăра пĕтĕм хал кайса килчĕ, эсĕ пур — такам прохвосчĕпе ĕçсе çапкаланса çÿренĕ иккен...

Наум кровать патне çитнĕскер каялла çаврăнса тăчĕ.

— Такампа та мар, прохвоспа та мар! Пĕлес килет пулсан — мана хамăр районăн коменданчĕ, капитан фон-Вольф хăна турĕ!

Ларисшăн ку питрен çупса янăпа пĕрех пулчĕ.

— Нимĕçпе ĕçрĕн-и?

— Ахаль нимĕçпе те мар, пысăк начальникпе! Эсĕ мĕн, мана шалтай-палтай этем тетĕн-и? Эп тошĕ влаç халĕ.. Малашне мана пĕтĕм ял пăхăнать акă!

— Асту, санах пăхăнса тăрĕç! — çилленсе кайрĕ халь Ларис. — Тупăннă влаç! Нимĕçсем хăвнах пит лайăх килсе çаратса тухрĕç ав... Куратăн-и, нимĕн те юлман?

— Епле вăл? — пуçне минтер çинчен аран çĕклерĕ упăшки.

— Çаплах! Килчĕç те, пĕтĕмпех сăптăрса тухрĕç. Пÿртрен те, чăлантан та, арчаран та! Çÿрех халь çара уран та çара кутăн!

Ларис макăрса ячĕ. Наум пуçне хыçкаласа, мĕшлетсе ларчĕ. Тем çинчен пикенсех шухăшларĕ пулас вăл, анчах ниепле те чухласа илеймерĕ. Унтан каллех выртрĕ.

2. Сапăçу хирĕнче.



28206 чув
... им. М. Г...ого
... АССР

— Юрунда, — терӗ вӑл кӑшт тӑрсан. — Пӗтӗмпех каялла илетпӗр. Фон-Вольф ун ҫинчен те каларӗ. Сана тӗкӗнместпӗр, терӗ...

Урӑх вара пӗр сӑмах та каламарӗ, вилнӗ пекех ҫывӑрса кайрӗ. Минутранах пӳрт вӑл харлатнӑ сасӑпа тулса ларчӗ.

Ҫак калаҫӑва пӗтӗмпех итлесе тӑнӑ Мотя Ларис патне чӗрне вӗҫҫӗн утса пычӗ те, шӑппӑн кӑна ыйтрӗ:

— Инке, Наум пичче нимӗҫсен енне куҫнӑ эппин?

— Ним те пӗлместӗп... — терӗ ӑна хирӗҫ Ларис, макӑрса ярас патне ҫитнӗ пек сасӑпа. Унӑн чӗри ҫав тери ыратса, пӑлхавлӑн тапрӗ, ӑшчикки ниҫта кайса кӗмелле мар вӑркарӗ.

5.

Тем тӗрлӗ те шухӑшласа пӑхрӗ Ларис.

— Мӗн пулнӑ капла Наума? Мӗнле нимӗҫ начальникӗ ҫинчен каларӗ вӑл? Мӗншӗн ӗҫтернӗ вара ӑна вӗсем? Чӑнах та нимӗҫсен енне куҫнӑ-ши вара вӑл? Ҫук, ниепле те ун пек пулма пултараймасть...

Хура ҫӗлен пек иккӗленӳ кӗрсе ларчӗ унӑн чӗрине.

— Юрӗ-ха, ирччен ҫывӑртӑр, эрех сӗрӗмӗ иртсе кайтӑр, ыран вара пурӗпӗрех тӗпчесе пӗлетӗп! — терӗ те вӑл юлашкинчен хӑйне хӑй, ҫутта сӳнтерсе выртрӗ.

Анчах ирхине те упӑшкипе калаҫма тӳр килмерӗ. Тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах Наума икӗ нимӗҫ салтакӗ вырӑн ҫинчен тӑратса тухса кайрӗҫ. Каллех, кун каҫичченех, Ларис килте пӗччен ларчӗ. Халь ӗнтӗ вӑл ним шухӑшлама та пӗлмерӗ, упӑшкине мӗн пулнине ниепле те ӑнланса илме пултараймарӗ.

Каҫала сулӑна пуҫласан, такам чӳречерен пырса шаккарӗ:

— Эй, кам пур килте? Ватти, вӗтти — пурте шкул патне пухӑнмалла! Пыманнисене персе пӑрахаҫҫӗ. Часрах!

Ларис чӳрече патне ҫитиччен, халӑха хӑвалакан кайма та ӗлкӗрнӗ иккен.

— Мӗн тӑвас-ши? Каяс-ши? — пӗр хушӑ иккӗленсе тӑчӗ те Ларис, унтан, тен Наума тӗл пулӑп-и тесе, тумлан-каласа тухрӗ. Урамра, унта та кунта, тӑвалла каякан ҫынсене курчӗ. Вӗсем хыҫҫӑн вара вӑл та утрӗ.

Шкул умӗнчи площаде халӑх тем териех пухӑннӑ иккен. Пурте хӑранӑ сӑнлӑ, пӗр-пӗринпе пӑшӑлтатса ҫеҫ калаҫаҫҫӗ. Халӑх хушшинче хӗҫпӑшаллӑ нимӗҫ салтакӗсем ҫӳреҫҫӗ...

— Мӗн пулать вара кунта? — тесе ыйтрӗ Ларис чӗлӗм туртса тӑракан пӗр старикрен.

Лешӗ ун ҫине чалӑшшӑн ҫеҫ пӑхрӗ.

— Ай пӗлместӗн-и?

— Пӗлнӗ пулсан — ыйтмастӑп та...

— Упӑшкунтан кайса ыйт эппин, вӑл санӑн пӗтӗмпех пӗлет... Кирлинчен те ытларах пӗлет!

Старик ҫавӑнтах аяккалла пӑрӑнса кайрӗ. Ларис ун сӑмахӗсене ӑнланмасӑр, питех те тӗлӗнсе пӑхса юлчӗ.

— Шӑпланӑр! — тесе кӑшкӑрса ячӗ ҫав вӑхӑтра тахӑшӗ. — Пуҫлана-ать!..

Ларис куҫӗсем площадь варринчи трибуна ҫине ӳкрӗҫ. Вӑл трибуна ҫинчен кашни революциллӗ праҫник вӑхӑтӗнчех хавасллӑ, ҫӗклентерекен сӑмахсем калаканччӗ. Анчах халь унта симӗс шинеллӗ, хура калпаклӑ нимӗҫсем, ирӗклӗхе юратакан совет ҫыннисене чура тума килнӗ тӑшмансем тӑнӑ... Сасартӑк, ҫавсем хушшинче Ларис хӑйӗн упӑшкин сӑнне курчӗ. Вӑл, пирус турткаласа, пӗр нимӗҫӗпе чип-чиперех калаҫса тӑрать иккен.

— Турӑҫӑм, мӗне пӗлтерет ку?! — теме ҫеҫ ӗлкӗрчӗ Ларис, ҫав вӑхӑтра ӑна такам айӑкӗнчен пырса хуллен тӗртрӗ.

— Каларӑм вӗт сана — Наум пичче нимӗҫсен енне куҫнӑ, тесе. Авӑ — пӑх ӗнтӗ, вӗсемпе пӗрлех хӑпарса тӑнӑ... Пӗр вырӑс та ҫук урӑх, вӑл кӑна! Начальник пулнӑ эппин.

Ку — Мотя иккен. Трибуна еннелле кӑтартса, вӑл Ларис ҫине ҫав тери курайман куҫӗсемпе пӑхса илчӗ. Вӑл пӗрре пӑхса илниех Ларисӑн чӗрине ҫӗҫӗпе чикнӗ пек ыраттарса кайрӗ.

— Авӑ мӗн.. ав епле пулса тухать! — пӑшӑлтатса илчӗҫ Ларисӑн вӗри тутисем. — Мана сӑмах тӗкме пуҫларӗҫ унӑн... Мӗн курас капла?

— Германи командованин йӗркисене пӑханманшӑн, Германи ҫарне хирӗҫ тӑнӑшӑн, — янраса кайрӗ трибуна ҫинчен такамӑн хӑлхана ҫуракан сасси, — ывӑлӗсемпе хӗрӗсене партизансемпе ҫыхӑнтарнӑшӑн, эпир паян Кузнецов Трофима, Пудов Андрея, Ковалев Игнатия, тата Артюхова Татьянӑна ҫакса вӗлеретпӗр! Пӑхӑр вӗсем ҫине!..

— Ай, ах, ах...

— Пӗтрӗмӗр, пуҫа ҫирӗҫ... — ахлатса, йынӑшса ячӗҫ халӑх хушшинче. Ҫав самантрах, икӗ ҫӳллӗ хурӑн хушшине хунӑ кашта ҫумне тӑвата этемӗн кӗлеткисене мӑйӗсенчен вӗренсемпе туртса хӑпартрӗҫ...

Арҫынӗсенчен пӗри — ялти тимӗрҫӗ, хӗрарӑмӗ — Нинӑн вата амӑшӗ пулнӑ. Вӗсем кӑшт ҫеҫ тапаланкаларӗҫ те, алли-урисене ластах ячӗҫ.

— Астӑвӑр ӗнтӗ, — кӑшкӑрчӗ ҫав хулӑм сасах. — Пире пӑхӑнманнисене, партизансемпе ҫыхӑнакансене эпир пурне те ҫакӑн пек тӑватпӑр. Сирӗнпе урӑхла калаҫу пулма пултараймасть! Ҫавнашкалах тата старостӑна итлеменнисене, вӑл хушнӑ ӗҫсене туманнисене те пирӗнтен каҫару пулмасть, мӗншӗн тесен сирӗн староста — Германи влаҫӗсен представителӗ!

Калаҫакан нимӗҫ сулахай аллине Наумӑн хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ.

— Паллӑр пурте — паян кунтан сирӗн ҫак ҫынна пӑхӑнса пурӑнмалла! Вӑл — староста, вӑл — влаҫ. Ӑнлантӑр-и?

Ларисӑн куҫӗсем хуралса килчӗҫ.

## 6.

Киле вăл хайне çав тери вăйлă сĕрĕм тивнĕ пек пулса таврăнчĕ. Унăн ăшчикки пăтранчĕ, чĕри темле улшу тапрĕ, хушшăн-хушшăн хăсасси килчĕ...

Урампа утнă чух никам çине те пăхаймарĕ, юри айăккăнтарах, çынсен куçĕ умĕнчен пăрăнма тăрăшса пычĕ. Çапах та, ăна халь хăйне тĕл пулакансем те, иртсе каякансем те — пурте ун çине шăтарас пек пăхнăн, пурте — „ака, нимĕçсен йытгин арăмĕ пырать", — тенĕн туйăнчĕ.

Нихçан та шутламанччĕ кун пек пулассине! Хальччен Наум чипер çын пекех пулса пурăнатчĕ, ялçыннисем те хисеплетчĕç хăйне, икĕ ăстрăм кооператив правленине суйласа хăварчĕç, унăн счетовод ĕçне те тиркениех илтĕнместчĕ... Мĕн пулчĕ-ха капла халь? Тăшмансем, хурахсем килсе халăха пусмăрлама тапратрĕç, ним айăпсăр çынсене вĕлерме тытăнчĕç, халăхăн пĕтĕм пурлăхне çаратса тухрĕç, малашне те кашни утăмрах вĕлерессипе хăратаççĕ, а вăл... вăл çав бандитсем майлă пулса тăнă иккен! Çынсене çакаççĕ, вăл çакаканĕсемпе чип-чипер калаçса тăрать. Халăха тем тĕрлĕ асаплантарассипе хăратаççĕ, çав вăхăтрах ăна çурăмĕнчен лăпкаççĕ... Мĕншĕн? Мĕн пирки ун пек хисепе кĕрсе ӳкнĕ вăл нимĕçсем умĕнче? Сутăннă ĕнтĕ, тем тесен те сутăннă... Мотя тĕрĕсех каларĕ... Виселица патĕнчи старик те ахальрен мар сăмах тĕксе аяккалла пăрăнса кайрĕ. Халь эппин никам куçĕ умне те курăнмалли пулмасть, кашниех сан çине йытă çине пăхнă пек пăхать малашне!..

Çакăн пек шухăшсемпе асапланса пынă май, Ларис Нинăсен тĕлне çитрĕ. Уçса пăрахнă урам алăкĕ витĕр вĕсен килхушшинче тĕрлĕ килти япаласем, пылчăк ăшне таптанă темле кĕнекесем, хутсем, ваннă чечексем, тĕкне кăларса янă минтерсем сапаланса выртни курăнчĕ. Нимĕçсем вĕсен килĕнче пĕтĕмпех кутăн-пуçăн çавăрттарнă иккен, тĕкĕнмен тĕрĕс-тĕкĕл япала та хăварман...

Тата хытăрах пăчăртанса илчĕ Ларисăн чĕри. Куç

умне — ялтан тухса тарӑ каç чупса пынӑ Нина сӑнӗ тухса тӑчӗ.

— Манӑн килте анне юлать, чирлӗ вӑл, — терӗ ун чух Нина. — Тархасшӑн, кайса пӑхкала эс ӑна... Тупата, урӑх никама та калама пӗлместӗп, пӗр эсир çеç пирӗн çывӑх çынсем. Çак йывӑр самантра тархасшӑн ан пӑрахӑр...

Ларис шӑлӗсене çыртса тарӑнӑн сывласа илчӗ.

„Эсир çеç çывӑх çынсем... ан пӑрахӑр"... — янраса тӑчӗç Нинӑн сӑмахӗсем хӑлхара.

— Пит лайӑх пулӑшрӑмӑр ав... Çакнине пӑхса тӑтӑмӑр çеç! Мӗн куçпа пӑхмалла ӗнтӗ халь Нина çине?

Хуйхӑпа пӗрлех, ун чӗринче тархӑ вӗресе хӑпарса пычӗ. Вӑл Наума та, хӑйне те курайми пулса, ӑшра вӑрçма тытӑнчӗ:

— Ма кайса пӑхас мар çавӑнта пӗрре те пулин? Тен, уна-куна сиссен, ӑна ӑçталла та пулин ӑсатма пулатчӗ-и? Чирлӗскере, вырӑн çинченех сӗтӗрсе илсе кайрӗç пуль ӗнтӗ...

Шухӑш каллех виселица патне куçрӗ. Тӑватӑ çын хулӑн вӗренсем çинче сулкаланса тӑраççӗ. Ним айӑпсӑр çынсем вӗт! Нина амӑшӗ... Çынна усал тума мар, хӑçан кама та пулин сив сӑмах каланӑ ши вӑл? Нинӑшӑнах çакнӑ çав ӑна, урӑх нимӗншӗн те мар. Анчах та, кам шуйттанӗ, мӗнле çӗлен чӗреллӗ этем тӗллеттернӗ-ши ун çине? Халӑх пӑхса тӑчӗ... Ним те чӗнмерӗ халӑх. А Наум... Наум нимӗçсемпе пӗрле пулчӗ, ӑна — ял пуçӗ пулать, терӗç. Турӑçӑм! Ӑçта кайса кӗмелле-ши?

Шӑп хӑйсен хапхи умне çитсен, ӑна Мотяпа амӑшӗ хуса çитсе иртсе кайрӗç. Ларис çуммипех иртнӗ пулин те, вӗсенчен пӗри те сӑмах хушмарӗ. Нихçан курман-илтмен çынсем пекех пулчӗç.

Ку тата хытӑрах пӑлхатса ячӗ Ларисӑн ӑшчиккине.

— Пуçланчӗ ӗнтӗ...—терӗ вӑл хӑйне хӑй. — Халь пурте çавӑн пек пулаççӗ, ыр сӑмах илтессине ан кӗт...

Майӗпе пӳрте кӗчӗ те, сӑхманне хывмасӑрах тӗпелелле иртсе ларчӗ. Шухӑшсем пӗрин çине тепри купаланса,

пăтрашса пычĕç. Ниепле те йĕркене кӳртме пулмарĕ вĕсене.

— Ман çине мĕншĕн çилленеççĕ-ши ĕнтĕ? — тытах аса илчĕ вăл Мотяпа амăшĕ чĕнмесĕр иртсе кайнине. — Эп мĕнрен айăплă? Наума нимĕçсем патне эп яман вĕт, староста пулма эп хушман... Тепĕр тесен, тен вăл та айăплă мар-и?

Ун пуçĕнче сасартăк чĕрене пĕртакках шанчăк паракан шухăш çуралса тухрĕ.

— Чăнах та, тен вăл хăй ирĕкĕпе кайман? Тен ăна староста пулма вăйпах хушнă? Ку таранччен ялан халăх çинче ĕçленĕскер, епле-ха тăруках халăха хирĕç каяс килнĕ пултăр? Чим-ха, килтĕр... Эп акă унтан пĕтĕмпех, тĕпĕ-йерĕпех ыйтса пĕлетĕп. Калатех вăл мана!

Кăштах лăпланнă пек пулчĕ вăл. Шанчăк ӳссех пычĕ. Эхер те Наума староста вырăнне нимĕçсем вăйпах лартнă пулсан, вара кӳршĕсем урăхла пăхма пуçлаççĕ. Паллах, Наума вăл хăй аллинче çирĕп тытать, çынсене кăшт та усал тутармасть...

Хапха патне темле лав пырса чарăнчĕ.

— Ларис инке, япалусене йышăн! — кăшкăрчĕ темле ача.

— Ку мĕне пĕлтерет тата? — тулалла хăвăрт утса тухрĕ Ларис.

— Нимĕçсем çаратса тухнă япалусене каялла парса ячĕç, — терĕ ăна хирĕç калинккерен кĕнĕ каçăр сăмсаллă арçын ача.

— Кам? — кăнтах хытса тăчĕ Ларис.

— Наум пичче... Сельсоветран вăл хăйех тиесе тухнăччĕ, унтан пире курчĕ те, леçсе хăварма хушрĕ.

— Лашине те хăвăр патрах хăварма хушрĕ, — терĕ тепĕр ачи. — Вăл пуçĕпех сирĕн пулать пулмалла. Халь вăл пысăк начальник та, лашасăр пурăнмасть ĕнтĕ!

Ларис ним калама та пĕлмерĕ. Унăн тути хĕррисем каллех кăвакарса кайрĕç.

„Ачасем те мăшкăллаççĕ-çке!" — шухăшларĕ вăл йӳççĕн.

— Ну, пушататӑн-и? — ыйтрӗ касӑр сӑмсалли. — Пултаратӑн-и?

— Ман пуҫ ыратать... — терӗ Ларис, аллипе стенаран тытса. — Ура ҫинче те тӑраймастӑп!

Ачасем вӑл сасартӑк сӑнран улшӑнса пӑртелле кӗрсе кайнине питӗ тӗлӗнсе пӑхса тӑрса юлчӗҫ.

7.

Упӑшки каллех ҫурҫӗр тӗлӗнче тин таврӑнчӗ.

Ӑна уҫса кӑртме ҫенӗке тухсанах, Ларис вӑл паян та ӳсӗррине туйса илчӗ. Наумран тӳсмелле мар эрех шӑрши пырса ҫапрӗ ӑна, ҫитменнине вӑл алӑк урлӑ каҫсанах тайӑлса кайса, тепӗр енчи стена ҫумне пырса тӑрӑнчӗ.

— Пӗтрӗ пуҫ!.. Татах калаҫмалли пулмасть... мӗн тӑвас кунпа? — шухӑшларӗ Ларис. — Ҫук, ҫавах калаҫтаратӑп эп ӑна! Хӑҫанччен тӑсӑлса пыма пултарать кун пек?

Наум аран тайкаланса тӗпелти сӗтел патне пырса ларчӗ те, Ларис ҫине пӑхмасӑрах:

— Япаласене илсе килчӗҫ-и? — тесе ыйтрӗ.

— Килчӗҫ пулмалла... — Ларис ун умне пырса тӑрса, шӑтарас пек пӑхма тытӑнчӗ. Чӗринче чарусӑр тархӑ вӗресе хӑпарма пуҫларӗ унӑн.

— Каларӑм вӗт сана! Мана тивеҫҫӗ-и вара?.. Эп хам хуть те кама пӗкӗ пек авса хума пултаратӑп... — мӑкӑртатса илчӗ Наум. — Пысӑк влаҫ халь манра!

Ларис текех тӳссе тӑраймарӗ. Вӑл сӗнксе ларакан упӑшкине янахӗнчен тӗксе пуҫне ҫӗклеттерчӗ те, хыттӑн, ӑшӗнче пухӑнса ҫитнӗ пӗтӗм ҫилӗпе ыйтрӗ:

— Кам эс халь? Вырӑс-и, нимӗҫ-и?

Наум кӑна тӑруках тавҫӑрса илеймерӗ пулас.

— Мӗн тетӗн?

— Кам эс? тетӗп. Вырӑс-и эс, е таҫтан шуйттан ҫӗр-шывӗнчен килсе ӳкнӗ нимӗҫ-и? Паллатӑн-и хӑвна ху, е вуҫех паллами пулса ҫитрӗн-и?

— Ма... ма ун пек калатӑн? — кӑштах урӑлнӑ пек пул-

чĕ Наум, арăмĕ калама та çук вĕриленсе калаçнине кура.

— Ăнланмастăн пулать?! — кăшкăрса ячĕ вара Ларис. — Мĕн пирки-ха эс пĕччен пĕтĕм халăха хирĕç кайма тытăнтăн? Нимĕçсем вĕлерессĕ, çаратассĕ, çакассĕ — ик кун хушшинче миçе çынна пĕтерчĕç ĕнтĕ, а эс вĕсемпе пĕрле, вĕсене майлă пулса çÿретĕн... Мĕне пĕлтерет ку?

— Мана тивмессĕ...

— Э-э, эппин эсĕ хăвăншăн кăна?!

— Камшăн пулас тата манăн? — Наум ура çине тăрса вырăн патнелле утма тăчĕ, анчах Ларис ăна тытса чарчĕ.

— Чим-ха, ĕлкĕрĕн сывăрма, сана пула эп ик каç сывăрмарăм, — ответ пар! Хăçанччен пулать кун пек? Сана вĕт пĕтĕм ял халăхĕ кураймасть халь, сана пула мана та курайми пулчĕç, шуйттан çине пăхнă пек пăхассĕ...

— Маншăн пурĕпĕр, суратăп эп халăх çине! — Наум лач! сурчĕ те, урипе шăлса ячĕ.

— Ытла касса ан кай! — кăшкăрчĕ Ларис. — Халăха хирĕç эс пĕччен ним те тăваймастăн! Ваттисем çеç мар, ачасем те курайми пулчĕç вĕт... Мотя пулса — çав та калаçмасть, япаласене тиесе килнĕ ачасем те мăшкăлласа кайрĕç!.. Мĕнле тÿссе пурăнмалла куна, кала-ха! А вĕт саншăн вăл, пĕтĕмпех саншăн, чул пуç! Ăнланатăн-и çавна?

Наум пурĕпĕрех итлесшĕн пулмарĕ, вырăн патне пырса хывăнмасăрах хăпарса выртрĕ. Анчах Ларис уйăрăлмарĕ унтан.

— Мĕнпе сутăн илчĕç сана вĕсем? Мĕн ырлăх тупрăн эс вăл хăруш çынçиенсем çумĕнче? Кала! Мĕншĕн чĕнместĕн? Пăрахнă пултăр çавсемпе çыхланма, илтетĕн-и?

Ларис ăна çаннинчен тытса карт! туртрĕ. Çав самантрах Наум вăштах çавăрăнчĕ те, ăна тĕртсе ячĕ.

— Ан янра, ухмах! Сан ăспа пурăнассĕ пуль? Эп хам мĕн шутланă — çавна тăватăп, хама ăçта лайăх йышăнасçĕ — çавăнта каятăп. Санран ыйтса тăрас çук!..

Ларис макăрса ячĕ. Пĕчĕк ача пек хурлаеса макăрма тытăнчĕ вăл...

— Нина амăшне пăхма хушса хăварчĕ, эс ăна çакакансемпе пĕрле эрех кÿпетĕн... Пĕреххут ма çавăн хутне кĕрес мар санăн? Мĕн айăпĕ пулнă вара çав çитмĕл çулхи карчăкăн? Нини халь те амăшĕ çинчен шухăшлать пуль, мĕскĕн, пирĕн çине шанса пурăнать-тăр... Лайăх пăхрăмăр, калама та çук!

Наум сасартăк сиксе тăчĕ.

— Чарăн, сÿпĕлти! — кăшкăрса пăрахрĕ вăл арăмне. — Йăлăхтарса çитертĕн! Пĕлессÿ килет пулсан — эп халь вăл çынсене ĕлĕк хама кÿрентернешĕн таврăтăп!

— Кам кÿрентерне вара сана?

— Паян çакнă йышшисем!

— Епле?

— Халиччен каламанччĕ эп сана, анчах халь калама пултаратăп ĕнтĕ. Эп нихçан та Рыбаков пулман, эпĕ ĕмĕр-ĕмĕр Купцов пулнă. Аттене раскулачить тусан, унпа пĕрле кайса хупасран тарса, эп сирĕн яла килсе кĕтĕм. Ман ун чух пĕр тĕрĕс документ та пулман... Нумай кĕтсе пурăнтăм эп çак саманта. Халь ĕнтĕ ĕмĕтĕм çитрĕ. Ăнлантăн-и?

Ларис хăйне шыва путарнă пек пулса ларчĕ. Унтан вăл ним чарусăр макăрма тапратрĕ.

Наума арăмĕ макăрни пĕртте хускатмарĕ. Вăл лаша пек хашт! сывласа илчĕ те, пичĕпе стена еннелле выртрĕ. Çав хушăра унăн кĕсъинчен урайне хура сăран бумажник тухса ÿкрĕ. Вăл ÿкнĕ саспа Ларис картах сикрĕ, анчах Наум — сисмерĕ курăнать, çаврăнса та пăхмарĕ. Бумажникрен темле хĕрлĕ те кăвак хутсем шуса тухса сапаланчĕç...

Ларис куççулĕсене шăлса илчĕ те, çав хутсене бумажникпе пĕрлех пуçтарса тытса, сĕтел патне таврăнчĕ.

— Мĕн мурле хутсем тата кусем? — тĕлĕнсе пăхма тытăнчĕ вăл. — Укçа тес, — укçа мар, ни заем тавраш̆ĕ мар..

Çырнине вулама тăчĕ — вулаймарĕ. Цифри çеç пирĕнни майлă, сăмахĕсене темле кукрашкасемпе çырнă.

— Ара, ку нимĕç укçи вĕт! — тавçăрса илчĕ те Ларис, утисене çыртсах лартрĕ. — Тупата, нимĕç укçисем... Епле пырса лекнĕ вĕсем унăн кĕсйине?

Вăл „5“ цифрăллă кăвак хутсене шутлама тытăнчĕ. Шăп 30 хут иккен. Унтан „10“ цифрăллисене шутларĕ. Вĕсем 25 пулнă. Хамăр укçа хисепĕпе шутласан, тăватçĕр тенкĕ пулса тăчĕ.

Ларис тата хытăрах пăлханса кайрĕ.

— Ăçтан тупнă вăл ку укçана? Нимĕçсем панă пулмалла ĕнтĕ.. Мĕншĕн панă? Мĕн сутнă вăл вĕсене? Тем те курса тăрăн!..

Бумажникре тата мĕн те пулин çавăн пекки çук-и тесе, Ларис васкасах ытти хутсене пăхма тапратрĕ. Кашни хутнех тыта-тыта вуларĕ. Сасартăк, ун аллине темле яка хулăм хут кĕрсе кайрĕ.

— Список... — вуларĕ Ларис. — Список граждан нашего села, связанных с партизанами и неблагонадежных... — Ларисăн чĕри кăрт та кăртах туса илчĕ. — Мĕн ку? Алли — Наумăн, вăлах çырнă!.. — 1. Кузнецов Трофим. 2. Пудов Андрей. 3. Ковалев Игнатий. 4. Артюхова Татьяна...

Кусем пурте — нимĕçсем паян çакса вĕлернĕ çынсен ячĕсем пулнă.

Ларис шуралса кайрĕ... Хут çинчи юлашки сăмахсене аран вуласа тухрĕ вăл: „Эти граждане завсегда были за коммунистов и теперь послали своих детей партизанить против германских солдат. В чем и подписуюсь Н. Рыбаков“...

— Акă мĕн... — пăшăлтатса илчĕ Ларис. — Акă мĕншĕн кĕсъе тулли нимĕç укçи унăн! Вăл... вăл хамăр ял çыннисене сутнă иккен! Тимĕрçе те, Нина амăшне те, ыттисене те... Çавăншăн ĕçтернĕ ăна нимĕçсем, çавăншăн староста туса хунă, япаласене каялла тавăрса панă... Турăçăм! А эп хамăн айван пуçпа ăна ирĕксĕрленĕ пуль, тенĕччĕ... Вăл хăй ирĕкĕпех иккен, ĕçкĕшĕн, укçашăн, çак шуйттан хучĕсемшĕн!..

Ларис месерле выртса харлаттарсах çывăракан Наум çине пăхрĕ те, хăраса кайрĕ.

— Çĕлен... — каллех пăшăлтатса илчĕ вăл. — Хураюн, çынçиен, урнă йытă!.

Пыр патне ăшран темле чăмăр япала шуса хăпарнă пек пулчĕ, сывлăш тытăнса ларчĕ.

— Эп... эп юратнă вĕт-ха ăна, чуптунă çавна, ачашланă, пĕр вырăн çинче выртса йывăр çын пулнă... Эп ăна этем тесе шутланă, нимĕçсем килсе кĕрсен — ăна хĕрхенсе вĕри куççуль юхтарнă. А вăл... вăл хăрушă тискер кайăк пулнă мĕн, вĕри çĕлен, — явăл чĕри тапнă унăн кăкринче!.. Малтан сурăх тирĕпе витĕнсе, çынсене улталаса пурăннă. Халь вара нимĕç хурахĕсене сутăнса ним айăпсăр çынсене вĕлертгернĕ... Мĕн тăвас ăна? Мĕн тăвас?

Унăн куçĕсем ăнран тухса кайнă çынăн куçĕсем пек ялкăшса илчĕç, вăл аран сывларĕ. Куçĕ умне каллех виселица çинче сулланса тăракан тăвата çын сăнĕсем тухса тăчĕç. Унтан Нина курăнчĕ. Пўрте темле паллаштан çынсем кĕрсе тулнă пек туйăнчĕ. Вĕсем пурте Ларисран ответ ыйтма килнĕ пек.

— Сан упăшку — иуда, вăл тискер тăшмана сутăннă, хамăр çынсене пĕтерме тытăнчĕ, ма чармастăн? — теççĕ вĕсем... Ах, хăрушă-çке вĕсен куçĕсем, калама та çук кураймасăр, çисе ярас пек пăхаççĕ!

— Ма чармастăн? — ыйтаççĕ вĕсем каллех.

— Чаратăп! Чаратăп! — сасартăк хăрушшăн кăшкăрса ячĕ Ларис. — Каçарăр мана, эп ăна халех чаратăп!..

Вăл çав самантрах алăк патнелле ыткăнчĕ те, кĕтесре выртакан пуртта илсе Наум пуç вĕçне пырса тăчĕ. Йывăррăн, темиçе çухрăм чупса килнĕ пек хашкарĕ. Унтан сывлăшра икĕ хутчен умлăн-хыçлăн пуртă хурçи çутăлса илчĕ...

— Тарас! Тарас... Хуть те ăçта пултăр — тарас...

Çак шухăш кăна вĕлтлетсе тăчĕ халь Ларисăн пуçĕнче. Вăл йăпăрт кăна сăкманне тăхăнчĕ, пуçĕ çине шаль

витсе ячĕ те, анкарти витĕр вăрман еннелле чупрĕ. Аçта каяссине, малашне мĕн тăвассине ним те пĕлмерĕ.

Ял хыçĕнче унăн мĕлкине нимĕç часовойĕ асăрхарĕ.

— Стой! Хальт! — тесе кăшкăрни илтĕнчĕ тĕттĕмре.

Ларис ун çине çавăрăнса та пăхмарĕ, тем пек йывăр пулнă пулин те, çаплах чупрĕ. Хыçалта автомат черечĕсем илтĕнчĕç, çутăлакан пульăсем çинçен шăхăрса, тĕттĕмлĕхре вутлă çип пек йĕр туса ирте-ирте кайрĕç.

Ларис малаллах чупрĕ...

Тепĕр кунне, кăнтăрла çитеспе, партизансен отрячĕн разведчикĕсем вăрманти пĕр ансăр сукмак çинче ним хускалмасăр выртакан çамрăк хĕрарăма тĕл пулчĕç. Партизансем хурăн тураттисенчен носилка турĕç те, çаплах тăна кĕмен хĕрарăма вăрман ăшнелле, хăйсен ÿплисем патне илсе кайрĕç.

— Темле хĕрарăма тупса килнĕ, — тенине илтсенех, ун патне никамран малтан отрядри санитарка Нина чупса пычĕ.

Вăл Лариса тÿрех палларĕ те, ялта питĕ хăрушă ĕçсем тапранса кайнине ăнланса илчĕ.

„Ахальрен тарса тухман ĕнтĕ çак...“

Ăна вăл хăйĕн ÿплине кайса хурса, çине тăрсах эмеллеме тытăнчĕ. Каçалапа вара Ларис куçĕсене уçрĕ.

— Каçар мана... — терĕ вăл нимрен малтан, Нинăна палласа илсен. — Хăтараймарăм санăн аннÿне...

Вăл ăна ялти ĕçсем çинчен, хăй мĕн пирки çакăн пек тухса тарни çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ. Хушшăн-хушшăн унăн куççулĕсем шăпăртатса анчĕç. Ун пек чух вара Нина ăна йăваш сăмахсемпе чĕререн лăплантарма тăрăшрĕ, вăл тĕрĕс тунине мухтарĕ.

— Иртсе каять ку самана, — терĕ вăл. — Курăн акă, пирĕн телей каллех тавăрнать пирĕн пата! Анчах халь, тăвансен таса юнĕ ним айăпсăр юхнине асра тытса, тăшмана тавăрма тытăнăпăр... Хыттăн тавăрăпăр!

— Тӗрӗс, — терӗ Ларис, — питӗ хытӑ таварас пулать... Унӑн куççулӗсем типрӗç. Вӑл çутӑ тӳпенелле пӑхса выртрӗ.

— Эп йывӑр çын-çке-ха, — терӗ кӑшт тӑрсан.

— Вӑл ним те мар, пӑхма пӗлӗпӗр!

Ларис пуçне пӑркаларӗ.

— Ун çинчен каламастӑп эпӗ... Анчах ашшӗ çӗлен чӗреллӗ этем пулнӑ вӗт, иуда, тӑшмана сутӑннӑскер! Ачи ӳссен ыйтать ӗнтӗ—ман атте ӑçта, кам пулнӑ вӑл, тесе... Ман ӑна мӗн калас вара?

— Унччен инçе-ха, — аллипе сулчӗ Нина, — вӑхӑчӗ çитсен мӗн каламалли тупӑнӗ!

Ларис татах кантӑк пек таса кӑн-кӑвак тӳпе çине пӑхса выртрӗ. Вӑл çавӑн çинченех шухӑшларӗ пулас.

— Эп ӑна ашшӗ çинчен нихçан та каламастӑп...

Ик кунтан вӑл çав тери тӗреклӗ, мӑнтӑркка, хӑй пекех илемлӗ, сенкер куçлӑ ывӑл çуратрӗ. Отрядри боецсем кашниех, вӑл выртакан ӳплене кӗрсе, çӗнӗ паттӑр çуратнӑ ятпа ӑна ырӑ сунса саламларӗç.

Июль, 1943.

# Старик № 33

(*Фронтра çырса пынисенчен*)

Ничего от деревни моей не осталось,
Ничего—ни кола, ни двора.
Оплели ее немцы колючкою ржавой,
Чтобы жить и дышать не могла,
И во имя разбойной немецкой державы
Подожгли и спалили до-тла.
Все растерзано, смято, разбито, разрыто...

*М. Исаковский.*

Тăвата уйăх хушши тăтăшах çапăçусенче пулнă хыççăн, пирĕн дивизие малти линирен канма илсе кăларчĕç. Ку апрель уйăхĕн юлашки кунĕсенче пулчĕ. Çанталăк питĕ начарччĕ, кашни кунах юр та çăмăр, çăмăр та юр çăватчĕ. Смоленск тăрăхĕнче ахаль те шурлăхсем пит нумай та, халь çулсем-йĕрсем пачах иртсе çӳремелле мар пулса тăчĕç. Пылчăк, шыв, лачака... Пусмассеренех урасем чĕркуççи таран анса лараççĕ. Вырăн-вырăнĕпе лашасем çур хырăм таранах путрĕç, вара пирĕн шĕвĕ кĕсел пек сивĕ лапра ăшне кĕрсе кайса, орудисемпе лавсене хамăр вăйпа сĕтĕрсе кăлармалла пулчĕ.

Вăтăр километра виçĕ талăк ытла пытăмăр. Çынсем те, лашасем те калама çук ывăнса çитрĕç. Вырăна çитмешкĕн тата вунă километр ытла каймаллаччĕ, çавăнпа та пире Вишни ялĕнче çĕр kaçма хушрĕç.

Тĕрĕссипе, Вишни ялĕ çĕр çинче пулман ĕнтĕ. Картта тăрăх унта 287 кил шутланнă, анчах хĕлле чакса кайнă

нимĕçсем вĕсене пурне те пĕтĕмпех çунтарса янă, тахçан садсем хушшинче илемлĕн йĕркеленсе ларнă çуртсем вырăнне халь унта-кунта кăмака тăрписемпе çунăк хапха юписем кăна тăрса юлнă.

Эпир юлташпа иксĕмĕр ял хĕррипе юхса выртакан шыв урлă пĕренесем тăрăх каçрăмăр та, ишĕлсе аннă чиркӳ еппелле хăпартăмăр. Ниçта та пĕр çын та курăнмарĕ. Килхушши вырăнĕсенче, пахчасенчи йывăçсем айĕнче алтса тунă землянкăсенчен кăвак тĕтĕм тухни çеç—çак çĕрпе танаштарнă ялта çапах та çынсем пурăннине систерчĕ. Пит те кичемленсе, йывăр шухăшсемпе уйрăлтăмăр эпир... Мĕнешкел тискер чĕреллĕ пулас пулать çакăн пек илемлĕ, чечекленсе ларнă ялсене çак таран пĕтерсе хума! Пĕр нимĕçсем кăна пултараççĕ çав кун пек чарусăр аташма! Совет çыннисем пур вăйне хурса, нумай çулсем хушши тар юхтарса тунă пĕтĕм ырлăх-пурлăха вĕсем ик виç сехетрех кĕлпе кăмрăк туса хунă вĕт-ха... Чĕрере татах нимĕç хурахĕсене хирĕç тархă ӳссе хăпарать, кăкăра вĕри курайманлăх пĕçертет.

— Чимĕр акă, ытлашшипех тавăрăпăр сире çаксемшĕн, хаяррăн асăнтарăпăр!..—тетĕн хăвна ху, шăла çыртса.

Майĕпе çăмăр çума пуçларĕ те, эпир хӳтлĕх шыраса унăн-кунăн пăхкалама тытăнтăмăр.

— Ав, темле çурт пур çавăнта,—терĕ ман юлташ, вата йăмрасем айнелле кăтартса.—Атя çавăнта!

Эп сăмахсăрах килĕшрĕм, мĕншĕн тесен эпир ахаль те аялти кĕпесем таранах йĕпеннĕччĕ те, татах шĕвес килмерĕ. Çур минутран çав çурт патне çитсе те тăтăмăр. Шалтан сасăсем илтĕннипе, кунта çынсем пурăнни паллă пулчĕ.

— Ку пырать-ха, тен унта ăшă пуль,—шухăшларăм та эп, кивĕ чус хăмаран çапса тунă алăка уçса:—кĕме юрать-и?—тесе ыйтрăм.

— Кĕрĕрех, кĕрĕрех...—терĕç шалтан харăсах темиçе çын.

Нихçан та пĕр пӳртре çакăн чухлĕ çын пурăннине

курман вара эп! Пӳрчӗ те—пӳрт мар, темле кӗлет пулнӑскер кӑна. Ҫутӑ кӗме ҫтенана пӗрик ҫӗртен шӑтарса кантӑк куҫӗсем лартса янӑ. Йӗри-тавра икӗ хутлӑ нарӑсем туса тултарнӑ, пурин ҫинче те—тулли хӗрарӑм, ача-пӑча, стариксем. Ҫавӑнтах—чӗрке-чӗрке ҫыхнӑ япаласем, тумтирсем; маччаран тӑвата сӑпка ҫакнӑ, урайӗнче, вӗт-шак ачасемпе хутӑш, икӗ йытӑ ҫури, темиҫе путек ҫӳреҫҫӗ, пӗр сак ҫумне пӑру кӑкарнӑ. Нимӗнпе те танаштарма пулмарӗ ку ҫынсен йӑвине—ни казарма мар, ни вокзал, ни пароход ҫинчи тӑваттӑмӗш класс теме ҫук. Пи эпри пулӑсем пек,—теҫҫӗ тепӗр чух. Чӑн та ҫавнашкалламаҫса ларнӑ ҫав! Калаҫу, шав, ҫуйӑху—нимӗн те ӑнланмиҫа мар, хӑлхасем янраса тӑраҫҫӗ кӑна.

Тултан тата тепӗр ватӑ карчӑк кӑштӑртатса кӗчӗ те, эпир алӑк патӗнче ура ҫинчех тӑнине курса, тӗттӗм кӗтессӗлле кӑтартрӗ:

— Ма лармастӑр, ывӑлӑмсем? Ав, ҫавӑнта пӗчӗк тенкел пур...

— Эпир ывӑнман-ха, ҫӑмӑртан ҫеҫ кӗтӗмӗр, халех каятпӑр,—терӗм эпӗ, ӑна урӑх ним калама аптраса.

— Ывӑнманни курӑнсах тӑрать, ҫара лапрах ав, пӗр ҫирӗм-вӑтӑр ҫухрӑм утнӑ пулӗ-ха,—пире тӑрӑххӑн пӑхса илчӗ карчӑк...—Э-эх, мӑнтарӑнсем... Темле йывӑр пулсан та тӳсес пулать ҫав! Манӑн хамӑн та сирӗн йышшисем виҫҫӗ те, кашни салтака курмассеренех аса килеҫҫӗ. Пуҫӗсем сывах пулсан, вӗсем те ҫакӑн пекех ҫӳреҫҫӗ пуль ҫав! Чипер йышӑнса ӑшӑ сӑмах калакансем пур-ши хуть, тетӗп...

— Пире пур ҫӗрте те аван йышӑнаҫҫӗ, асанне,—терӗ ӑна ман юлташ.—Хуть те хӑҫан та!

— Ара, сире йышӑнмасан — кама йышӑнас пулать тата?—карчӑк пире тинкеререх пӑхрӗ. Эпӗ унӑн куҫӗсем шывланнине асӑрхарӑм.—Хамӑрӑн вӗт эсир, хамӑрӑн... Хамӑр юн! Пӗтӗм пурнӑҫа та сирӗн ҫине шанса ҫеҫ пурӑнатпӑр та...

Карчăк пире валли тенкел пырса лартрĕ те, куçĕсене çанни вĕçĕпе шăлса илчĕ.

— Пилĕк уйăх тамăкра пурăнтămăр вĕт,—эсир хăтарса кăлартăр. Аса илсенех куççуль тухать...

— Иртни—иртнĕ ĕнтĕ вăл, текех таврăнмасть, халь пурнăçа юсасси çинчен шутлас пулать çеç,—лăплантарчĕ ăна ман юлташ.

— Çаплах ара, çаплах,—килĕшрĕ карчăк.— Халĕ те çан[illegible]ирки çеç хыпкаланатпăр. Колхоз каллех ĕçлеме [illegible] ав, вăрлăх пуçтарать, çурхисене акасшăн...

Акас пулать çав, тăшманран хăтарнă çĕре ахаль выртгарма юрамасть. Хамăр юнпа шăварнă эпир ăна!

Юлташ карчăкпа пуплешсе кайнă хушăра эпĕ пÿрт ăшчиккине тата лайăхрах сăнаса—пĕр кĕтесре, пĕчĕк çеç сĕтел хушшинче икĕ хĕрача, тата вĕсене хирĕç шĕвĕртерех сухаллă, куçлăх тăхăннă старик ларнине куртăм. Вĕсем хăйсем хушшинче хуллен кăна калаçса ларатчĕç. Старик ыйтрĕ, хĕрачасем ăна ответ пачĕç, унтан хĕрачисем хăйсем ыйтрĕç унтан... Эп тинкеререх итлерĕм, çапах та, пÿртре питĕ шавлă пулнипе, вĕсен уйрăм сăмахĕсене çеç илтме пултартăм:

— Имя существительное.. прилагательное... Глагол...

Кăшт тăрсан пĕр хĕрачи çинçе кăна саспа калаçа пуçларĕ:

— Сложным предложением называется...

— Миçе çемье пурăнать вара ку пÿртре?—ыйтрĕ çав вăхăтра ман юлташ хайхи карчăкран.

— Вунпĕр çемье,—терĕ карчăк,—питĕ тăвăр, анчах ним тума та çук.

— А çав старик—кам вăл?—ыйтрăм эпĕ те çав хушăрах, кĕтесри сĕтел хушшинчи калаçусенчен тĕлĕне пуçласа.

— Яков Иванч, теççĕ ăна, учитель вăл.

— Кунта пурăнать-и?

— Çук, вăл уйрăм землянкăра пурăнать, кунта çав хĕрачасене вĕрентме килнĕ. Нимĕçсем пирĕн шкула та

çунтарса ячĕç те, халь Яков Иванч ачасене вĕрентме килтен киле çÿрет.

Карчăк хурлăхлăн сывласа илчĕ.

— Ăна та çăмăл мар, ватлăхра пĕр пĕччен тăрса юлчĕ. Хуйхи тем пекех пысăк пулин те, хăй ĕçне пăрахмасть, çÿрет кăштăртатса...

— Ну, ыранччен çак виçĕ параграфа вĕренĕр эппин, ыран вара иксĕртен те ыйтатăп,—илтĕнчĕ çак самантра старикĕн сасси.—Простой тата сложный предложенисене лайăхрах уйăрма пĕлес пулать... Унтан тата—таблица умножения. Эс ăна пачах манса кайнă, Тамара, аса илес пулать, унсăр арифметика малалла каймасть пирĕн.

— Эп вĕренетĕп ăна,—терĕ çинçе саслă хĕрачи.

Старик куçлăхне хывса хучĕ те, хут татки çурса илсе кĕсъинче табак шырама пуçларĕ. Анчах табакĕ пĕтнĕ пулмалла, ниепле те чĕлĕм чĕркемеллĕх пухăнаймарĕ. Çавна курса эп вырăнтан тăтăм та, ун патне пырса табак сĕнтĕм:

— Туртăр...

— Ой, спасибо, командир юлташ!—ман çине йăвашшăн пăхрĕ вăл.—Табак пирки пит начар пурăнатăп-çке! Ытти енчен аптрамастăп, пулăшаççĕ мана, табак—çук вара.

Унпа пĕрле эпĕ те чĕлĕм чĕртсе ятăм. Алăк патĕнчи карчăк ун çинчен кĕскен каласа паниех мана питĕ интереслентерсе ячĕ, çавăнпа та ку старикпе çывăхрах паллашас килчĕ. Старикĕ те калаçма юратаканскер пулнă мĕн, çавăнпа та пирĕн паллашу хăвăртах йĕркене кĕчĕ.

— Вĕрентетĕн эппин?—сăмах пуçларăм эпĕ.

— Майĕпе вĕрентетпĕр çав,—терĕ Яков Иванч.—Çамрăк вăхăта сая яма юрамасть вĕт. Ахаль те пилĕк уйăх ытла вĕренмесĕр пурăнчĕç...

— Куна мĕнле... районран хушрĕç-и, е...

— Эп нихçан та хушнипе ĕçлемен, юлташ командир. Мĕн тумаллине, хăш вăхăтра тумаллине эп хамах пит аван пĕлетĕп,—хĕрĕх виçĕ çул ĕнтĕ ачасене вĕрентме пуçлани. Ман учениксенчен халь ученыйсем те, генерал-

сем те, поэтсем те, орден илнисем те, темлисем те пур. Пӗлетӗп вӑл ӗҫе. Пуринчен хакли—вӑхӑт. Ҫынна вӗрентессине нихҫан та кая хӑварма юрамасть. Садовник хӑйӗн ӳсентӑранӗсене епле вӑхӑтра шӑварса, ҫӗре ҫемҫетсе пырса ҫитӗнтерет, учителӗн те ҫавнашкалах пулмалла. Нимӗҫсем кунта пулнӑ вӑхӑтра эп нимрен ытла ачасем вӗренмесӗр юлнишӗн хуйхӑртӑм,—вӗсене хӑваласа ярсан вара ик-виҫ кунтанах хам ӗҫе тытӑнтӑм. Хӑшӗсем мана: тӑхта, ӑҫта васкан, кӑштах лӑпланар-ха, пурнӑҫ кӑштах йӗркене кӗтӗр терӗҫ, анчах эп никама та итлесе тӑмарӑм. Шкул ҫурчӗ ҫук пулсан—килтен киле ҫӳретӗп, терӗм. Малтан темле тӗлӗнмеллерех пекчӗ те, халь—ним те мар, ачасем те хӑнӑхрӗҫ, хам та...

— Ӗҫ чиперех пырать апла?

— Пырать-ха. Тӑрӑшатпӑр вӗт, йывӑр пулин те...

— А кӗнекесем пирки мӗнле-ха?

— Ҫителӗклех мар та—пур. Эп вӗсене упраса хӑварма пӗлтӗм. Микроскоп та пур, ытти хӑшпӗр приборсем те. Чӑнах та, вӗсемшӗн эп чутах хам пуҫа хураттӑм, ҫапах та ҫӑлтӑм-ҫӑлтӑмах... Вӑхӑтӑр пулсан, нума-ай каласа пама пултаратӑп сире ун ҫинчен!

Эп юлташ ҫине пӑхса илтӗм. Вӑл, ӗшенсе ҫитнӗскер, ларнӑ ҫӗртех тӗлӗрсе кайнӑ иккен.

— Вӑхӑчӗ пур-ха пирӗн, ыран ирччен ку ялтах пулатпӑр,—терӗм эпӗ.—Анчах тем тумалла...

— Хваттер ҫук-и?

— Шыраман-ха...

Старик кӑмӑллӑн кулса илчӗ.

— Шырасан та тупас ҫук. Ҫак амбар—пӗртен-пӗр „гостиница" пирӗн. Пӗркун полковниксем те ҫӗр выртса кайрӗҫ. А эсир—атьӑр ман пата, землянкӑна. Канлех пулмасть ӗнтӗ, анчах ӑшши—пулать вара. Хуть те мунча кӗр.

Ку сӗнӳ пирӗншӗн питех те майлӑ пулчӗ.

Темиҫе минутран эпир, Яков Иванчпа пӗрле, икӗ ватӑ улмуҫҫи хушшине алтнӑ землянкӑна пырса кӗтӗмӗр.

— Ан тиркĕр ĕнтĕ,— терĕ вăл, — вырнаçăр. Çиччас кăмака хутса ярăпăр та, ăшă пулĕ пирĕ. Хăвăра типĕнме те аван пулĕ...

Вăл алăк патĕнчи тимĕр кăмакапа тăрмашма тытăнчĕ, эпир шинельсене хывса, пĕчĕкçеç хăрах куçлă чӳрече умĕнчи сĕтелĕн ик енне ларăмăр. Мана землянкăри тирпейлĕх тĕлĕнтерчĕ. Стенисене, тăпра тăкăнасран, сапсар таса улăмпа картланă, сĕтел çине шурă скатерть сарнă, унтах чечек лартнă, тĕкĕр, çырмалли хатĕрсем. Шăп чӳрече тĕлĕнче—Сталинпа Горький сăнĕсем, кĕтесре—Пушкин скульптури тăрать.

— Сирĕн землянка чăн-чăн кабинет пекех-çке, питĕ аван,—тесе ятăм эп. йĕри-таврах пăхса çаврăнсан.

— Йĕркеллĕхе юрататăп,—ответ пачĕ Яков Иванч.— Этем хуть епле условисене лексен те, унăн этемле пурăнма тăрăшас пулать.

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ.

— Эпир нимĕçсем мар вĕт. Вĕсем ав, хăйсен культурипе тем пекех мухтанаççĕ пулин те—сыснаран та сысна. Куртăмăр ĕнтĕ вĕсен „культурине"—тăраниччченех! Выльăхпа та, тискер кайăксемпе те танаштарма çук вĕсене..

---

...Сĕтел çине Яков Иванович пăсланакан чейник пырса лартрĕ те, эпир апатланма тытăнтăмăр. Хăйĕн хăнисем хаçатра ĕçлекен çынсем пулнине пĕлсен, вăл тата ытларах хавасланса калаçма пуçларĕ.

— Историре пулман вĕт кун пек тискерлĕх, ывăлăмсем.... Хам куçпа курман пулсан, хам тӳссе ирттермен пулсан—тупата ĕненессĕм çук çав, мĕншĕн тесен чипер ĕçлекен ăс-тăн этем çав тери тискер ĕççем тума пултарнине ниепле те йышăнма пултараймасть,—терĕ вăл.—Ну, Чингис-хан пулнă, Батый...‾Виççĕр çул тутарсен пусмăрĕнче пурăннă пирĕн халăх. Феодализм вăхăтĕнче инквизиторсем пулнă... Анчах вĕсем пĕри те нимĕçсемпе танашма пултараймаççĕ. Культура! Пуртăпа çулăм культури кăна вĕсен!

— Тен, йӗркипе каласа парӑр эсир пире?—ыйтрамӑр эпир, старик чӗринче нимӗҫсене хирӗҫ нихҫан сӳнмелле мар курайманлӑх вӗресе тӑнине кура.

— Пӗтӗмпех каласа паратӑп, итлӗр кӑна. Каласа памасӑр тӳсме те ҫук. А эсир ман калава пичетлесе кӑларӑр, пурте пӗлччӗр нимӗҫсен чӑн-чӑн сӑн-сӑпатне, ватти те, вӗтти те, пулас ӑрусем те пӗлччӗр!

— Юрӗ, Яков Иванч, ҫырӑпӑр.

Акӑ мӗн каласа кӑтартрӗ вара нимӗҫсем ҫинчен пирӗн ҫӗнӗ тус.

— Малтанах питӗ чееленсе хӑтланчӗҫ вӗсем... Шӑп кӑнтӑрла мотоциклетсемпе килсе кӗчӗҫ те, ҫавӑнтах халӑха илӗртме тытӑнчӗҫ. Ҫынсем унта-кунта пытанса пӗтнӗччӗ, нимӗҫ салтакӗсем вӗсене тупа-тупа урама кӑларчӗҫ. Эп те лекрӗм вӑл шута. Ҫур сехетрен пӗр ҫӗр ҫынна яхӑн пухрӗҫ вӗсем. Ҫавӑнтах пӗри, вырӑсла пӗлекенскер, митинг тума тытӑнчӗ.

— Ан хӑрӑр пирӗнтен, ан пытанӑр, эпир—сирӗн туссем, сире ырӑ пурнӑҫ паракансем пулатпӑр!—Тӳсмелле мар ултавлӑ демагоги пуҫласа ячӗ! Мухтанать, суять, ҫынсен пуҫне пӑтраштармалли меслетсем шырать ҫав—ӑш лӗкленет, ниҫта кайса кӗмелли те ҫук... Вӑл каланӑ хушӑрах темиҫе салтакӗ ачасене канфетсем, печенисем валеҫсе пачӗҫ, хӗрарӑмсене—темле тутӑрсем, лентӑсем, шӑрҫасем. Пӗрисем параҫҫӗ, теприсем ҫав хушӑрах фото-аппаратсемпе чаклаттараҫҫӗ—ӳкере-ӳкере илеҫҫӗ. Хӑйсен хаҫачӗсене валли ӗнтӗ, паллах...

— Ҫук, ултавлӑ вӑйӑ кӑна ку,—терӗм эп тӳрех.—Сарасса ҫемҫе сараҫҫӗ те, ҫывӑрма питӗ хытӑ пулать...

— Чӗре тӗрӗсех сиснӗ ҫав манӑн. Урӑхла пулма та пултарайман! Тӑшман пирӗн пата ыр ӗмӗтпе килменнине, вӑл пире валли епле „ырӑ пурнӑҫ“ хатӗрленине кашни ӑсла-пуҫлӑ ҫынах ӑнланнӑ ӗнтӗ.

Ик-виҫ кунтанах пит лайӑх кӑтартрӗҫ ӑна нимӗҫсем.

Малти частьсем иртсе кайсан гестаповецсем ҫитсе кӗчӗҫ те, хӑйсен шуйттанла „ҫӗнӗ йӗркине“ тума тытӑн-

чĕç. Пуçланчĕ вара этем тӳсмелле мар мăшкăл, çарату, никам шухăшласа кăларма пултарайман тискерлĕх...

Чăн малтан, яхти „власть“ валли хăйсене юрăхла çынсем суйласа тупрĕç. Пĕр прохвоста — виç тăвар хут тĕрмере ларса тухнă бандитла этеме староста турĕç,— ăна пирĕн ялта Кузька Битый тесе чĕнетчĕç, мĕн пĕ тесен вăл этемме çамрăк чухнех темиçе хут та вăрăра тытса пĕтĕм халăхпа хĕненĕ,—писарь пулма мана чĕнчĕç.

— Германи командованийĕ сире шанать, çавăнпа та сирĕн эпир паракан ĕçе савăнсах тытăнас пулать...—терĕ мана гестапо пуçлăхĕ тăлмача урлă, ман умма ĕçмелли-çимеллисем кăларса лартса.—Сирĕншĕн ниепле хăрушлăх та пулмасть, эпир сире те, сирĕн çемьене те хамăр хӳтлĕхе илетпĕр. Пирĕн кăтартусене тĕп-тĕрĕс пурнăçласа пырăр кăна...

Чĕре тапми пулчĕ çав манăн кун пек сĕнӳве илтсен! Хĕрĕх çул вырăс халăхне çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçленĕ хыççăн, çирĕм çул совет ачисенчен социализм строителĕсене хатĕрлесе пурăннă хыççăн — нимĕçсен халуйĕ пулма ниепле те пултарайман ĕнтĕ эпĕ,—хăвăрах ăнланатăр! Гестапо сĕнекен ырлăхсенчен çавăнтах пăрăнма тытăнтăм. Ватта петĕм. Вăй çук, куçсем курмаççĕ, çырма — аласем чĕтреççĕ... Пултараймастăп, урăххине шырăр.

— Хăратăр эсир,—терĕ мана фашистсен начальникĕ.— Большевиксем каялла таврăнасси çинчен шухăшлатăр курăнать. Анчах вăл шухăша пуçран кăларса ыватăр— сирĕн совет влаçĕ пĕтнĕ ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çар çук, ик эрнерен эпир Мускавра пулатпăр! Пурĕпĕрех пирĕн йĕркесемпе çураçмалла пулать, темле кутăнлансан та!..

Хăй çаплах эрех черккине ман паталла шутарать. Пĕр тумлам та сыпмарăм.

— Эп нимĕн çинчен те шухăшламастăп,—терĕм ăна хирĕç.—Анчах манăн сирĕн патра ĕçлесси пулмасть— пултараймастăп. Хăвăрах куратăр—ватă эпĕ, утмăлтан та иртнĕ.

— Астăвăр, кайран ӳкĕнмелле пулать сирĕн...—куçĕсене хĕссе илчĕ вăл.—Саботажниксемпе эпир урăхла калаçатпăр! Ан манăр: эпир завоевательсем, власть—пирĕн алăра!

— Хуть те мĕн тăвăр...

Гестаповец сĕтел хушшинчен тăрса калле-малле уткаларĕ те, сасартăк ман умма пырса тăрса, кăкăртан тытрĕ.

— Учитель! Эс хăвна та, çемйӳне те хĕрхенместĕн... Ыранччен шухăшласа пăх. Ирхине ман пата урăхла шухăшсемпе килессе шанатăп.

Вĕри тамăкран хăтăлса тухнă пекех пулчĕ маншăн хама киле кайма ирĕк пани. Киле епле çитнине те астумастăп. Анчах кунта мана çĕнĕ хурлăх кĕтсе тăнă...

Манăн аслă хĕр Вера—хампа пĕрлех шкулта ĕçлекенскер—эп алăкран кĕрсенех ман патălла макăрса чупса пычĕ.

— Шкула аркатрĕç пирĕнне... Ним те хăвармарĕç!—терĕ вăл.

— Епле?

— Парттăсене кăларса пăрахрĕç, вĕсен хăмисенчен кормушкăсем тăваççĕ, шкулта вите пулать пулмалла... Шкафсенчи кĕнекесемпе кăмака хутаççĕ!

Ăшчик вутпа пĕçертнĕ пек пĕçерсе илчĕ. Кĕнекесем маншăн—пурнăçри чи хаклă пуянлăх пулнă. Эп вĕсене çирĕм çул ытла пухнăччĕ, пирĕн пек пуян библиотека районĕпе те çукчĕ...

— Пĕтĕмĕшпех çунтарса ячĕç-и?—тесе ыйтма çеç пултартăм эпĕ.

— Кăштах юлнă пулас та—нумай çунтарчĕç çав,—терĕ Вера.

— Атя эппин, юлашкисене кайса çăлар!

Хĕр хăраса ӳкрĕ:

— Юрамасть пуль унта пыма... Курсан—тем тăвĕç!

Эп пурĕпĕр килĕшмерĕм. Вара Вера тумланчĕ те, часрах шкула кайрăмăр. Каç пулнăччĕ ĕнтĕ, урамра тĕттĕмччĕ.

Сапурсем çуммипе йăпшăнкаласа шкула пырса кĕтĕмĕр те, манăн куççульсем шăпăрах юхса анчĕç... Шкулăн стенисем çеç тăрса юлнă, ыттине пĕтĕмпех кăларса ывăтнă. Партăсем, сĕтел-пукансем, класри доскасем—шкул умĕнче шанкă пек выртаççĕ, ăçта ан пăх—пур çĕрте те кĕнеке, хут, картăсем, картинсем сапаланнă...

Мĕн тăвас? Ку пуянлăха пĕтĕмпех аркатса çунтарса яриччен кăшт та пулин хăтарас пулать вĕт. Анчах ăçта чикес ăна? Вĕсем пур çĕрте те ухтарса тупма пултараççĕ,—пытарнă япалана тупсан пушшех аркатаççĕ!

Сасартăк аса илтĕм: шкул картинче пирĕн питĕ пысăк пусă шăтăкĕ пурччĕ, унта эпир кашни çулах шкулăн çĕрулмине хываттăмăр.

— Тултарар çав шăтăка!

Вера та ырларĕ ку шухăша. Вара эпир çĕрĕпе ĕçлерĕмĕр. Шкафсенче хăтăлса юлнă кĕнекесене пĕтĕмпех çав шăтăка леçсе хутăмăр, çиелтен улăм сарса, тăпра сапса лартрăмăр. Пирĕн телее, ку тавраш ра нимĕçсен часовойĕсем пулман мĕн, çавăнпа та пире никам та кансĕрлемерĕ.

Каялла таварăннă чух, шкул уборнăйĕ хыçĕнче, эп тăрук темле хыгă япаларан такăнтăм. Темскер шуррăн курăнса кайрĕ. Хыпашласа пăхрăм та—Пушкин выртать. Ак çакă... (Яков Иванч землянка кĕтессинче тăракан скульптура çине кăтартрĕ). Темле çĕмĕрĕлмен вара! А вăл маншăн—питĕ хаклă япала, ăна мана Ленинградран килнĕ пĕр художник ятарласа хамăр патрах туса парса хăварнăччĕ. Эп ăна часрах çĕклерĕм те—килелле тата хăвартрах утрăмăр.

— Мăшкăллаттармастăп вырăс генийĕнчен! — тесе, Александр Сергеевича пит тĕплĕ вырăна пытарса лартрăм.

Ирхине мана татах чĕнтерчĕç. Гестапо начальникĕ каллех ĕнерхи пекех каласма тапратрĕ.

— Тупăшлă вырăнтан пăрăнатăн!—тет. Эп çаплах хамăн вăй çукки çине петĕм.

— Вată ухмах!—тесе кăшкăрчĕ те вара вăл мана, сĕтел

çине чант! çапрĕ.—Тинех пирĕнтен çăмăллăх ан кĕт, тем пулсан та—хăвна çеç ўпкеле!

— Пурĕпĕр сан умна чĕркуçленсе ларассăм çук,—терĕм куна хирĕç хамăн ăшăмра.—Вĕлерĕр, анчах парăнтараймăр!

Калама та çук тарăхса кайрăм çав. Манран чип-чиперех предатель тăвасшăн! Эп вĕрентсе ўстернĕ çĕршер çынсем фронтсенче тăван çĕршывшăн çапăçаççĕ, а манăн нимĕçсемпе юнашар ларса, вĕсен халуйĕ пулса, тăшмана майлă ĕçлес пулать. Ĕмерге пулас çук ку япала!

Эп киле таврăннă çĕре—район салинче фельдшерица пулса ĕçлекен ман кĕçĕн хĕр, Соня çитсе ларнă. Алăк патĕнче унăн япалисен çыххине курсанах, вăл ырă мар сăлтавпа килнине туйрăм..

— Больницăра нимĕçсем казарма тăваççĕ, пире хăваласа кăларса ячĕç. Хамăрăн япаласене те ĕретлĕн пуçтарса тухма памарĕç,—терĕ вăл.

— Çапла пулмалла та ĕнтĕ вăл,—ответ патăм ăна.— Кун пеккине мар курăпăр-ха малашне..

Ĕнертенпех çименччĕ те эпир, аслă хĕр апат хатĕрлеме пикенчĕ. Кĕçĕн хĕр нимĕçсем район центрĕнче мĕнле аташни çинчен калама тытăнчĕ. Больницăра выртакан çынсене, вăл шутрах халь çеç ача çуратнă хĕрарăмсене те, нимĕçсем прикладсемпе чыша-чыша кăларса янă иккен, аслă тухтăр вĕсен хутне кĕме тăрсан—ăна çавăнтах персе пăрахнă. Магазинсене çаратнă, кайăк-кĕшĕк фермине пырса кĕрсе пин хур-кăвакала автоматсенчен персе вĕлернĕ, кашни нимĕç вуншар кайăк çĕклесе чупнă...

Çаксене итлесе, тĕлĕннипе хытнă пек пулса ларнă вăхăтра пўлĕме хайхи Кузьма Битый—староста—пырса кĕчĕ. Лашт! турĕ чĕре... Унччен малтан эп ăна ĕмĕрте хам кил çывăхне яманччĕ, мана куçран пăхма та пултарайман вăл, анчах халь нимĕн те шарлаймарăм—власть!

Кĕрсе тăчĕ те—сывлăх та сунмарĕ, вăрă куçĕсемпе йĕри-тавралла пăхса илчĕ кăна. Унтан кĕсъинчен хут кăларса, тўрех темскер çырса хучĕ.

— Эсир виççĕн эппин халь...—терĕ унтан.
— Ма вара?—ыйтрăм эпĕ.
— Ялта миçе çын пуррине шутлатăп. Мана точнăй сведени кирлĕ.
— Çук, эп хăнана çеç килнĕ,—терĕ Соня.
— Нумай ан пурăнăр эппин. Юрамасть халь ялсем тăрăх сулланса çÿреме! А эсир... (вăл Верапа ман çине пÿрнипе тĕллерĕ) тоже ниçта та ан кайăр. Тепĕр сехетрен ялта клуб вырăнне каллех чиркÿ уçăлать. Ана уçнă çĕре пурин те пырас пулать. Ак çак списока лекнисенчен кам та пулин пымасан—вăл влаçсене хирĕç тăнине пĕлтерет... Ăнланма тăрăшăр çавна, эсир вĕреннĕ çынсем!
— Турра ĕненесси вăл ирĕклĕ япала çке,—сăмах хушрĕ ăна ман Вера.
— Эсир, мадам, „ирĕк“ сăмаха манма тăрăшăр. Сирĕн диктатура мар халь, законсене эпир тăватпăр,—чалăшшăн пăхрĕ те ун çине Кузька, шăл витĕр йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ.—Пахăнмалли кăна юлать сирĕн. Так что тепĕр сехетрен—шăп вуниккĕре—чиркĕве пырăр. Паллах, лайăхрах тумланас пулать, чиркÿ уçни—пысăк праçник. Хотя эсир пирĕн пек тĕттĕм çынсем мар, турра ĕненместĕр, анчах—закон, ним те тăваймăн. Тата... комендантăн алли йывăр, теççĕ...
Хирĕç нимĕн те калаймарăмăр. А вăл хĕрлĕ уссисене шăлкаларĕ те, пирĕн çие тата тепĕр хут çав́ тери мăшкăллăн пăхса илсе тухса кайрĕ.
— Йытă... сутăнчăк... Ирсĕр! Çакăн пек негодяйсен аллинче ĕнтĕ халь пирĕн пурнăç!—терĕ те пĕтĕм чĕре çиллипе ман Соня, ĕсĕклесе макăрса ячĕ.
— Мана çав йытăн помощникĕ тăвасшăнччĕ,—пĕлтерететĕп эп ăна.
— Вара эп сана нихçан та „атте“ тесе чĕнмен пулăттăм!
Соня хытăран хытă макăрма пуçларĕ. Çамрăк чунĕ ытла та тулса çитрĕ пулас унăн.
— Пĕтĕмпех пĕтрĕ... Пур ĕмĕтсем те татăлчĕç!—терĕ

вăл куççуль витĕр.—Халь эпир чĕлхесĕр вырьăхсем çеç пулатпăр, чурасем..

Верăпа иксĕмĕр ăна лăплантарма тытăнтăмăр

— Ĕмĕрлĕх мар ку, тÿссе ирттерес пулать... Пирĕннисем тавăрнаççех, хăтараççех пире, курăн!

Унтан эпир малашне мĕн тăвасси çинчен канашлама пуçларăмăр. Паллах, чиркĕве пирĕн ниепле майпа та каяс килмен. Çирĕм çул ытла чиркÿ папĕрчĕ çине урапа пусман хыççăн—паян сасартăк, такам шуйттанĕ хушнипе кайса тăрас пулать! Кайтăр—камăн пит каясси килет. А ман ачасем вуçех те пулса курман унта...

Вуниккĕ çитет, луçларĕ. Пĕртен-пĕр пĕчĕк чан сасси илтĕнчĕ. (Вăл пирĕн пушар дружининче çакăнса тăратчĕ). Вера урамалла тухса пăхрĕ те:

— Халăх чăнах та чиркÿ еннелле утать,—тесе пĕлтерчĕ. Ун хыççăнах пĕр ачапа нимĕç салтакĕ кĕрсе тăчĕç.

— На церков,—терĕ нимĕç.—Марш. Бох, бох...

Ним тумалли те юлмарĕ пирĕн. Конвойпах кайрăмăр чиркĕве! Соняна çапах та килте хăваркаларăмăр—кил пăхма текелесе. Ăна та илсе каясшăнччĕ нимĕç.

Эпир пынă çĕре халăх самаях пухăннăччĕ ĕнтĕ. Пурте кĕтсе тăраççĕ—ватти, вĕтти. Чиркĕвĕнче вунă çул ытла клуб пулнăччĕ пирĕн, питĕ аванччĕ унта, анчах халь çара стенасем çеç тăрса юлнă—сарай манерлех пулса тăнă. Пăхас та килмест. Тата кунта халех тÿсмелле мар чепуха пуçланассине пĕлни пушшех ăшчике тавăрса кăларать!

Çур сехет иртрĕ, пĕр сехет... Никам та нимĕн те пĕлмерĕ-ха. Ни пуп тавраш çук, ни турăш. Шăнса кайнă çынсем килсене саланасси çинчен те калаçма пуçларĕç.

— Улталанă пире... Тахăшĕ юри каланă!

— Мĕн чиркĕвĕ уçăлтăр!

— Халăха салтаксемех пухса çÿрерĕç-çке...

Çав вăхăтра урамран шăкăрах пĕр çирĕм нимĕç салтакĕ кĕрсе тăчĕç. Хура каскăсемпе, винтовкăсемпе—халь

çапăçăва каяс пек. Алăкран кĕрсенех, вĕсем халăха çурма ункăпа çавăрса илчĕç те, клубран ник.м тухса каймалла мар туса лартрĕç.

— Итлĕр, турра ĕненекенсем!—хыттăн кăшкăрчĕ пĕр нимĕçĕ вырăсла.—Эсир кунта турра кĕл тума килнĕ... Çапла-и?

— Ним те пĕлместпĕр...—илтĕнчĕ такамăн сасси.

— Пире салтаксем хăваласа килчĕç..

— Чиркĕве пухăннипе—питĕ тĕрĕс тунă эсир,—терĕ нимĕç малалла.—Сирĕн халь турă ячĕпе Германи çарне пулăшас пулать. Ăна ăшă япаласем кирлĕ. Çавăнпа та, ним тытăнса тăмасăрах, çири тумтирсене, урари çăматăсене халех çакăнта хывса хурăр. Хирĕçсе тăнинчен усси пулмасть, ăна малтанах калатпăр. Тумтирне Германи çарĕ валли парнелемесĕр пĕр çын та тухса кайма пултараймасть кунтан. Халех хывăр! Турă манмĕ сире уншăн!

Çынсем пĕр хушă юпа пек хытса тăчĕç... Никам та хускалмарĕ. Ытла та йăпран кăларса ячĕ вĕсене ку приказ! Турра кĕл тума мар, çаратма пухнă иккен...

— Ну, мĕн кĕтсе тăратăр? Хывăнăр!—тата хаяртараххăн кăшкăрчĕ çав нимĕçех.—Хамăр хывма пуçласан—вуçех çарамас юлатăр!

Халăх халь те хусканмарĕ. Вара нимĕçсем чăнах та халăха хăйсем çарамаслантарма тытăнчĕç. Кĕрĕксем, пальтосем, атăсем, чосанкăсем, çĕлĕксем, ăшă тутăрсем—пĕр кĕтесселле ывтăнчĕç кăна. Çынăнне мĕн хывса илме май пуррине тăпăлтарса илсен, ăна алăкран тулалла вăркăнтарса кăларса ячĕç. Хĕрарăмсем çуйăхрĕç, ылханчĕç, ачасем макăрчĕç, анчах усси пулмарĕ,—ытлашши шавлакансене нимĕç салтакĕсем прикладсемпе çапа-çапах ăсатрĕç...

Черет мана та çитрĕ. Пăтранчăк пулă куçлă нимĕç пĕрре туртсах кĕрĕклĕ пиншака сĕвсе илчĕ, тепри çав хушăрах ураран тытса ÿкерчĕ те, атта хыврĕ. Чăлхана та пулин хăвармарĕ, бандит,—пĕрре ура çине тăнăскере,

çав чăлхашăн, тепĕр хут ӳкерсе тăпăлтарчĕ вĕт. Верăнне, пальтопа пĕрле, ăшă кофтипе юбкине те хывса илчĕç, аялти кĕпене çеç юлчĕ вăл. Çаплипех хăваласа ячĕç. Тулта ун чух сивĕччĕ ĕнтĕ—ноябрь вĕçĕ.

Çапла улталанса, мăшкăл тӳссе тавăрăнтăмăр вара киле.

Анчах ку—пуçламăш кăна пулчĕ-ха...

Халăха турă ячĕпе çаратнă хыççăн тата хăрушăрах ĕççем тапранса кайрĕç. Çынсенне пĕтĕм тырпулне, выльăхĕ-чĕрлĕхне, кайăк-кĕшĕкне ним юлмиччен туртса илнине каламастăп та ĕнтĕ. Ку—пĕтĕмпех хăй йĕркипе пулса пычĕ. Вĕсем—нимрен ытла!—пирĕн çынсене выльăхпа танаштарса хучĕç! Итлĕр акă...

Пĕр ирхине çавнашкал—тул çутăлнă-çутăлманах—пĕтĕм халăха ял варрине хăваласа пухрĕç те, темиçе сехет тытса тăчĕç. Сивĕ—тӳсмелле мар, çав тери витĕр çапакан çил вĕрет. Шăнса хытаттăмăр чутах. Унтан — кăнтăрла çитеспе тин—пирĕн пата комендантпа унăн помощникĕсем тухрĕç. Тăлмачă сăмахіаларĕ:

— Паянтан пуçласа кашни çынăн хăйĕн номĕрĕ пулать. Паспорт вырăнне. Вăл номĕрсĕр урама тухма та юрамасть...

Список тăрăх чĕне-чĕне, çынсен мăйĕсенчен хăма татăкĕсем çакса ячĕç. Ун çине хамăр ял ятне çырнă та—цифрă лартнă. Мана та çакса ячĕç ăна. Çавăнтан вара эп ятлă-хушаматлă çын мар, вăтăр виççĕмĕш номĕрлĕ чура пулса тăтăм. Арестант... Ĕмĕрте те манас çук çав вăл мăшкăла! Халь те усратăп вăл хăмана—çынсене кăтартма усратăп! Пурте пĕлччĕр нимĕççем пирĕнтен епле выльăх тăвасшăн пулнине, яланах пĕлччĕр!..

Яков Иванч сĕтел айĕнчи ещĕкрен чылай пысăк фанер татăкĕ тупса кăларчĕ. Ун çине хура сăрпа, нимĕçле саспаллисемпе çырнăччĕ:

| Wischni |

— Тăвата уйăх ытла çакса çӳрерĕм вĕт çак йыгă

номĕрне! — терĕ Яков Иванч. — Майра пĕрмай майкăç çакăнса тăнă пекех туйăнчĕ вăл мана... Çакăнпа пĕрлех пире ытти енчен те хĕссе лартрĕç. Ăçта ан пыр—пур çĕрте те вывеска çакăнса тăрать. Шкул умĕнчи пысăк çăл çине „Германи салтакĕсем валли кăна, вырăссен çывăха пыма юрамасть“, тесе çырнă. Часах ялти чи лайăх çуртсенчен хуçисене хăваласа кăларчĕç, кашни çинех „нимĕçсен çурчĕ“ тесе çырчĕç. Кайран кунпа та çитмерĕ: ял халăхне пĕтĕмпех хыçалти урама, кашни киле 4—5-шер çемье тултарчĕç, мăн урама йĕплĕ пралукпа карталарĕç. Урам вĕçĕнче таçтанах курăнмалла çырса çапнăччĕ: „Германи урамĕ. Вырăссен кĕме юрамасть. Аллă метра çывхарнисене—систермесĕрех переççĕ!“ Чăнах та, урамăн ик вĕçне те вышкăсем туса лартрĕç—тĕрме картинчи пек, вĕсен тăрринче кунĕн-çĕрĕн часовойсем тăчĕç.

...Вĕсем мĕн пирки кун пек хăтланнине каярахпа тин тавçăрса илтĕм эпĕ. Питĕ хытă хăранă иккен вĕсем. Хăйсен урисем айĕнче çĕр çунса тăнине сиснĕ. Кашни утăмрах пуç çине тавăру чукмарĕ ӳкессе кĕтнĕ. Халăх хăйсене мĕн тери курайманнине, ăна ним тусан та парăнтарма çуккине туйнă.

Халăхра „партизан“ сăмах сарăлма пуçларĕ. Нимĕçсем пирĕн таврана пырса кĕрсенех, районри коммунистсемпе ытти активистсем вăрмансене партизана кайнă иккен. Вĕсен командирĕ райисполком председателĕ Уваров юлташ пулнă. Малтанах партизансем сахаллăн пулнă, анчах ик-виç эрнерен унта пилĕкçĕр çын таран пухăннă. Вара нимĕçсен чугунçул эшелонĕсем çырманалла вăркăнма, станцисенчи складсем çунма тытăннă, постри часовойсем çухалнă, обозсем вырăна çитеймен... Ку ĕнтĕ нимĕçсене калама та çук пăлхатса янă. Вĕсем урсах кайрĕç. Пурăнма мар, сывлама та май пулмарĕ тек.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче кам кăшт та пулин активлăрах пулнă—пурне те тытса хупма тапратрĕç. Кĕçĕр пĕри çухалать, ыран кас—тепри. Урăх никам та курмасть вара вĕсене—йĕп пекех çухалаççĕ çынсем.

Часах вара эпĕ те лекрĕм...

Ĕçĕ çапла пуçланчĕ. Çĕнĕ çул ыран тенĕ чух нимĕçсем килтен киле çӳресе, ялти мĕнпур хĕрсемпе çамрăк хĕрарăмсене те комендатура умне пухрĕç. Вăл шутрах манăн кĕçĕн хĕре—Соняна та тытса кайрĕç. Кун пек ĕç ахальрен пулас çуккине сиссе, хĕрсем хыççăн ашшĕ-амăшĕсем те пычĕç. Эпĕ те килте ларайман—мĕншĕн тесен ытти ялсенчен çамрăксене Германие хăваласа кайнă сас пурччĕ.

Пурĕ пĕр аллă хĕр таран хăваласа пынă иккен. Вĕсене салтаксем пĕр шеренгăна тăратсан, комендатурăран вăçĕ офицер тухрĕç те—кашни хĕр умĕнчех чарăнса тăрса пăхкалама тытăнчĕç. Пасарта выльăх сутăн илнĕ чухне пăхнă пекех пăхаççĕ—питне-куçне, кĕлеткине, станне... Хĕр илемлĕрех пулсан, кĕлетки килĕшӳллĕрех пулсан—ăна çавăнтах стройран кăларса аяккарах тăратаççĕ. Йĕркипе пăхса пырсан, ман Соняна та уйăрса тăратрĕç. Пурĕ çапла çирĕм хĕр суйласа илчĕç вĕсем.

— Мĕн пулать-ши ĕнтĕ, мĕне пĕлтерет-ши ку?—тесе, ним ăнланмасăр хăраса пăхса тăтăмăр эпир.

Тĕрекле самăр офицер, çăварĕнчи хулăм сигарпе чăмласа, хĕрсене тата тепĕр хут пăхса тухрĕ. Ним намăса пĕлмесĕрех, вăл хĕрсене кăкрисенчен тĕрткеле-тĕрткеле илчĕ. Хĕрĕсем ни чĕрĕ, ни вилĕ пулса тăчĕç, хăйсен хутне кĕрекенсем пуласса шыранă пек унăн-кунăн пăхкалама пуçларĕç. Анчах эпир вĕсенчен чылай аякра пултăмăр (çывăха ямарĕç), вĕсен тавра чул сăнлă нимĕç салтакĕсем тăчĕç...

Офицер малтанхи вырăнта тăрса юлнă хĕрсем еннелле çавăрăнчĕ те, аллипе сулчĕ.

— Шлехт! Плохо! Нах хауз... Домой уходить!—терĕ.

Унтан каллех хăйсем суйласа илнисем патнелле пычĕ.

— Ну-с, мы з вами поехаль...

— Ăçта илсе каясшăн эс пире?

— Ялтан ниçта та каймастпăр...—шавлама пуçларĕç хĕрсем.

— Хулана, ҫӗн ҫул каҫ офицерсене савӑнтарма илсе каятпӑр сире! — илтӗнчӗ ответ. — Хӑрамалли нимӗн те ҫук, ҫӗр каҫатӑр та — таварнатӑр. Эрех пулать унта. Музыка, танцы...

Офицер ҫав тери усаллӑн кулса ячӗ.

Хӗрсем халь хӑйсене мӗншӗн пухнине тавҫӑрса илчӗҫ те ниҫта кайса кӗрейми пӑлханса кайрӗҫ, шавлама тытӑнчӗҫ. Пӗрисем макӑрса ячӗҫ, теприсем ӗсӗклеме пуҫларӗҫ. Клеткӑна хупнӑ кайӑксем пекех пулчӗҫ вӗсем.

Унччен те пулмарӗ, ҫав вырӑна хура брезентпа витнӗ грузовик пырса тӑчӗ.

— Ладен! Садись! — кӑшкӑрчӗ офицер. — Скоро!

Салтаксем хӗрсене машин ҫине лартма тапратрӗҫ. Эпир, аппӗ-амӑшӗсем, офицер патне чупса пытӑмӑр.

— Тархасшӑн илсе ан кайӑр...

Итлеҫҫӗ-и мӗн? Прикладсемпе, чышкӑсемпе, тапа-тапа хӑвалама тапратрӗҫ пире. Сасартӑк Соня сассине илтех кайрӑм:

— Ан ҫулӑх, йытӑ!... Яр!..

Пӑхрӑм — шуйттан тӗслӗ нимӗҫ ӑна пилӗкӗнчен ыталаса тытнӑ, машин ҫине хӑпартса пӑрахасшӑн. Соня пур вӑйӗпе тапкаланать, ун аллинчен вӗҫернесшӗн — тӗртет ӑна, чышать. Тутри салтӑннӑ, ҫӳҫӗ-пуҫӗ арпашса кайнӑ, куҫҫулӗсем чарусӑр юхаҫҫӗ. Тахӑш самантра чупса пытӑм вара эп ун патне — астумастӑп. Темскер хаяррӑн кӑшкӑрса ярса, Соняна нимӗҫ аллинчен вӗҫертме пикентӗм. Мана ҫавӑнтах тӗксе ячӗҫ те — ӳкрӗм. Унтан Соня: „Сывпул, атте! Пӗтрӗм эпӗ..." тесе кӑшкӑрнине ҫеҫ илтсе юлтӑм. Туллиех хӗр тиенӗ грузовик вырӑнтан хусканса кайрӗ.

Ҫав тери тарӑхса, хурланса, хам ним тума пултарайманшӑн кӳренсе, ватӑ пуҫпах макӑрса ятӑм ҫавӑнта. Куҫҫулӗсемпе пӗрле, вӗҫӗмсӗр ылхан сӑмахӗсем тӑкӑнчӗҫ манӑн.

— Чуниллисем... Урнӑ йытӑсем! Таварӗҫ-ха сире пирӗн куҫҫулӗсемшӗн! — терӗм эпӗ.

4. Ҫапӑҫу хирӗнче.

Ман çывăхрах хайхи сутăнчăк Кузька Битый—староста тăрать иккен. Вăл ман çине сиввĕн кăна пăхса илчĕ.

— Асту, чĕлхӳне чар!

Эп ăна хирĕç тем те пĕр калама хатĕрччĕ, анчах çав вăхăтрах тӳсме çук йĕрĕнтĕм эп унтан. Ик сăмах çеç каларăм вара:

— Спасибо сана! Халăх ĕмĕр тав тăвĕ...

— Мана тав тăвиччен сирĕн пурин те пыршусем тухаççĕ!—татса хучĕ вăл мана хирĕç.

Тек чĕнмерĕм, килелле утрăм.

Аслă хĕрпе иксĕмĕр çĕрĕпех çывăраймарăмăр. Вăл макăрчĕ, эп пӳлĕм тăрăх таттисĕр калле-малле утрăм. Хăлхара çаплах Соня юлашки хут кăшкăрни янраса тăчĕ: „Сывпул, атте... Пĕтрĕм эпĕ!"

— Ăçта-ши вăл халь? Епле тискер йытă асаплантаратьши ăна?..

Чĕре тӳсмелле мар ыратрĕ, тăнлавсенчи юн тымарĕсем мăлатукпа шакканă пек тапса тăчĕç, ал-урасем чĕтреççĕ. Паллах ĕнтĕ, нервăсем выляна. Кун пек хуйăха никам та лăпкăн тӳссе ирттерме пултараяс çук. Тăван ачине камăн кашкăр аллине парас килтĕр?

...Çурçĕр тĕлĕнче пĕтĕм яла сасартăк калама та çук хăватлă взрыв кисрентерчĕ. Унтан уйрăм пăшал сассисем илтĕнчĕç, ял варринче такамсем кăшкăрма пуçларĕç, пулемĕт шатăртатма тапратрĕ. Темскер пулса иртрĕ, анчах мĕнне ăнланма пулмарĕ. Эпир Верăпа иксĕмĕр те сиксе тăрса урамри шава тинкерсе итлерĕмĕр.

Унччен те пулмарĕ, хамăрăн урам енчи сапур çине такам пит хăвăрт чакаланса хăпарнине, унтан килхушшинелле этем кĕлетки ӳкни илтĕнчĕ. Кĕçех çенĕк алăкне шаккарĕç.

Хытă хăрана пулин те, ăна хирĕç тухрăм.

— Мĕн кирлĕ?

— Уç-ха, Яков Иванч,—илтĕнчĕ тулти сасă.

— Кам эс?

— Ăна кайран калăп, эс уç часрах!

— Палламан ҫынна епле кӳртем вара эп?..

— Эп сире лайӑх паллатӑп, Соняна та паллатӑп, вӑл та пӗлет мана... Тархасшӑн уҫ!

Соня ятне асӑннине илтсен, ку ытла ют ҫынах мар пуль-ха тесе, уҫса кӳртрӗм ҫавна.

— Лампа пур-и сирӗн?—нимрен малтан ыйтрӗ хайхи-скер.— Ҫутасчӗ часрах...

— Мӗн тума?

— Юн юхать манӑн... Ҫыхасчӗ!

Чӗре сиксе тухас пек тапма пуҫларӗ. Вӑрҫӑ ман пӳртех пырса кӗчӗ вӗт! Юн! Перевязка... Ман пек мирлӗ ҫын хӑҫан шухӑшлама пултарнӑ ун ҫинчен? Васкасах пӗчӗк мигалка ҫуткаларӑм та, хам умра ҫамрӑк кӑна тӗреклӗ каччӑ тӑнине курах кайрӑм. Ҫара пуҫӑн, ҫӑмӑл фуфайкӑпа, пиҫиххийӗ ҫинче—граната. Сылтӑм аллипе сулахайне тытнӑ, унӑн пӳрнисем тӑрӑх шӑпӑртатса юн юхать... Вера часрах шурӑ татӑк тупса ҫыхма тапратрӗ. Пуля шӑпах чавса тӗлӗнчен шӑтарса кайнӑ пулмалла. Ҫыхнӑ чух каччӑ шӑлӗсене ҫыртса тӑчӗ,—питӗ хытӑ ыратрӗ пулмалла,—анчах пӗрре йынӑшса илесчӗ хуть! Сас та кӑлармарӗ.

— Шыв парӑр-ха,—терӗ вӑл аллине ҫыхса пӗтерсен тин, пукан ҫине ларса.

Вера ӑна шыв пырса пачӗ. Вӑл шыва ик-виҫ секундрах ҫӑтса ячӗ.

— Тата...

Вера тепӗр кружка пачӗ. Каччӑ ӑна та ҫавӑн пекех ҫӑтрӗ.

— Палламастӑр эппин мана?—тесе ыйтрӗ вара.

— Таҫта курна пек туйӑнать...—терӗ Вера, ун ҫине питӗ тинкерсе пӑхса.—Комсомол райкомӗнче ӗҫлемен-и эсир?

— Точно, ҫавӑнта ӗҫленӗ. Сирӗн Соня пит лайӑх пӗлет мана, мӗншӗн тесен вӑл нумай пулмасть комсомола кӗчӗ, эп ӑна рекомендаци патӑм. Ӑна паян нимӗҫсем илсе кайнӑ вӗт?

— Эсир ăçтан пĕлетĕр?

— Пурне те пĕлетпĕр эпир, хуть ăçта та хамăрăн çынсем пур пирĕн,—пĕлтерсех тăраççĕ... Паллах, сирĕн нимĕçсене хирĕç тархă пуррине пĕлмен пулсан—сирĕн пата килсе кĕместĕмччĕ эпĕ.

— Сире мĕн пулчĕ вара? Ăçта амантăр?

— Взрыв илтрĕр пуль? Комендатура турпас пулса тăчĕ. Çунать халь. Кайран вĕсем те пеме тапратрĕç. Анчах партизансене тытма аллисем кĕске-ха вĕсен!

— Эсир—партизан эппин?!—питех те тĕлĕнсе тăтăмăр Верăпа иксĕмĕр те.

— Халь кашни совет çынни партизан,—терĕ вăл лăпкăнах.—Сире те партизан теме пулать,-мĕншĕн тесен эсир партизанăн суранне çыхса ятăр, ăна пулăшрăр...

Пĕр вăхăт лăпланнă пек пулнă пăшал сассисем тепĕр хут илтĕнме пуçларĕç. Çывăхран çывăха килсе пычĕç вĕсем, уçăран уçă янрарĕç. Пирĕн тĕлпе иккĕн-виççĕн юланутсемпе тăпăртаттарса иртсе кайрĕç. Автомат черечĕсем шатăртатрĕç, таçта каллех взрыв пулчĕ.

Партизан йăпăртах ура çине тăчĕ.

— Çавсем мана шыраççĕ. Пытансан—ăслăрах пулать пуль... Ир енне тухса кайăп, халлĕхе хире те тухма юрамасть. Вĕсем ĕнтĕ пур çĕрте те чупаççĕ, шурă юр çинче—пĕтĕмпех палăрать...

— Ăçта пытарас?

Этем—йĕп мар-çке, ăна йăпăр-япăрах палăрми туса хума çук, çитменнине—нимĕçсем килесех пулсан—пур çĕрте те ухтараççĕ ĕнтĕ!

Апла та, капла та шут туса пăхрăмăр. Çав вăхăтра урамри шав татах вăйланчĕ. Пирĕн васкамалла пулчĕ. Çавăнпа та партизана часрах сив чăлан урайне уçса пытартăмăр та, çиелтен ăпăр-тапăр пăрахса палăрмалла мар турăмăр, чăланне питĕрсе лартрăмăр. Хамăр каллех пÿрте кĕрсен, Вера урайне тумланă юна шăлса тасатрĕ. Опытлă конспираторсем пекех ĕçлерĕмĕр!

Çаксене туса çитерсеттĕмĕр çеç—хапхаран шанлаттарма тапратрĕç.

— Уç! Уç халех!—Çĕмĕрттереççĕ кăна!

Кам, тата мĕншĕн килнине чухласа, эп васкамасăр, кăштăртаткаласа тухрăм.

— Мĕн кирлĕ ара? Тĕттĕм-çке, ним те курмастăп,— текелесе пытăм хапха патнелле.

— Эпир сана халех çут тĕнче кăтартăпăр ак! Ват сысна!—кăшкăрса пăрахрĕç мана.

Хапхана уçсанах, пĕрисем мана çавăрса тытрĕç, теприсем пӳртелле кĕмсĕртеттерсе чупса кĕрсе кайрĕç.

— Кам пур сан патра?

— Ăçта пытартăн, кала халех! Халех пуçна çапса салататпăр, ватă анчăк!.

„Кусем ним те пĕлмеççĕ, „на пушку" илесшĕн мана", терĕм хам. Вара шăт та пат тунса лартрăм.

— Никама та курман, никам та килмен, нимĕн те пĕлместĕп...

Кăкăртан тытса силлерĕç мана, револьверпа юнарĕç— эп пурĕпĕр хамăнне петĕм:

— Ĕненместĕр пулсан—шырăр...

Вĕсем чăнах та унталла-кунталла пăхкаларĕç, анчах эп хама хам питĕ çирĕппĕн тыткалани ĕнентерчĕ пулас. Епле пырса кĕнĕ, çавăн пекех шавласа, кĕмсĕртеттерсе тухса кайрĕç.

— Сана эпир пурĕпĕр лектеретпĕр-ха!

— Ăна валли—сăлтав кирлĕ,—терĕм эпĕ.—Айăпсăр çынна ăçтан тивен?

— Молчать, анчăк!

— Юрĕ, вăхăчĕ çитиччен шарламăпăр...

Ĕненетĕр-и—çакăн хыççăн чĕре темле çирĕп кăмăлпа тулса ларчĕ, хамра çителĕклĕ вăй пуррине туйрăм эпĕ! Ултăн-çиччĕн ним те тăваймарĕç вĕт—партизана чиперех хăтарса хăвартăм! Тепрер сехетрен вара, урамри шăв-шав лăплансан, каччăна чăлантан илсе кӳртсе, кăмака çинчех ăшăтса çывăратрăм. Ир енне тин, пире тав туса, хăй

[redacted] тухса кайрĕ вăл. Юлашкинчен питĕ лайăх сăмахсем каласа хăварчĕ:

— Нихçан та парăнтарас çук пире нимĕç. Хамăр ирĕке эпир каллех таврăтпăр!

Ирхине вăрансанах, каллех Соня ăша кĕрсе кайрĕ. Мĕн пулнă-ши ăна? Чĕрĕ-ши вăл? Таврăнать-ши?

Çук, таврăнмарĕ манăн хĕр. Ялтан машинпа тиесе тухса кайнă хĕрсенчен нихăшĕ те каялла килмерĕ. Пĕр кун иртрĕ, виççĕ, пиллĕк... Шăпах пулчĕ. Никам та, нимĕн те пĕлмерĕ вĕсем çинчен. Чĕрери хуйха çеç йывăр чул пек çакăнса тăчĕ.

...Çĕнĕ çул каç партизансем нимĕçсен комендатури çине йывăр гранатăсем пăрахса сиктерне иккен. Нумай нимĕçсене вĕлерне. Комендатне—хай пирĕн Соняна вăйпах хулана ăсатаканнине—питĕ хытă амантнă, вара ăна пирĕн патран самолетпах илсе кайнă. Анчах ик кунтанах пирĕн яла хура шинеллĕ, хура калпаклă салтаксем—гестапо йыттисем пырса тулнă. Вĕсем айăплисене шырама тытăннă.

Çур ял тĕрех пушанса юлчĕ—пĕр каçрах тытса хупрĕç. Мана та тытса кайрĕç...

Верăпа сывпуллашсах тухрăм эпĕ,—темшĕн эпир пĕрпĕрине текех курас çуккăн туйăнчĕ. Чĕре улталаман мĕн, эп ăна чăнах та урăх кураймарăм вара. Анчах ун çинчен кайран калăп-ха.

Çĕралла метр тăршшĕ колхоз сарайĕнче эпир тăватçĕр çын ытла лартăмăр. Пирĕн ялтан çеç мар, ытти ялсенчен те сĕтĕрсе пырса тултарнă иккен.

Шартлама сивĕ... Вут хутса ăшăтма мар, чўрече шăтăкĕсене те питĕрмен, çил шăхăрать кăна. Пырать, кунта кивĕ улăм юлкаланă мĕн те, çавăн ăшне чакаланса кĕрекĕре выртрăмăр. Ни çăкăр, ни шыв памаççĕ. Паллах, тытса хупнисен тăванĕсем кашниех ĕçмелли-çимелли илсе пынă унта, анчах вĕсенчен ним те йышăнман,—йышăнсан та апат-çимĕçсем пирĕн пата çитмен, хуралти нимĕç салтакĕсем вĕсене хăйсемех хыпса янă...

Допроса икшер-виçшер çын пĕрле чĕнтерчĕç. Вĕсем вара яланах палламалла мар пулса таваранчĕç: е чĕп-чĕр юн, е куçĕ-пуçĕ хуралса шыçсаларнă, е аллине пăрса хуçнă. Çурăмĕсем çине пилĕк вĕçлĕ çăлтăр касса кăларнисем те пулнă. Тўсме çук хăрушла япаласем каласа пачĕç çав „вилĕм пўлĕмĕнче" пулса курнисем...

Кашниех хăйĕн черетне кĕтрĕ. Сывă юласси çинчен никам та шухăшламарĕ.

Икĕ талăк сив сарайĕнче пĕр чĕптĕм çăкăр ăша ямасăр ларса, шăнса вилес патне çитнĕ хыççăн, алăкран ман хушамата кăшкăрчĕç:

— Просветов, Яков!

Тăрса утрăм... Тĕлĕнсе каймалла: те нимĕн туйми пулса çитнĕ эпĕ, те урăх сăлтавпа—ним хăрани те пулмарĕ манăн çав самантра! Лăпкăнах пырса кĕтĕм „вилĕм пўлĕмне".

— Вĕлерччĕр, анчах пурпĕр парăнтараймаççĕ вĕсем мана. Эп никама та сутас çук, ман чĕрене вĕсем улăштарас çук...—терĕм хама хам.

Сĕтел хушшинче хайхи пĕркун мана писарь тума тăрăшнă гестапо пуçлăхĕ ларать! Мана тўрех палларĕ.

— Аха-а, эс те лекрĕн эппин! Пит аван,—терĕ вăл шал витĕр.—Каллех тĕл пултăмăр иккен, а? Халь ĕнтĕ пĕркунхи пек мăн кăмăллă пулмăн, тетĕп...

Унăн куçĕсем çав тери усал çутăпа йăлтăртатса илчĕç.

— Пĕтерет ку мана,—шухăш вĕçрĕ пуçăмра.—Çăлăнăç кĕтмелли çук...

Çав вăхăтра коридорта, алăк хыçĕнче, темиçе çын кĕрешни, пĕрне-пĕри çапни илтĕнчĕ. Тахăшĕ хыттăн кăшкăрса ячĕ:

— Айăплă мар эпĕ, мĕншĕн хупса усратăр мана? Çавçавах нимĕн те каламастăп сире!..

Унтан алăк петлерен тухса вăркăнас пек уçăлса хупăнчĕ те, „вилĕм пўлĕмне" хура сухаллă пĕр лутака çынна мечĕк пек ывăтса кўртрĕç. Çын стена çумне пырса çапăнчĕ, урайне ўкрĕ.

— Чуниллисем эсир!.. Мĕншĕн асаплантаратăр? Вĕлерĕр пĕреххут,—йынăшса макăрса ячĕ вăл.

Ун хыççăн сиксе кĕнĕ офицер ăна тимĕрленĕ аттипе янахĕнчен тапрĕ. Çынăн çăварĕнчен юн юхса анчĕ.

— Мĕн?—хаяррăн пăхса илчĕ ун çине гестапо пуçлăхĕ.

— Эп айăплă мар, господин...—урмăшса кайнă куçĕсене çавăркаласа, юхсах тăракан юнне сура-сура калама пуçларĕ сухаллă çын.—Ма çыпăçаççĕ вĕсем ман çумма? Кунне пилĕкшер хут допроса сĕтĕреççĕ, кашнинчех хĕнеççĕ, пуçран çапа-çапа шăтарса пĕтерчĕç... А эп нимĕн те пĕлместĕп. Халь персе вĕлерĕр—ним те калаймастăп. Курман эп партизансене!

— Пăлхавçă вăл, господин обер-лейтенант,—йăрстах тăсăлса тăчĕ пуçлăх умĕнче халь çеç кĕнĕ офицерĕ.—Большевиксен агитаторĕ. Хам хăлхапах илтрĕм—фюрера урнă йытă, терĕ, ытти арестованнăйсене Хĕрлĕ Çар каялла килессипе лăплантарать...

— Эп тĕрĕссине çеç каларăм!—кăшкăрчĕ сухаллă çын.—„Пурĕпĕр вĕлереççĕ..."—терĕ пулмалла.

Гестапо пуçлăхĕ нимĕн те каламарĕ. Кабурĕнчи револьверне кăларчĕ те, тӳрех ăна пуçĕнчен печĕ. Çын аллисемпе хăлаçланса ӳкрĕ, анчах вилмерĕ. Нимĕç ăна тепре печĕ—каллех пуçĕнчен. Çын çаплах тапаланчĕ. Ун пичĕ тăрăх темиçе йĕрпе юн юхрĕ, вăл хăркăлтатма тапратрĕ. Çапах та, çын вилсе çитмерĕ-ха. Кашни сывламассеренех унăн çăварĕнчен юнлă кăпăк тухрĕ. Ăна тавра урайĕнче юн кӳлли ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ. А вăл çаплах хусканчĕ-ха. Вара нимĕç ун патне сиксе пырса ăна çăварĕнчен печĕ, пуля çынăн ĕнси витĕр тухса кайрĕ. Юн фонтан пекех тапма тапратрĕ кунтан. Халь ĕнтĕ çынăн пĕтĕм кĕлетки юн ăшĕнче выртрĕ. Текех хусканмарĕ вара вăл...

— Кăларса пăрахăр!—кăшкăрчĕ гестапо пуçлăхĕ.

Икĕ салтак сухаллă çынна аллисенчен тытса сĕтĕрсе тухса кайрĕç. Ун хыççăн аршăн сарлакĕш юнлă йĕр хуралса юлчĕ.

— Халь ĕнтĕ мана...—шухăшларăм эпĕ.—Мана та çавăн пек тăваççĕ...

Анчах темле телей çавăрăнса тухрĕ ман тĕле. Допрос тумарĕç. Гестапо пуçлăхне васкавлăн таçта чĕнсе карĕç те, „вилĕм пÿлĕмĕнче" манпа пĕрле пĕр салтак çеç юлчĕ. Çур сехет пек вăхăт иртсен, ним каламасăрах каялла сарайне кайса хупрĕç. Çĕрле пулсан пире пурне те урама илсе тухса, мăн çул тăрăх хула еннелле хăваласа кайрĕç.

Хăрушла путешестви пулчĕ вăл! Выçăпа, асаплантарнипе вăйсăрланса çитнĕ çынсем ĕретлĕн утаймарĕç, аран сулланса пычĕç. Юланутлă нимĕçсем вĕсене пĕрмаях хыçалтан хÿтерчĕç, кам та пулин çултан пăрăнсан, е кая юлма пуçласан, çавăнтах хулăм резин патаксемпе хĕнерĕç, прикладсемпе чышрĕç, лашасемпе таптарĕç. Пачах халран тухса урисене шутарайми пулнисене—пĕр вунă çынна пуль—çул çинчех пере-пере пăрахса хăварчĕç. Эп те лекеттĕм ĕнтĕ çав шута, анчах мана икĕ çамрăк çын çул тăршшипех ик енчен пулăшса пычĕç те—çавăнпа çеç хăтăлса юлтăм. Атту хальччен шăмăсене те йытăсем кышласа янă пулĕччĕ.

Тул çутăлнă чух пире хулари тĕрмене çитерсе хупрĕç.

Уйăха яхăн арестант пулса пурăнтăм вара эпĕ. Турăçăм, мĕн кăна тÿссе ирттереймерĕм пуль çав хушăра! Анчах этемĕн чунĕ час тухмасть иккен—вилме патне çитнĕскерех чĕррĕн юлтăм вĕт.

Пĕчĕкçеç камерăра эпир утмăлăн ытла пултăмăр. Выртма мар, ларма та вырăн çук. Вуçех ларайми-тăрайми пулнисем çеç выртрĕç, ыттисем пĕр-пĕрин çине тĕртĕнсе, е ура вĕççĕнех, стена çумне тайăнса çывăрчĕç. Апат вырăнне—ирпе каç пăтранчăк шыв, пĕр воçмушкă тăм пек çăкăр татăкĕ. Шыв та хĕрхенчĕç вĕт, ăна та кунне пĕр кружкăран ытла памарĕç, çăхансем! Пур майсемпе те вĕлерме тăрăшрĕç çав совет çыннисене. Ниепле сăмахсемпе те туллин каласа пама çук пирĕн асапсем çинчен. Мĕн чухлĕ паха халăх пĕтрĕ пуль унта!

Кашни ир камерăсенчен темиçешер виле сĕтĕрсе тух-

рĕç. Кашни каç коридор вĕçĕнчи „асап каменринчен“ сыннсем чĕрене çурса ямалла йынăшса кăшкăрни илтĕнчĕ. Пĕр каç арçынсен сасси илтĕнет, тепринче—хĕрарăмсен...

„Асап камеринчен“ сассем илтĕнме пуçласанах, тĕрме шăп пулатчĕ,—заключеннăйсем паян кама черет çитнине тавçăрса илме тăрăшрĕç. Нумайăшĕсем хăйсен çывăх çыннисене палласа илчĕç вара. Ирсерен, вĕсене тимĕрлесе пĕтернĕ хура хупă грузовикпа (ăна пирĕн „душегубка“ тетчĕç) хула хыçне илсе кайса тăкнă—вăл машинра совет çыннисене газпа вĕлернĕ...

Пĕр каçхине, çавнашкал асаплăн кăшкăрни пĕр сехет ытла таттисĕр хăлхана хупласа тăнă хыççăн, коридорта ура сассисем илтĕнчĕç. Тата шăпрах пулса тăчĕ тĕрмере.

Сасартăк, çав хăрушла шăплăхра çăлкуç шывĕ пек таса çамрăк сасă янраса кайрĕ:

— Юлташсем! Пире вĕлерме илсе каяççĕ... Сывă пулăр! Ан парăнăр! Пурне те вĕлерсе пĕтереймĕç... Ĕненĕр, юлташсем: Сталин манман пире! Сталин çарĕ килет, Сталин çарĕ совет çĕрне фашистсенчен тасатать! Ĕненĕр...

Урăх кăшкăрма памарĕç ăна. Тăруках кĕрешни, çапни илтĕнчĕ, ура сассисем хăвăртланчĕç—конвоирсем часрах хăвалама тытăнчĕç курăнать. Çапах та, темиçе самантран, коридорăн тепĕр вĕçĕнчен юлашки хут янраса илчĕ çамрăк сас:

— Сывă пултăр пирĕн ирĕклĕх! Сывă пултăр Сталин!..

Çавăнтах пăшал сасси кĕрслетсе илчĕ. Паллах ĕнтĕ, çав вĕри чĕреллĕ, вилес умĕн те парăнман совет çыннине тĕрмерен тухичченех персе пăрахрĕç...

Тахăш камерăра темиçе заключеннăй пĕр харăс юрласа ячĕç:

— Вы жертвою пали в борьбе роковой,
Любви беззаветной к народу...

Кĕçех вĕсен сассисем çумне юнашар камерăри сассем хутшăнчĕç. Юрă вăйланчĕ.

— Вы отдали все, что могли, за него—
За жизнь его, честь и свободу...

Унтан пур камерăсем те, пĕтĕм тĕрме юрлама тапратрĕ. Надзирательсем ухмаха ернĕ пек чупкалама тытăнчĕç коридор тăрăх.

— Шăпланăр! Халех чарăнăр! Пурне те карцера лартатпăр!..

Вĕсем камерăсен алăкĕсенчен шаккарĕç, пырĕсене çурса кăларас пек кăшкăрчĕç, темпе те хăратма тăрăшрĕç—ним те пулăшмарĕ. Юрă пур камерăсенче те янрарĕ... Халь ĕнтĕ хупса лартнă çынсем мар, тĕрме çурчĕ хăй, стенари кашни кирпĕч юрланăн туйăнчĕ.

Нимĕн те тăваймарĕç нимĕçсем çакăн хыççăн—мĕншĕн тесен уйрăмăн никама та айăплама пулмарĕ. Икĕ кун апат памасăр, прогулкăна кăлармасăр усрарĕç кăна.

...Талăк хыççăн талăк иртрĕ, эп хама мĕн пулассине пачах та пĕлмесĕр пурăнтăм. Вăйсем пĕтрĕç, ĕнтĕ аран сывлакан пулса çитрĕм.

— Çак тамăкрах вилмелле пулĕ-ши?—хурлăхлăн пăчăртанчĕ чĕре.

Çирĕм виççĕмĕш кун вĕçне çитсен тин допроса чĕнсе кăларчĕç мана. Камерăра çывăхрах паллашнă çынсемпе сывпуллашсах тухрăм.

— Асаплантараççех пулсан—тӳсеймест ман чĕре,—терĕм.

Шăп кăнтăрлаччĕ. Тахăш камерăри хĕрарăмсене прогулкăна кăларнă мĕн те, вĕсем аллисене каялла тытса тĕрме килхушшинчи ункă тăрăх утатчĕç. Ман конвоир тусне курчĕ пулас та, мана чарсах унпа калаçма пикенчĕ. Ман тĕлпе, пĕрин хыççăн тепри, хĕрарăмсем утса иртрĕç... Халь çеç хурăмланса çитме пуçланă çамрăк хĕрсем те, 50—60 çула çитнĕ карчăксем те пурччĕ вĕсем хушшинче. Анчах пĕрин те чĕрĕ этем сăнĕ çук,—пурте начарланса, сарăхса, тăпра тĕслĕ пулса ларнă.

— Мĕншĕн асапланаççĕ çак мĕскĕнсем?—тесе тăтăм вĕсем çине хурлăхлăн пăхса.

Унтан сасартăк куççене чарса пăрахрăм... Темиçе самант хушши сывлăш та тухаймарĕ пулас манан...

Ансăр сукмак тăрăх умлăн-хыçлăн утакан хĕрарăмсем хушшинче эпĕ хамăн хĕре, Соняна куртăм! Малтанах ĕненес те килмерĕ, улшу куратăп пуль, терĕм, çавăнпа та шывланакан куççене часрах шăлкаласа илтĕм. Çук, чăнах иккен, манăн хĕрех!

Çĕрелле пăхса, тарăн шухăша кайса утаканскер, вăл мана курмарĕ. Хампа танашсан вара — эп малтан чĕнтĕм ăна:

— Соня!

Вăл пуçне çĕклесе мана курчĕ те—пат! чарăнса тăчĕ.

— Атте! Епле ку? Эс те кунта-и?!—тесе ячĕ те,—çавăнтах аллисене тăсса ман паталла чупса пычĕ, мана пăчăртаса вĕлерес пек ыталаса илсе, макăра-макăра, ниçта кайса кĕрейми пăлханса чуптума тапратрĕ..

Анчах темиçе самант хушши çеç тăсăлчĕ пирĕн телей. Харăсах пур енчен темиçе салтак чупса пычĕç те, пире туртса уйăрчĕç. Соняна вырăнтах пуçĕ урлă резина патак лекрĕ, мана хамăн конвоир темиçе хут чышса сывлайми турĕ. Вара эпир пĕр-пĕрин çинчен нимĕн те пĕлеймерĕмĕр.

Допроса илçе çитерсен, конвоир офицера тӳрех çак килхушшинче пулса иртнĕ ĕç çинчен каласа пачĕ пулмалла, мĕншĕн тесен нимрен малтан çавăн пирки ыйтма тапратрĕç.

— Кам вăл? Мĕнле хĕрарăма тĕл пултăн?

— Манăн ученица пулнăскер,—тесе тыттартăм эпĕ вĕсем Соня ман хĕр иккенне пĕлсен ăна тата йывăртарах пулса тухасран шикленсе.

— Суятăн пуль-ха?

— Тĕп-тĕрĕс калатăп. Суйма—вată эпĕ.

— Тен тăвану вăл санăн?

— Çук...

— Е хĕрӳ пулĕ?

— Ман хĕр килтех пурăнать...

Офицер кĕтесре ларакан какай пек хĕрлĕ питлĕ салтака темскер каларĕ. Вара мана çавăнтах тумтире хывтарса сак çине тăсса хучĕç те, шалавара туртса антарчĕç. Шомполпа пĕр вунă-вуникĕ хут çапнине астăватăп, унтан вара тăна çухатнă. Темĕн чухлĕ выртнă—пĕлместĕп, анчах тăна кĕрсен хам йĕп-йĕпе пулнине туйрăм. Мана тăна кўртме пуç çине шыв сапнă иккен.

Эп куççене уççанах, мана çĕклесе тăратрĕç.

— Ну, ăс кĕчĕ-и пĕртак?—куç харшисем айĕн пăхса илчĕ офицер.—Малашне тĕп-тĕрĕс ответсем парасса кĕтетĕп... Кала—партизансене епле пулăшса тăтăн?

— Никама та пулăшман эпĕ...

— Çĕн çул каçхине кама пытартăн хăвăн патра?

— Куçпа та курман...

— Суятăн, йытă! Çынсем курнă вĕт!

— Курнă пулсан—ма тытман?

— Эс чипер калаçкала, халех тепĕр хут лектеретпĕр!

— Сирĕн ирĕк.

— Кала теççĕ сана, кама пытартăн? Миçе çынна?

— Пĕрне те курман...

— Ан суй, выльăх! Çаплах тунатăн пулать? Чунна кăларатăп эп санăнне, илтетĕн-и?

— Вăл сирĕн ĕç ĕнтĕ, эсир ăна пит ăста пултаратăр!—тўссе тăраймарăм тек.—Çăмăл ĕç... Тата эсир хăнăхнă ăна...

— А-а, эс калаçса тăратăн-и тата?!—Офицер сиксе тăчĕ те, сĕтел урлă кармашсах мана янахран чышрĕ. Унпа пĕрлех салтак сиксе пырса хăлхаран çапрĕ. Эп сулăнса кайса ўкрĕм. Салтак ман çине хăпарса сикрĕ. Çавăнтан вара нимĕн те астумастăп,—тĕпсĕр тĕттĕм шăтăка путнă пекех пулнă.

...Ир енне темле çырмара тăна кĕтĕм. Пурпĕрех вилет тесе, тĕрмерен кăларса пăрахнă пулмалла мана. Тăруках хам ăçтине те тавçăрса илеймерĕм, ниçталла кайма та пĕлмерĕм. Çутăла пуçласан тин сăртра тĕрме стенисене куртăм та—тем пекех хĕн пулсан та!—тĕрмерен аяккарах

кайма тăрăшрăм. Пĕтĕм шăмшак, ал-урасем, пуç—тӳсмелле мар ыратрĕç, пĕр тумлам вăй та пулмарĕ хамăн, анчах шалти сас çаплах хăваларĕ мана:

— Ут, çапах та ут... Çăлăн... Çăлăнатăн!

Çырма тăрăх хула хĕррине тухсан, малалла тек ниçта та кайма пултарас çуккине туйса, пĕр пĕчĕкçеç пӳрт алăкĕ патне пырса шаккарăм. Мана хирĕç хам пекех ватă хĕрарăм тухрĕ.

— Мĕн кирлĕ?—ыйтрĕ вăл, ман çине тĕлĕнсе пăхса.

— Кăштах канасчĕ манăн...—терĕм.

— Эс тĕрмерен мар пуль-çке?

— Ма апла ыйтан?

— Сăну çавăн пек...

— Ан та ыйт эппин,—алăпа султăм вара эп.

Карчăк пит аванскер пулчĕ. Эп ăна хам кам пулнине, мĕн-мĕн тӳссе ирттернисене кĕскен кăна каласа патăм та, мана вăл макăра-макăрах пăхма тытăнчĕ.

— Манăн ывăла та тытса кайрĕç çавăн пек,—терĕ вăл,—çĕр варринче, тăрук килсе кĕрсе... Анчах та тарса хăтăлнă хыпар тухрĕ-ха... Вĕсене кунтан урăх çĕре хăваласа кайнă чух вăрмантан темле пăшаллă çынсем сасартăк сиксе тухса хăтарнă, тет. Тĕрĕс пултăрах çав сămах!

Хама тем пекех йывăр пулнă пулин те, эп ăна лăплантарма тăрăшрăм.

— Нумая пымасть ку шуйттанăн ĕмĕрĕ, пĕтереççĕ ăна. Пурĕпĕр хăтараççĕ пире...

Çавăн майлă калаçкаласан, карчăк татах ыр кăмăлланса кайрĕ. Ывăлĕ çинчен калама пуçларĕ. Районра комсомол енĕпе ĕçленĕ, тет. Хăш районра ĕçленине ыйтсан, вăл шăпах пирĕн район ятне каларĕ. Вара эп унăн ывăлĕн сăн-сăпачĕ пирки пĕлме пуçларăм.

— Çӳллĕ, сар çӳçлĕ, кăвак куçлăскер—пит матур çав,—терĕ карчăк.

Эп унăн фотографине ыйтрăм.

— Кăтарт-ха, тен эпĕ мĕн те пулин пĕлетĕп пуль ун çинчен...

Карчăк часах тĕттĕм кĕтесрен, урай хăми айĕнчен пĕр çыхă фотографи кăларса пачĕ. Вĕсенчен пĕр-иккĕшне пăхсанах, каялла тыттартăм. Эп шухăшлани тĕрĕсех пулнă!

— Сан ывăлу сывах, çĕн çул кац ман патра çĕр выртса кайрĕ,—терĕм ăна.

Карчăк ку хыпартан калама та çук тĕлĕнчĕ, ниепле те ĕненесшĕн пулмарĕ. Ĕç мĕнле пулнине йĕркипе каласа парсан вара савăнни-мĕнĕпе макăрса ячĕ:

— Ыр çынсем нумай иккен-ха пирĕн...

Виçĕ талăк пурăнтăм эп ун патĕнче. Хăйĕн ывăлне эпĕ нимĕçсенчен хăтарнине пĕлсен, вăл мана хăйĕн тăванĕ пекех усрарĕ. Самаях вăй кĕчĕ, ыратнисем те майĕпе ирте пуçларĕç. Тăваттăмĕш кунĕнче ирхине киле тухса утрăм, мĕншĕн тесен хулара ниçта çырăнмасăр пурăннă май мана каллех хупăрласа тытнă пулĕччĕ. Хампа пĕрле çак ырă карчăка та пĕтерсе хума пултарнă эпĕ.

Анчах килте мана тата пысăкрах хуйхă кĕтсе тăнă.

Эп тавăрăннă çĕре ман кил пуш-пушах тăрса юлнă. Хама тытса кайсан ик эрнерен нимĕçсем ман аслă хĕре çакса вĕлернĕ, кил таврашĕнчи мĕнпур япаласене çаратса тухса кайнă...

Кӳршĕсем çапла каласа пачĕç мана.

Хуйхи-мĕнĕпе Вера питĕ хытă чирленĕ. Кунран кун хавшаса пынă вăл. Ӳт-пĕве кăшт та пулин вăй кӳртес тесе, вăл кӳршĕ хĕрарăмне хамăрăн юлашки виçĕ чăхран пĕрине пустарнă. Çав чăх пирки çакнă та вара ăна...

Комендантпа староста ялта юлнă мĕнпур выльăха, кайăк-кĕшĕке шута илсе, çакăн пек приказ кăларнă пулнă:

— Кам пĕр путеке те пулин, пĕр чăх чĕппине те пулин пытарать, е пусса çиет—çавна Германи командованине хирĕç тăракан вырăнне шутласа, сутсăрах çакса вĕлерессĕ.

Вера, чирлĕ пирки ниçта тухса çӳременскер, çав приказ çинчен нимĕн те пĕлмен. Шăпах апат çисе ларнă çĕре староста—çав йытă, Кузька Битый!—пырса кĕнĕ (вăл тĕрмене кайса хупнисен çемьисене кашни кунах тĕрĕслесе çӳретчĕ, тет).

— Мĕн çиен?—тӳрех тăраннă вăл Вера çине.
— Çимелли нимĕн те çук та—чăх пусрăм,—тенĕ Вера
— Кам ирĕк пачĕ?
— Хамăр чăх пирки камран ирĕк ыйтса тăратăп вара?
— Приказа пĕлетĕн-и?
— Мĕн çинчен?
— Нимĕн те пусма юраманни çинчен!
— Пуçласа илтетĕп...
Староста куна ĕненмен.
— Эс вĕреннĕ çын, эс пур приказсене те никамран малтан пĕлетĕн, куна эс закона пăхăнас мар тесе юри тунă...—тем те пĕр каласа пĕтернĕ Верăна. Çавăнтах акт çырнă та, коменданта панă. Паллах ĕнтĕ—кун çумне вăл ытти сăлтавсене те хушнă: ашшĕне партизансемпе çыхăннăшăн хупнă, шанчăксăр çын, тенĕ. Ун пек чух çынна пĕтерсе лартма çăмăл вĕт!
Комендант хăйĕн приказне „çирĕплетмелли" май тахçанах шыранă мĕн. Вăл Верăна çав кунах хăй патне сĕтĕрсе пыртарнă, допрос тăванçи пулса ăна тем тĕрлĕ асаплантарса пĕтернĕ, унтан—тепĕр ирхине—çакса вĕлернĕ. Хăй епле чунилли пулма пултарнине питĕ чаплăн кăтартма тăрăшнă вăл: виселица патне ялта юлнă пĕтĕм халăха хăваласа пынă, гарнизонри салтаксене парадри пек тăратса тухнă, оркестр таттисĕрех çуйăхуллă маршсем выляна, тет...
Пилĕк кун çакăнса тăнă Вера... Кайран вара ăна таçта кайса пăрахнă—никам та пĕлмест.
...Тăр пĕччен тăрса юлса, эп вара юмахри отшельниксем пек пурăнма пуçларăм. Ниçта тухмарăм, никампа та тĕл пулса калаçмарăм. Ку хуйхă мана татах халран ячĕ. Кунне пĕрре вут хуткалаттăм та, выртаттăм вара кăмака çинче. Анчах шухăшсене чарма çук вĕт, пуç чиперех ĕçлерĕ-ха манăн. Хама тытса кайнă чух Верăпа сыпуллашни, вăл мана куççуль тулли куçĕсемпе пăхса ăсатни,

унтан Соняна тёрме килхушшинче тĕл пулни—куç умĕнчех тăчĕç. Тĕлĕкре те пĕрмай куртăм вĕсене...

Унтан, майĕпе, шухăшсем сарăлса пырса ыттисем çине куçатчĕç.

— Неужели пирĕн пурнăç çаплипех вĕçленет? Чурасем пулсах вилетпĕр-ши?—теттĕм. Кун пек пулас шухăш пуçра ниепле те вырнаçаймастчĕ.

— Çук, ун пек пулма пултараймасть!—тетчĕ чĕре.— Россия нихçан та, никам умĕнче те чĕркуççи çине тăман, халь пушшех—тăрас çук!

Кун пек вăхăтсенче вара яланах тĕрмере пĕр каçхине пулса иртни—пĕрисем хăйсене вĕлерме илсе кайнă чух та: „Сталин манман пире! Сталин çарĕ совет çĕрне фашистсенчен тасатать... Ĕненĕр!“ тесе кăшкăрни аса килетчĕ.

Тĕнчере мĕн пулса иртнине нимĕн те пĕлмерĕм, фронт ăçтине те пĕлмерĕм, нимĕçсем пирĕн ялçыннисене хытăран хытă хĕснине, пĕрин хыççăн теприне тытса вĕлернисене çеç илтрĕм—çапах та чĕрере шанчăк сÿнмерĕ. Тĕлĕнмелле япала!

— Эпир тăшман чури пулман, пулас та çук...—теттĕм ăшăмра.

Уйăх ытла пурăнтăм çапла упа пек. Пĕрмаях темле телейлĕ самант килсе çитессе кĕтрĕм...

Мĕн тетĕр? Çитрĕ вĕт çав самант!..

Пĕр питĕ тĕттĕм каç пулчĕ вăл. Эп алăксене питĕрсе, кăмака çине улăхса, тăрпара çил выçă кашкăр пек ÿленĕ май, тахçанчченех хамăн шухăшсемпе пăтрашса выртрăм. Унтан тĕлĕрсе кайсаттăм çеç—сад енчи чÿречерен шăкăртаттарни илтĕнчĕ. Малтан эп ăна çилпе темскер чĕтрет пуль, тесеттĕм, анчах шакканă сас вăйланнăçемĕн вăйланчĕ. Вара ерипен çĕре анса мигалка çутрăм та, чÿрече патне пытăм:

— Кам унта?—тесе ыйтрăм.

— Эпĕ...—илтĕнчĕ хĕрарăм сасси.

Ку мана тата ытларах тĕлĕнтерчĕ. Епле хĕрарăм пыма пултарнă тата ман пата çак вăхăтра?

— Кам эс?

— Эпĕ, Соня, ну...

Хам умма çав самантра пĕр-пĕр калаçакан кайăк вĕçсе пынă пулсан, эпĕ çав тери тĕлĕнместĕмччĕ пулĕ!

— Соня! Соня!—асăрханмалли çинчен пачах манса, кăшкăрса ятăм та эпĕ, çеннĕкелле чупса тухрăм.—Хĕрĕм, чунăм!..

Алăк урлă каçсанах ыталанса илтĕмĕр. Иксĕмĕр те макăртăмăр, пĕрне-пĕри чуптурăмăр... Хăвăрах ăнланатăр ĕнтĕ: Соня пырса кĕни маншăн—вăл масар шăтăкĕнчен тухса килнĕ пекех пулчĕ-çке!

— Епле хăтăлтăн? Хăйсемех кăларса ячĕç-и?—ыйтса тĕпчеме пуçăнтăм унтан.

— Асту, хăйсем ярĕç вĕсем!—терĕ Соня.—Пире ĕнтĕ Германие илсе кайма тапраннăччĕ,—çаксем çăлчĕç!—Вăл алăк еннелле кăтартрĕ. Эп хумханни-мĕнĕпе асăрхаман та,—Соняпа пĕрле арçын килнĕ мĕн.

— Камсем—вĕсем?

— Партизансем...

— Ой, тавах вĕсене! Тем парăттăм... Спасибо, юлташ!—Эп алăк патĕнчи çынăн аллине часрах тытса чăмăртарăм, ăна малалла иртмерсе лартрăм.

— Эсир мана паллаймастăр пулас?—куларах ыйтрĕ вăл манран.

— Палласах çитейместĕп çав...

— Çенĕ çул каçне астăватăн-и?

— Астăватăп... Вара мĕн?

— Мана çăлтăр вĕт эсир ун чухне!

— Чăнах-и?!

— Çавă, çавă вăл, атте!—çирĕплетрĕ Соня.

— Юмахри пекех пулса тухать ку...—терĕм вара эп.—Пурнăç мар—приключениллĕ повесть, тупата!

Халь вĕсем эпĕ мĕншĕн кун пек калани çинчен ыйтма пикенчĕç. Эп вара нимĕçсем хама тĕрмерен йытă вилли

пек кăларса ыватнă хыççăн мĕн-мĕн пулнисене, хама çав Соня юлташĕн амăшĕ епле пăхса усранине каласа патăм. Ман калав вĕсене тĕлĕнтерчĕ те, култарчĕ те.

— Турă çапла çырнă пуль эппин!..

Соня хăй пирки çапла каласа пачĕ: иксĕмĕр тĕрме килхушшинче тĕл пулнă хыççăн ик-виç кунтанах вĕсене—200 çамрăка—тĕрмерен кăларса чугунçул станцинелле илсе кайнă. Партизансем кун çинчен пĕлнĕ те, вăрманти çул çинче засада туса, нимĕç-конвоирсене пурне те вĕлерсе тăкнă, заключеннăй пулнисене пĕр çĕрелле тартнă. Анчах вĕсенчен пысăк пайĕ ниçта та кайман—партизансен отрядне куçнă. Çав шутрах манăн Соня та пулнă. Партизансем вĕсемпе кашнинпе уйрăмăн паллашма тытăнсан—Соняпа çак манăн çĕнçул каçĕнчи „хăна" пĕр-пĕрине палласа илнĕ. Ăнсăртран пулнă тĕлпулу вĕсене питех те савăнтарнă. Хамăр районалла килсен, вĕсем хăйсен командирĕнчен мана килсе пăхма ирĕк ыйтса илнĕ...

Телейлĕ каç пулчĕ вăл пирĕншĕн. Вера пирки вуншар хут та асăнса хуйхăртăмăр ĕнтĕ, анчах ăна халь пурĕпĕр тавăрас çук та—хамăра хамăр çирĕпрех тытма тăрăшрăмăр. Ун пирки çамрăк партизан пит аван каларĕ:

— Вилнисемшĕн тавăрăпăр, чĕррисемшĕн кĕрешĕпĕр! — терĕ.

Ку сăмах мана калама та çук килĕшрĕ. Эп хальхи вăхăтра фронтра мĕн пулса иртнисем çинчен пĕлме тытăнтăм. Тата ытларах савăнтарса ячĕç мана çамрăксем: фронт пирĕнтен пурĕ те аллă-утмăл çухрăмра çеç иккен. Хĕрлĕ Çар нимĕçсене Мускав патĕнче питĕ хытă тўпкенĕ те, халь кунталла, хĕвеланăçнелле хăваласа килет мĕн!

— Темиçе кунтан Хĕрлĕ Çар пирĕн патра пулать,— терĕ Соня.—Кĕтсех тăр. Çавăн пирки пирĕн отряд кунталла тухрĕ. Эпир нимĕçсен чакмалли çулне пўлсе лартатпăр. Вара ик енчен лекет ăна: çар—лерен çапать, эпир—кунтан. Ниçта кайса кĕмелли пулмасть унăн!

— Анчах сирĕн асăрханас пулать,—хушса хучĕ унăн

юлташӗ.—Чакнӑ чух нимӗҫсем питӗ ураҫҫӗ. Аяккалларах пӑрӑнни кансӗрлемест...

— Тӗрӗс, тӗрӗс, атте, тархасшӑн сыхлан,—ӳкӗтлерӗ Соня та.—Ҫӑлӑнӑҫ ҫывӑх ӗнтӗ, чӑн юлашкинчен сана тем туса ан хӑварччӗр!

Ир енне вӗсем тухса кайрӗҫ.

Ҫавӑнтан вара эпӗ пачах урӑхланса тӑтӑм! Каллех вӑй кӗчӗ мана, кӑмӑлӑм ҫӗкленчӗ, ҫӗр ҫинче вӗҫӗмсӗр пурӑнас килекен пулчӗ. Кунӗн-ҫӗрӗн хамӑрӑн ҫӑлӑнӑҫ—Хӗрлӗ Ҫар—килсе ҫитессе кӗтме тытӑнтӑм. Тӳссе ирттернӗ асапсем те манӑҫ пулчӗҫ пӗр хушӑ.

— Сталин ҫарӗ килет...—пӗрмай аса килчӗҫ тӗрмере илтнӗ сӑмахсем.

Кӗтни сая каймарӗ! Фронт пирӗн паталла ҫывхарсах килни уҫҫӑнах сисӗнчӗ. Нимӗҫсен вӗҫӗр-хӗррисӗр обозӗсем хӗвеланӑҫнелле туртӑнма пуҫларӗҫ—пӗтӗмпех пирӗн ҫынсенчен ҫаратнӑ япаласене, темӗн те пӗр турттарса кайрӗҫ. Сывлӑшра нимӗҫ самолечӗсем мар, пирӗн самолетсем ытларах вӗҫрӗҫ. Унтан таврари ялсем ҫунма тапратрӗҫ—ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе пӗлӗт вутпа хӗртӗнсе хӗрелсе тӑчӗ... Орудисем кӗмсӗртетни ҫывӑхран ҫывӑха илтӗнчӗ...

Тата хаваслӑрах тапа пуҫларӗ чӗре!

— Халь ҫитсе тухаҫҫӗ хамӑра хӑтаракансем,—тесе тӑтӑм ҫеҫ. Эп кӑна мар, пурте ҫавӑн пекех пулнӑ ӗнтӗ, анчах ҫынсем хӑйсен туйӑмӗсем, шухӑшӗсем ҫинчен калама хӑраса тӑчӗҫ-ха. Телей ҫитес умӗн юлашки самантсенче никамӑн та ним усӑсӑр вилсе выртас килмен.

...Хӗвелтухӑҫӗнчи ялсем тӑтӑшах ҫунни, пушар ҫуттисем куллен хамӑр паталла ҫывхарни ҫеҫ хӑрата пуҫларӗ пире.

— Пирӗн яла та кӗл тӑвӗҫ-ши?..—Хӑтӑлса юлаймӑпӑр-ши епле те пулин?

Ҫук, хӑтӑласси пулмарӗ. Пӗр каҫхине—орудисем ытла та пит ҫывӑхра кӗмсӗртетме тапратсан—урамра калама та ҫук хыттӑн, хӑрушла кӑшкӑрни янраса кайрӗ:

— Пуша-ар!.. Ҫунатпӑр!..

Эп хӑпӑл-хапӑл урамалла тухрӑм. Унталла пӑхрӑм, кунталла... Турӑҫӑм! Ял харӑсах виҫ-тӑват ҫӗртен ҫунма тапратнӑ. Кӗҫех урамра кӑнтӑрлахи пек ҫутӑ пулса тӑчӗ. Мӗн тӑвас пулать?

Тӑван киле епле те пулин ҫӑлса хӑварас шухӑш мар, нимӗҫсем шкула та хыптарса яма пултарас шухӑш пырса ҫапрӗ пуҫа.

— Вӗсемшӗн пурӗпӗр... Вӗсем пирӗнне нимӗн те хӗрхенсе тӑрас ҫук!

Хам тем тума пултарас пекех, эп часрах шкул еннелле утрӑм. Ялта ҫав вӑхӑтра тата темиҫе кил пӗр харӑс хыпса илчӗҫ—нимӗҫӗн тискер алли юри, килтен киле вут тӗксе ҫӳрени питӗ аван паллӑ пулчӗ.

Утта татах хӑвӑртлатрӑм. Пур ҫӗрте те кӑшкӑрчӗҫ, йытӑсем вӗрчӗҫ, выльӑхсем мӗкӗрчӗҫ, ҫунакан йывӑҫ шатӑртатрӗ, унта та кунта ҫуртсем ишӗлсе анни илтӗнчӗ.

Эпӗ ҫав тамӑк варрипе ҫаплах малалла васкарӑм...

Сасартӑк, каласа памалла мар вӑйлӑ взрыв пулчӗ. Пӗтӗм тӗнче чӗтресе илнӗн туйӑнчӗ, сывлӑш хумӗ мана пӗр сапур ҫумне пырса ҫапрӗ. Пуҫ ҫийӗпе йывӑр чулсем шӑхӑрса иртсе кайрӗҫ, унтан пӗр хушӑ пӗтӗмпех тӗтӗм хупласа илчӗ. Мӗн пулнине тӑруках ниепле те ӑнланаймарӑм. Тепӗр урамалла тухсан тин куртӑм мӗн пулса иртнине: нимӗҫсем пирӗн чиркӗве сывлӑшалла сиктернӗ иккен. Питӗ чаплӑччӗ пирӗн чиркӳ—вӑрҫӑччен ӑна Мускавранах комиҫҫи килсе пӑхса кайнӑччӗ, тивме юрамасть, архитектура искусстви енӗпе питӗ хаклӑ вӑл, тенӗччӗ. Халь ман умра йӑсӑрланакан чул купи ҫӗҫ выртрӗ.

Чӗре тата хытӑрах пӑчӑртанчӗ манӑн.

— Шкула та пӗтереҫҫӗ... Шкулсӑр тӑрса юлӑпӑр...

Чӑнах ҫапла пулнӑ ҫав. Шкул килхушшине пырса кӗтӗм ҫеҫ—ун умӗпе пысӑк факел тытнӑ этем мӗлки чупса иртнине курах кайрӑм.

Хама астӑвайми пулнӑ вара эп ҫавӑнта. Кайран-малтан мӗн пулассине шутламасӑрах, факельщик патнелле чупрӑм. Вӑл ӗнтӗ шкул кӗтессине бензин сапса, ӑна факе-

лĕпе хыптарма пуçăнчĕ. Хăйĕн тискер ĕçне çав тери тăрăшса тăваканскер, мана асăрхамарĕ пулас вăл. Çитменнине, эп ун патнелле хыçалтан, тĕттĕм çĕртен пытăм-çке!

Шкул кĕтесси кăштах хыпса илчĕ те, çавăнтах сӳнчĕ. Нимĕç каллех тивретме тытăнчĕ. Эп тек тӳссе тăраймарăм. Ал айне лом евĕрлĕ темле тимĕр кĕрсе кайрĕ. Пур вăя пухса султăм та, факельщика пуç урлă çапрăм. Ых! терĕ кăна нимĕç,—çавăнтах ӳппĕн тăсăлса выртрĕ... Унăн çунакан факелне часрах таптаса сӳнтертĕм...

Анчах пурĕпĕр çăлма пулмарĕ шкул çуртне. Нимĕç ăна малтан шал енчен хыптарса тухнă иккен. Пур чӳречесенчен те çулăм чĕлхисем шуса тухрĕç. Тумтире хывса çапкаларăм, юрпа сапрăм—усси пулмарĕ. Куç умĕнчех хыпса кайрĕ вара вăл... Шăпăртатса куççулĕ юхрĕ манăн ун çине пăхса тăрса. Ман пурнăçри чи хаклă япала пĕтрĕ вĕт!

Ялти пушар сарăлнăçемĕн сарăлчĕ. Пур урамсем те çунчĕç. Эп таварниччен манăн кил те ним юлми çунса кайнă мĕн...

Тепĕр кунне, кăнтăрла çитеспе, пирĕн яла Хĕрлĕ Çар пырса кĕчĕ. Анчах ял вырăнне кĕлпе кăмрăк çеç хуралса юлнăччĕ.

Хамăн чи пысăк хуйхă — шкул çунса кайни çинчен эпĕ командира каласа патăм.

— Ытлах ан кулян, — терĕ вăл мана. — Нимĕçе çĕнтерпĕ хыççăн каллех пурте пулĕ пирĕн, — шкулĕ те, заводĕ те, колхозăн çурчĕсем те... Эпир вĕсене нимĕçсене хăйсене тутаратпăр. Ишĕлтерме пĕлнĕ — çĕнĕрен тума пĕлччĕр!

Çав тери лăплантарчĕç мана ун сăмахĕсем.

Ик кунтан яла йăпăртлăха кĕрсе тухнă Соняпа унăн юлташĕ те çавнах каларĕç мана.

— Телее тавăратпăрах!

Вĕсем хăйсен ирĕкĕпех Хĕрлĕ Çара кайрĕç, эп çынсем пулăшнипе çак землянкăна туса кĕтĕм те — хамăн ĕçе тытăнас, терĕм. Вăрçă пĕтессе кĕтсе ларас мар, терĕм.

Ачасене вӗрентме тытӑнтӑм вара. Мӗнле условисенче ӗҫлеме тивнине хӑвӑрах куртӑр, анчах халь ун ҫине пӑхса тӑма юрать-и?

---

Ирхине эпир Яков Иванчпа уйрӑлтӑмӑр. Ҫул тӑршшипех калаҫса пытӑмӑр ун ҫинчен. Нихҫан манмалла мар асра юлчӗ ҫав „старик № 33“. Темӗн тӗрлӗ асап, хурлӑх, мӑшкӑл витӗр тухнӑ ку ҫын, анчах хӑйӗн таса чӗрине нихӑш енчен те вараламан, ҫутӑ ӗмӗтсене ҫухатман, хӑюллӑн малалла пӑхнӑ.

— Совет ҫыннисем ҫеҫ ҫакӑн пек ҫирӗп пулма пултаραҫҫӗ ҫав, — терӗмӗр эпир. — Ун пек ҫынсене нихҫан та, никам та парӑнтарас ҫук...

*Июль — декабрь 1943.*

# Салтак чунĕ

...Сывалаканнисен палатинче эпир виççĕн выртаттăмăр. Çанталăк кунран кун ăшăтса пычĕ, майĕпе пĕтĕм тавралăх симĕсленчĕ, йывăç çулçисем те сарăлчĕç, унтан пирĕн медсанбат вырнаçнă темĕн пысăкĕш илемлĕ сад, кăпăш юрпа витĕннĕ пек, чечексем айне пулчĕ.

Каçсерен садра шăпчăк юрри янрарĕ, унта та кунта — кашни палата умĕнчех — е купăс, е патефон сасси илтĕнчĕ, хушăран юрлакансем те пулчĕç. Вăхăтран вăхăта малти линирен орудисем пени тата пуç тăрринче нимĕçсен „юнкерсĕсем" хаяррăн ĕрлесе иртни, вĕсем хыççăнах хĕрлĕ çăлтăрлă истребительсем ыткăнни илтĕнмен пулсан, пирĕн пурнăç мирлĕ вăхăтри курорт пекех туйăнмаллаччĕ. Анчах фронт пирĕнтен улт-çич çухрăмра кăначчĕ, кашни кун тенĕ пекех вăйлă артиллери налĕчĕсем туни илтĕнетчĕ, аманнисене те илсе килкелетчĕç, çавăнпа та хамăр вăрçăра пулнине манса кайма çукчĕ. Тем çинчен калаçсан та, сăмах-юмах юлашкинчен пурпĕрех çапăçусем, уйрăм çынсен паттăрлăхĕ, ăнсăртран пулнă тĕлĕнмелле эпизодсем çине пырса тухатчĕ.

Пĕр каçхине, тухтăрпа сестрасем обход туса тухса кайсан, манпа хирĕç выртакан çамрăк кăна лейтенант палата чӳречине уçса ячĕ те, сывăхрах усăнса тăракан шурă чечексем çине пăхса, чылай вăхăт шухăша кайса ларчĕ. Унтан стена çинчи пăтаран гитара илсе унăн хĕлĕхĕсене йăвашшăн янратрĕ те, ерипен юрлама пуçларĕ. Вăл пур фронтовиксем те çавтери юратакан „Землян-

кăра" текен юрра юрларĕ... Малтан хуллен çеç, çăварне кăшт кăна уçса, сăмахĕсене шăл витĕр кăларса юрларĕ, унтан çирĕпленсех, вăйлансах пычĕ унăн юрри. Юрланăçемĕн хăйĕн сăнĕ те улшăнса пычĕ, куçĕсем те темле урăхларах çутăлчĕç...

Ку лейтенант пĕтĕмпе те вунтăхăр çула çеç кайнăччĕ-ха, çапах та вăрçăри хура-шурра пурне те тÿссе иртнерме ĕлкĕрнĕ. Вăтам шкул пĕтерсен, командир пуласшăн çунниле, вăл тÿрех çар шкулне кайса кĕнĕ, анчах ик уйăх вĕренсенех вăрçă пуçланнă та — фронта лекнĕ. Кунта вара нумай курма тивнĕ ăна, тем тĕрлĕ çапăçусенче те пулнă вăл, тыткăна лексе те тарса тухнă, виçĕ хут аманса сывалнă, каллех строя таврăннă, халь вăл тăваттăмĕш хут суранланнă хыççăн выртатчĕ. Унăн çамрăк кăкрине орденпа медаль капăрлатса тăратчĕç.

Тăванĕсем пулман унăн — хăй ача çуртĕнче ÿснĕ, — çырусем пит сайра, ытти фронтсенчи юлташсенчен çеç илкеленĕ. Çав вăхăтрах унăн кăкринче сÿнми юрату çуннă...

Вунтăхăр çул! Эпир кашниех астăватпăр вăл вăхăта. Пĕр-пĕр илемлĕ хĕр — çĕр çинчи хитрелĕхе пĕтĕмпех пухса йышăннă пек курăнать, тĕнчери пĕр çын та сан пек юратма пултарас çук пек туйăнать. Çак лейтенант та, çар шкулĕнче чух хулана тухса çÿрекелесе, хаçат киоскĕнче сут тăвакан пĕр Наташăпа паллашнă та, ăна юратса пăрахса вĕçĕмсĕр хисепелеме тытăннă.

Миçе çĕр хут каларĕ-ши вăл пире ун çинчен! Хамăр унăн савнă хĕрне ĕмĕрне курман пулсан та, ăна халь эпир пин çын хушшинче те палласа илме пултараттăмăр пулĕ. Пĕтĕмпех пĕлсе çитрĕмĕр эпир. Наташăн çÿçĕсем сăмала пек хура, куçĕсем — пиçнĕ çĕмĕрт пек, сулахай питçăмарти çинче çаврака турпалли пур, шăлĕсем — ахах евĕрлĕ, калаçнă чух хĕрелсе каять... Вăтам пÿллĕ, хулпуççийĕсем тăваткăлрах, утти вĕтĕ, пуринчен ытла ăна чечеклĕ сенкер сараппан килĕшет...

Наташа пурăнакан хулара халь нимĕçсем тăнă. Вăл те

тарса хӑтӑлнӑ, те унтах юлнӑ — лейтенант ӑна пӗлмест. Тен вӑл тахҫанах асапланса вилнӗ пуль, тен партизана кайнӑ, — ним те паллӑ мар. Ҫапах та, лейтенант ӑна малтанхи пекех юратнӑ, хӗрӗн сӑнӗ унӑн куҫӗ умӗнчен ҫухалман, ячӗ ҫӑвартан кайман.

— Пӗлетӗр-и? — терӗ вӑл пире пӗринче. — Эпӗ кашни вӗри ҫапӑҫу умӗнех Наташӑн карточкине кӑларса пӑхаттӑм! Сире ку кулӑшла пек туйӑнать-и тен... А эп чӑнах ҫавӑн пек тӑватӑп. Наташа ҫине лайӑх кӑна пӑхса илетӗп те, кайран вара вӑл яланах манпа юнашар пынӑн туйӑнать, чӗрере ҫавна пула темле вӑй хутшӑнать. Пӗрре, Ржев тӑрӑхӗнче, эп хамӑн взводпа тӑшмана флангран пырса ҫапас тесе, вӑрмана кӗрсе кайрӑм... Нимӗҫсен унта засада пулнӑ мӗн. Кӑпӑрах ҫавӑрса илчӗҫ пире! Ну, эпӗ часрах круговая оборона турӑм та, юлашки патрон юлмиччен ҫапӑҫас, терӗм. Пурӗпӗрех вилӗм... Ачисем манӑн питӗ маттурччӗ, пурте сибиряксем те волгарьсем. Араслансем пекех ҫапӑҫрӗҫ ӗнтӗ, каламалли те ҫук. Фрицсене курӑк ҫулнӑ пекех ҫулаҫҫӗ. Анчах лешсем те хытӑ тарӑхрӗҫ пулмалла — пӗрисен вырӑнне теприсем тухаҫҫӗ, ҫӗр айӗнчен ҫуралса тухнӑ пекех. Пӗр сехет пычӗ ҫапӑҫу, иккӗмӗш сехет ҫине кайрӗ... Манӑн взводран пӗтӗмпе те ҫичӗ ҫын ҫеҫ юлчӗ, ыттисем е вилнӗ, е йывӑррӑн аманнӑ. Патронсем те пӗте пуҫларӗҫ. Тӑшмансен пуҫӗсем хамӑртан вунпилӗк-ҫирӗм метрта курӑнаҫҫӗ. „Русс, сдавайсь!" тесе кӑшкӑрма тытӑнчӗҫ, сӗмсӗрленсех ситрӗҫ. Пӗтмелли курӑнсах тӑчӗ... Ҫав вӑхӑтра сасартӑк Наташа синчен аса илтӗм! Неуштӑ ӑна курмасӑрах вилес пулать? Йӑпӑрт кӑна гимнастёрка кӗсйинчен унӑн карточкине туртса кӑларса пӑхрӑм ҫав. Унӑн куҫӗсемман ҫине кӳренӳллӗн пӑхнӑ пек туйӑнчӗҫ... „Ваня, парӑнатӑн-и вара?" — тенӗ пек курӑнса кайрӗ мана. Чӗре сасартӑк хыпсах тухатчӗ!... „Взво-од, за мной, в атаку!" тесе кӑшкӑрса ятӑм вара эп, ӑнран тухса кайнӑ ҫын пек, юлашки гранатӑсене унталла та кунталла — ӑҫта нимӗҫ курӑнать, ҫавӑнталла вӑркӑнтарма тытӑнтӑм... Сиксе тӑчӗ

манăн „взвод“ — хампа ултă çын! Урра кăшкăрса сиксе тăчĕ-ха! Граната хыççăн граната çурăлать, автомат кĕпçисем тытмалла мар хĕрсе кайнă... Вара — мĕн тетĕр? Тимĕр ункăран тухрăмăр вĕт! Нимĕççем тарса пĕтрĕç... Аманнисене те хăтартăмăр... Тупата çав Наташа çине пăхниех пулăшрĕ çавăн чух!

Ку сăмахсене çамрăк лейтенант пĕтĕм чĕринченех, чăнласах каларĕ, çавăнпа та, унăн калавĕнче ачалла айванлăх пулнă пулин те, эпир те ăна чăнласах йышăннă пек турăмăр. Кăшт кăна ĕненмен пек пулниех ăна хытă кӳрентернĕ пулĕччĕ. Вунтăхăр çул! Чĕре çавăн пек ун чух...

Халĕ те, аллине гитара тытса, чӳрече умĕнчи чечексем çине пăхса юрласа ларнă чух та, лейтенант Наташа çинченех шухăшланă ĕнтĕ. Эп ăна унăн куçĕсем яланхи пек мар, темле урăхла çутăлма тытăннинченех асăрхарăм. Паллах, унăн куçĕ умĕнче Наташа сăнĕ тăнă. Тен, лейтенанта унăн юррине Наташа çак чӳрече патĕнче, чечексем хушшинче тăрса итленĕ пек туйăннă пуль... Майĕпе юрласан-юрласан, вăл сасартăк вайлă аккорд илсе, хыттăннах юрласа ячĕ:

— До тебя далеко, далеко.  
Между нами снега и снега,  
До тебя мне дойти не легко,  
А до смерти — четыре шага...

Унтан тата çĕнĕ аккорд илсе, юррăн тепĕр çаврăмне ачашшăн, пысăк туйăмпа юрласа вĕçлерĕ:

— Пой, гармоника, вьюге на зло,  
Заплутавшее счастье зови.  
Мне в холодной землянке тепло  
От моей негасимой любви...

Гитара хĕлĕхĕсем янрама чарăнсан, лейтенант кăкăр тулли сывласа илчĕ те, каллех шухăша кайнă пек пулчĕ, чӳрече витĕр садалла ĕмĕтленӳллĕн пăхрĕ.

— Аван юрă! Чĕренех пырса тивет...— терĕ вăл, самаях вăхăт иртсен.

— Куççуль кăларма та пултарать çав,— терĕм эпĕ те.

— Ну, куççуль çинченех каласмăпăр,— килĕшмерĕ вăл манпа, пирус чĕркеме тытăнса,— салтакăн куççуль пулма пултараймасть... Макăракан салтак — салтак-и вăл? Кĕсел!

— Ай-ай, пит тӳрĕ кастаратăн-çке!— сасартăк калаçăва хутшăнчĕ çав вăхăтра палатăри виççĕмĕш койка çинче выртакан кăвак çӳçлĕ майор.— Салтакăн чĕри çук тетĕн-и вара эс? Ăна чунсăр пĕрене тетĕн-и?

Майора эпир çывăрать пуль, тесе шутланăччĕ, анчах вăл çывăрман иккен, чип-чиперех лейтенантăн юррине итлесе выртнă. Эпир калаçма пуçласан, тăрсах ларнă-мĕн.

— Кала-ха!— пуçĕпе лейтенант еннелле сулчĕ вăл,— салтак вара, сан шутпа, ытти çынсем пекех чĕрĕ чун мар-и мĕн? Чĕре пулмасан — Наташуна юратма пултарăттăнччĕ-и эс?

— Вăл апла та-ха...— тытăнарах тăчĕ лейтенант.

— Чĕре пур эппин салтакăн, туйăмĕсем те пур?

— Паллах, пур.

— А мĕн калаçатăн апла пулсан?

— Килĕшмест ара салтака...

— Мĕн?

— Куççуль юхтарни...

— Салтака сĕлеке юхтарни килĕшмест, куççуль кăларни мар!— Майор малти сĕтел патне пырса чĕлĕмне тивертрĕ.— Ниепле те йышăнма пултараймастăп сан теорине...

— Хăвăрăнне каласа парăр эппин.

— Калас, тетĕп çав. Эс итлесе тăр... Тем тесен те, эп санран ытларах пурăнса курнă çын...

— Хирĕçместĕп.

— Эп ĕнтĕ ватă салтак, çирĕм ултă çул хушши пĕрмай çарта служить тăватăп, тăваттăмĕш вăрçа пурăнса

ирттеретӗп. Ман чухлӗ юн курсан, тепри ухмаха ернӗ пулӗччӗ, а эп вӑт — хӑнк та тумастӑп. Чӑнах та, нервӑсем кӑштах выляççӗ ӗнтӗ, анчах вӑл ватлӑх çывхарнӑ май та пулма пултарать. Пӗр сӑмахпа калас-тӑк, ман чӗре тахçанах чул пек хытса ларнӑ, тес пулать. Çапах та, эпӗ те макӑрма пултаратӑп иккен... Тӗлӗнетӗр-и?

Майор пӗрре ман çине, тепре чӑнах та тӗлӗннӗ лейтенант çине пӑхрӗ.

— Хирӗçместӗп, вӑрçӑ этемӗн чӗрине чӑнахах та хытарать, çирӗплетет, унӑн хӗрхенӳ туйӑмӗ çухалса пырать. Ун вырӑнне — тӑшмана курайманни ӳссе, тулса хӑпарать, час-часах вӑл курайманлӑхран нимӗн умӗнче чарӑнман хаярлӑх çуралса тухать... Ку пӗтӗмпех тӗрӗс. Вӑл çапла пулмалла та ӗнтӗ. Анчах çапах та — ӗненӗр мана! — чи ватӑ фронтовиксен те тепӗр чух чунӗ кӳтсе çитет те, унӑн куçӗсем ирӗксӗрех шывланаççӗ...

Кӑвак çӳçлӗ командир вӑрӑмӑн сывласа илчӗ. Эпир ытти чух та унӑн калавӗсене питӗ юратса итлеттӗмӗр те, халь, вӑл хӑйӗн пурнӑçӗнчи уйрӑмах паллӑ пулса юлнӑ саманта аса илнине сиссе, пушшех ним шарламасӑр итлерӗмӗр.

— Иртнӗ çулхи август уйӑхӗнче çакӑн пек истори пулчӗ, — терӗ майор. — Тӗлӗнмелле истори... Нихçан та манас çук эп ӑна! Сычевка районӗнче тӑшманӑн оборонине çӗмӗрсе кӗрсе кайсан, виççӗмӗш кунӗнче эпир пӗр пысӑк ял патне çитсе тухрӑмӑр. Нимӗçсен кунта опорнӑй пункт пулнӑ. Ӑна вӗсем малтанах туса хатӗрленӗмӗн—чакмалла пулсан, часрах çӗнӗ оборона йышӑнса ларма. Шуйттан чухлӗ дзотсем, курӑнми огневой точкӑсем лартса тултарнӑ, йӗплӗ пралук карнӑ... Ну, ун пеккисене ӗнтӗ наступленисенче кашни çынах курнӑ, хӑвӑрах пӗлетӗр. Кӑпӑр-капӑрах çӗмӗрсе кӗрсе кайма çук, çамкана ыраттарма пулать! Кунта самаях тапаçланмалла пуласси — ял патне çывхарма пуçласанах сисӗнчӗ. Сӑмаха артиллерипе миномӗтсене патӑмӑр... Хӗрӗх пилӗк минут пӗр чарӑнмасӑр тӳпкерӗç вӗсем, — ялта снаряд е мина

ӳксе çурӑлман вырӑн та юлмарӗ пулӗ. Нумай çуртсем ишӗлсе анчӗç, теприсем çунма тытӑнчӗç...

— Малалла! — команда патӑм вара эп пӗтӗм батальона. Виçӗ ротӑпа виç енчен пӗр тӑрук пырса кӗме план тунӑччӗ. Ротӑсем харӑсах çӗкленчӗç, пӗр 200 метр пуль хӑвӑртах малалла шурӗç, анчах урӑх каяймарӗç — нимӗç пулемётсемпе автоматсенчен каллех тӳсмелле мар çунтарма тапратрӗ. Пуççене çӗклеме çук! Пӑр çунӑ пекех çӑваççӗ пульӑсем... А ялӗ инçе те мар ӗнтӗ, пулсан пулӗ пӗр 250 — 300 метр. Питех те çывӑх, тепре тӑрса чупмаллӑх кӑна, анчах çынсене нумай çухатма пулать. Çавӑнпа та ирӗксӗрех çӗр çумнерех лӑпчӑнса выртма тивет.

Темиçе минутран, эпир хусканманнине кура пулас, нимӗçсем кӑшт сайрарах пеме пуçларӗç. Эпӗ пуçа хам умри тӗмескерен çӳлерех çӗклерӗм те, бинокльпе пӑхса сӑнама тытӑнтӑм. Манӑн вӗсен чи çывӑхри огневой точкисене палӑртас килетчӗ. Сулахайран сылтӑмалла йӗркипе пӑхса пытӑм... Çав вӑхӑтра пӗр ишӗлнӗ арпалӑх хыçӗнчен сасартӑк хӗрарӑм чупса тухрӗ. Чип-чипер вырӑс хӗрарӑмӗ — шур тутӑрпа, хура пиншакпа, хӑрах аллипе чӗчӗ ачине çӗкленӗ, тепринпе пӗр виç тӑват çулхи ачине çавӑтнӑ. Унталла-кунталла пӑхмасӑрах, вӑл пирӗн паталла чупрӗ... Чӗре яштах турӗ манӑн... Бинокле çӗмӗрсе пӑрахас пек пӑчӑртаса лартрӑм...

Хӗрарӑм хире чупса тухсанах, нимӗçсем ӑна хыçран пеме тапратрӗç. Пур çӗртен те переççӗ, çутӑлакан пульӑсем ун çуммипех ирте-ирте каяççӗ, а вӑл çаплах чупать, çаплах чупать... Пур вӑйне пухса, каялла çаврӑнса пӑхмасӑр, пирӗн паталла чупать!

Майор хӑйӗн калавне лӑпкӑнах пуçланӑччӗ, анчах ку тӗле çитсен палӑрмаллах пӑлханма пуçларӗ. Вӑл пирус тӗпне умлӑн-хыçлӑн ӗме-ӗме илчӗ, унтан ӑна вӑштах туллалла ывӑтрӗ те, ура çине тӑрса калле-малле уткалама пуçларӗ.

— Эпӗ вут çинче выртнӑ пек выртрӑм... Хӗрарӑм хам паталла çывхарнӑ май, ӑна пит лайӑх куракан пултӑм

ĕнтĕ: унăн шурă тутри ĕнси çинелле анса ларнă, çӳçĕсем сапаланса çилпе вĕлкĕшме тытăнчĕç, питçăмартийĕсем тăрăх куççулĕ юхать... Тахăш самантра бинокле куç патĕнчен илсе хамăн боецсем еннелле пăхрăм та, вĕсем пурте, нимĕçсен пульлисенчен асăрханмаллине манса кайсах, пуçĕсене çĕкленине куртăм, — вĕсем пурте çав хĕрарăм çине куç илмесĕр пăхаççĕ иккен... Çитеет-и вăл пирĕн пата, çитеймест-и? Ах, çиттĕрччĕ, ах, ан лектĕрччĕ ăна! — тенĕ ĕнтĕ кашниех...

— Нимĕçсем çаплах печĕç, пур енчен те печĕç ăна. Пулемётсенчен çеç мар, миномётсенчен те кĕрслеттерме тытăнчĕç вĕт, сволочьсем! Акă, пĕр мини унтан инçетрех те мар вăркăнса çурăлчĕ. Хĕрарăм ӳкрĕ. Вилчĕ, пĕтрĕ, — терĕм эпĕ... Çук, вилмен иккен... Каллех тăчĕ, каллех чупа пуçларĕ. Анчах паçăрхи пек хăвăрт чупаймарĕ вăл, пĕр енчен тепĕр еннелле суланса карĕ, çавăнпа ачи те çĕр çийĕн сĕтĕрĕнсе пычĕ. Ачин пичĕ — чĕп-чĕр юн, вăл чĕрри-виллине те уйăрса илмелле мар... Хĕрарăм пирĕн пата çитесси пĕтĕмпе те пĕр çĕр метр çеç юлчĕ, анчах та вăл çак вилĕм хирĕ урлă чĕррĕнех каçса çитес шанчăк пит сахал пулчĕ çав, — нимĕçсем хытăран хытă печĕç. Вĕсем ăна епле пулсан та вĕлермех тăрăшрĕç... Вара мĕнле пулнине астумастăп, анчах та эп çак самантра хамăн куççульсем юхса аннине туйса илтĕм... Ăнланатăр-и çавна? Эпĕ, ватă салтак, хам пурнăçра тем те пĕр курнă çын, макăрса ягăм вĕт. Салтак чунĕ те чăтаймасть иккен тепĕр чух!

— Вперед, в атаку! — хытă кăшкăрса команда патăм та вара эп, хамăн боецсем вырăнтан тăни-тăманнине пăхмасăрах малалла, çав ачаллă хĕрарăм патнелле ыткăнтăм.. Эп хăйĕн еннелле чупнине курсан, вăл та ман паталла чупрĕ. Темиçе самантран эп ăна ачи-мĕнĕпех ыталаса илтĕм...

— Тăвансем, тăвансем... Юлташсем, çăлăр! — теме çеç пултарчĕ вăл, унтан, халран кайса çитнипе, çавăнтах ӳкрĕ.

— Нумайăн-и вĕсем?—кăшкăрса ыйтрăм эп хăвăртах ун патне кукленсе.

— Виççĕр пулĕ... Ултă тупă, вунпĕр пулемĕт, вунă миномĕт...—Хĕрарăм нкепле те сывлăш çавăрса илеймерĕ.

— Халех вĕсем пĕри те пулмаççĕ!—каллех кăшкăртăм эп ăна илттерме тăрăшса, мĕншĕн тесен пирĕнтен темиçе метрта кăна пысăк мина ўксе çурăлчĕ. Осколоксем хăлха çуммипех чашлатса иртсе кайрĕç.—Эс вырт çак воронкăра, килĕпĕр сан пата!

— Нимĕн те хăрушă пулмарĕ пирĕншĕн... Эп хĕрарăмпа темиçе сăмах хушнă вăхăтра манăн боецсем ялăн анкартийĕсем патнех çитме ĕлкĕрнĕ. Чарусăр хаярлăхпа штурмласа кĕрсе кайрăмăр вара эпир çак яла. Боецсем пуринчен ытларах винтовкăсенчен персе мар, штыкпа, прикладпа, çумри кинжалсемпе ĕçлерĕç. Траншейсемпе окопсенче нумай нимĕçсем аллисене çĕкленине куртăм эпĕ, анчах вĕсене пĕрне те каçару пулмарĕ. Виççĕр чĕрĕ фашистран пĕр сехет хушшинче виççĕр виле пулса тăчĕ. Ултă тупă, вунпĕр пулемĕт, вунă миномĕт—тĕп-тĕрĕссипе!—пирĕн алла лекрĕç, çав кунах нимĕçсене хирĕç ĕçлеме тытăнчĕç...

Майор калама чарăнчĕ. Пĕр вăхăт палатăра никам çук пекех пулчĕ. Эпир майорăн калавне итлесе тĕлĕннипе шарламарăмăр, вăл хăй çавăн чухне мĕнле пулнине астуса, тăруках лăпланаймасăр ларчĕ пулас. Чылайран, вăл çĕнĕ пирус чĕркесе тивертсен тин, сăмах тепĕр хут пуçланчĕ.

— Çапла вăл салтак чунĕ,—терĕ майор.—Çиелтен пăхсан çеç хытса ларнă пек туйăнма пултарать... Шаларах кĕрсе пăхсан—урăхла иккен, пачах урăхла! Вăл çавтери вăйлăн юратма та пултарать, вĕçĕмсĕр савăнма та пĕлет, хурланни те пулать унăн. Ну... курайманлăх енчен илсен—салтак чунне никам чунĕ те çитмест çав... Салтак чĕринче курайманлăх вĕреме пуçласан—тытăнса кăна тăр вара!

Каллех пӗр хушӑ шарламасӑр лартӑмӑр. Чӗрене кӗрсе ларнӑ тӗрӗс сӑмаха хирӗҫ мӗн калӑн?

— Леш хӗрарӑма кайран куртӑр-и? — ыйтрӗ унтан лейтенант. — Кам пулнӑ вӑл?

— Эпир ӑна ачи-пӑчипех госпитале ӑсатрӑмӑр, — терӗ майор. — Хӑй вӑл ҫав ялти учительница пулнӑ, упӑшки Хӗрлӗ Ҫар командирӗ пулнӑшӑн вӗлересрен хӑраса, нумай вӑхӑт нимӗҫсенчен подвалта пытанса пурӑннӑ. Эпир ҫывхарса ҫитнине курсан, — тарма шут тытнӑ... Тахҫанчченех аса илсе пурӑнтӑм эп ӑна. Эпир пӗрмай малалла кайса пытӑмӑр, нумай ялсене нимӗҫсенчен тасатса ирӗке кӑлартӑмӑр, анчах та ҫӑлӑнӑҫ шыраса пирӗн пата вилӗм витӗр чупса пынӑ икӗ ачаллӑ хӗрарӑм сӑнӗ — пӗрмаях куҫ умӗнче тӑчӗ...

Июнь, 1943.

# Юлташ пурнăçĕ

Тăшмана вĕлерни — пархатар кăтартать,
Юлташна хăтарни — мухтава кăларать.
*А. Твардовский.*

Хура вăрман çийĕпе татăк-татăк кĕрен пĕлĕтсем чупаççĕ, сивĕ çил вĕсене пĕр чарусăр хĕвеланăçнелле хăвалать.

Пĕр виçĕ кун хушши çанталăк питех те аван пулнăччĕ, çуркунне пуçланнă пекех туйăнатчĕ, унтан тепĕр хут сивĕтсе пăрахрĕ. Ура айĕнчи юр каллех хытса кăчăртатакан пулчĕ, йывăççем пасланчĕç, кайран çак сĕмсĕр çил вĕрме тапратрĕ.

Анчах вăрçă çанталăка пăхмасть, уншăн пурĕпĕр. Çил шăхăрни витĕр кунĕн-çĕрĕн йывăр тупăсем кĕмсĕртетни илтĕнет, сивĕ сывлăшра минăсем шăхăраççĕ, чи малти позицисенче пур тĕрлĕ пулеметсем таттисĕр, пĕрре чарăнма пĕлмесĕр таклатаççĕ. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе хăлхана моторсем хаяррăн ĕçлени хупласа лартать, кĕçех зенит-кăсем пеме тытăнаççĕ, пĕлĕтре пĕр харăсах çĕршер çиçĕм çиçнĕн туйăнать. Çав хушăрах пехота хăйĕн ĕçне тăвать, метр хыççăн метр малалла шăвать вăл, тăшман çывăхнерех пырса, ăна пĕр харăс вăйлăн çитсе çапма хатĕрленет...

...Вăрмантан тухсан—çатма пек тикĕс хир тăсăлать, унтан сасартăк—çÿллĕ сăрт, сăрт çинче—чиркÿллĕ пысăк ял. Чакса каякан нимĕçсем çакăнта çитнĕ те питĕ вăйлă укрепленисем туса кĕрсе ларнă. Вĕсене кунтан пĕтĕм тавралăх таçта çитиех курăнса тăнă, вĕсем пур çĕрелле

те тӳррĕн пеме пултарнă, çавăнпа та ку ял çине ниепле те тăрук пырса кĕме юраман. Н-ски полк командованийĕ куна питĕ аван ăнланнă, çавăнпа та вăл нимрен малтан тăшмана хавшатса çитермелли майсем шыранă.

Каç пулас умĕн полк командирĕ хăй патне разведротăн командирне чĕнтерчĕ.

— Кĕçĕрех вĕсен огневой точкисене хыпашласа пăхас пулать,—терĕ вăл.—Хăш тĕлте, мĕн чухлĕ... Задача—питĕ ответлă. Кама ярассине—хăвăн пĕлмелле, ответне эс тытатăн. Чухлатăн-и?

— Ăнланатăп.

— Çынсене халех хатĕрле. Кайран мана пĕлтер.

— Есть!

Разведчиксен командирĕ урăх пĕр минут та тытăнса тăмарĕ, тӳрех хăйĕн подразделенине, полковникăн приказне пурнăçлама кайрĕ.

— Акатовăн группине ярас...—шухăшласа пычĕ вăл,—Ку—унăн ĕçĕ... Шанчăклăрах пулать.

Хăйĕн ротинчи боецсене, вĕсем кашни мĕн тума ăстине, командир питĕ лайăх пĕлсе тăнă: пĕрисем—йĕлтĕрпе çилтăман кăларса чупма пултараççĕ, теприсем йывăççем тăрне пакшасем пекех улăхса каяççĕ, виççĕмĕшсем—инçетре пăнчă пек çеç курăнакан тăшман салтакне мушкă вĕçне лартса персе антарма маçтăр. Çавăнпа та вăл, çынсене разведкăна янă чух, вĕсене яланах пулас операцие шута илсе суйланă.

Кĕçĕр акă пĕр-ик километра яхăн кăкăр таран юр ăшшĕн упаленсе каймалла, çырма урлă каçмалла, унтан сăрт çине хăпармалла... Ку ĕç валли Акатов йышши сибиряксем кирлĕ. Вăл—Алтайра çуралса ӳснĕ йĕкĕт, хулпуççисем сарлака, пит çăмартинчен пӳрнепе пуссан юн пĕрхĕнессĕн туйăнать, пысăк кăвак куçĕсем иксĕлми çамрăк хастарлăхпа ялкăшса тăраççĕ. Мĕн пĕчĕкренпех—алла пăшал тытса сунарçăсем хушшинче ӳснĕскер, вăл вунултă çултах пĕччен пĕр упана хирĕç пулса, ăна хăрушă тытăçура аслашшĕн кукăр кинжалĕпе чиксе

пăрахнă. Çавăнтан вара ăна ялçыннисем „Ванька-Медвежатник“ тесе ят панă. Ваттисем ырланă, тантăшĕсем кăштах кĕвĕçнĕ, сарă хĕрсем—пĕр-пĕри сисиччен—ăмсануллăн пăхнă ун çине. Хĕрлĕ Çара каймалли вăхăт çитнĕ тĕле вăл картинсем çинчи богатырьсем пекех пулнă вара.

Кунта вăл тӳрех разведчиксем хушшине лекнĕ. Унăн хăюлăхне, вăл кирек мĕнле задачăна та тĕп-тĕрĕс пурнăçлама пултарнине кура, ăна часах сержант ятне панă,—Иван Акатов командир пулса тăнă. Çавăнтан пуçласа унăн фронтри биографийĕ тата ытларах пуянланнă. Нимрен хăрама пĕлмесĕр, вăл хăйĕн боецĕсемпе тăшманăн линийĕсем патне шăва-шăва пырса, унăн пулемĕчĕсене шарлами тунă, темиçе „чĕлхе“ тытса килнĕ, пĕр разведкăран та трофейсăр таврăнман...

Пĕринче, чăнах та, питĕ кулăшла пулса тухнă. Тăшман тылĕнчен килнĕ чух вăл сасартăк ял хĕрринчи арпалăхра иккĕн-виççĕн нимĕçле калаçнине илтнĕ.

— Тапăнас!—шут тунă Акатов. Боецсене систернĕ те, юр ăшĕнчен харăс сиксе тăрса, пĕр сассăрах арпалăха атакăланă. Ку ытла та кĕтмен çĕртен пулнипе—фрицсем хирĕç те тăрайман, разведчиксем вĕсене темиçе самантранах чике-чике пăрахнă. Унтан арпалăхăн малти стени çумĕнче çĕр айнелле анмалли шăтăк пуррине асăрханă.

— Эхе, кунта йăва пур и-ккен!—тенĕ те Акатов, шăтăкалла умлăн-хыçлăн икĕ „хăяр“*) ывăтнă.

Шалтан пĕр сас та илтĕнмен. Вара Акатовпа икĕ боец çĕр айнелле чупса аннă та, спичка çутса пăхнă. Ку—халь çеç туса çитернĕ дзот**) пулнă. Виçĕ амбразура***): пĕри-пулемёт валли, иккĕшĕ—автоматчиксем валли. Пулемётне те илсе пынă, вырнаçтарма кăна ĕлкĕреймен.

— Питĕ вăхăтлă пулнă эпир килни,—тенĕ боецсенчен пĕри, çĕнĕ спичка çутса.—А-а, хуçи те кунта!

---

*) „Хăяр“ тесе фронтовиксем пĕр йышши гранатăна калаççĕ.
**) Дзот —дерево-земляная огневая точка.
***) Тупăран е пулемётран пемелли ансăр шăтăк.

Пурте вăл кăтартнă çĕрелле пăхнă. Алăк патĕнчи кĕтесре офицер вилли саркаланса выртнă иккен. Унпа юнашар—хулăм кăна хура чемодан тăнă.

— Пурлăхĕ-мĕнĕпех пурăнма куçнă мĕн те...—кулса илнĕ тепĕр боец, чемодана çĕклесе пăхса.—Йывăр, ача! Уçса пăхасчĕ, мĕн тултарнă-ши?

— Вăхăт мар халь!—чарнă ăна Акатов.—Васкас пулать. Тĕрĕслекенсем сирĕнсĕрех тупăнĕç.

Вăл офицер кĕсъисенчи хутсене, парабеллумне*) кăларса илнĕ те, дзотра пулнă пур трофейсене те боецсене çĕклеттерсе, тул çутăлнă çĕре полка çитнĕ. Рота командирне рапорт панă хыççăн, вĕсем иккĕшĕ штаба кайнă. Штабра малтан хутсемпе хĕçпăшалсене пăхнă, унтан Акатов хăй аран çĕклесе çитернĕ офицер чемоданне уçнă. Сĕтел тавра пухăннисем ун çине пысăк интереспа пăхса тăнă: чăнах та, мĕн тултарнă-ши çав тери нумай?

Анчах çиелти япалана туртса кăларсанах, пурте ахăлтатса кулса янă: вăл самаях вараланнă пĕчĕк ача одеялĕ пулнă...

Унтан хĕрарăм сараппанĕ тухнă. Ун айĕнче—çичĕ мăшăр пурçăн чăлха, темиçе салфетка, çӳллĕ кĕлеллĕ туфли, тăвата кăкăр çакки,ултă кĕмĕл кашăк, мулкач тирĕнчен çĕленĕ кивĕ муфта, пĕр ярăм шăрçа, тăвата вилка, икĕ тутăр, хĕрарăм шĕлепки...

Штабри çынсем ăнтăхса кайса, варĕсене тытса кулнă.

— Ну-и, трофей! Вот тăк номер!..

— Хĕрарăм япалисен магазинĕ ку!

— Ăçтан кăна пухса çитернĕ...

— Тиркемен вара, нимĕн те!

— А вăрă хăçан тиркесе тăни пур?

— Мĕн алла лекнĕ...

Акатов малтанах нимĕнле мар пулса тăнă,—темшĕн, çынсем унтан хăйĕнчен кулнă пек туйăннă ăна. Юрать—ытти трофейсем пур, атту, пĕр çак чемодана çеç сĕтĕрсе

---

*) Нимĕçсен револьверĕ.

килнĕ пулсан, мĕн курмаллаччĕ-ха? Кипке пухса çӳрекен барахольщик ятне илтмеллеччĕ-и?—Вара кулсах тăна кăларатчĕç...

Анчах ку тахçанах иртсе кайнă ĕнтĕ, унтанпа Акатов татах нумай хутчен тăшманăн позицийĕсем хушшине хăюллă рейдсем тунă, калама та çук паха сведенисем пуха-пуха тавраннă. Полкра ăна халь чи пултаруллă разведчик, тесе хисепленĕ. Нумай пулмасть, И. шывĕ хĕрринчи çапăçу хыççăн, правительство наградине илме тивĕçлĕ боецсемпе командирсен спискине тунă чух, пĕрремĕш вырăнта унăн ячĕ пулнă.

...Рота командирĕ ун патне вăл землянка умĕнче, йывăç кăкĕ çинче, çыру вуласа ларнă чух пырса тухрĕ.

— Здорово, Акатов юлташ!

Разведчик ăна хирĕç вăштах сиксе тăрса саламларĕ.

— Мĕн вулатăн?

— Килтен çыраççĕ...

— Савни пулĕ-ха, пĕр-пĕр сенкер куçлă Нюра, е Дуся-Муся?—куçне хĕссе илчĕ лейтенант. Акатов та кулса ячĕ.

— Унсăр та май килмест, лейтенант юлташ, кашни çыннăнах чĕре пур, мĕн тăвăн!

— Тĕрĕс, тĕрĕс...

Лейтенант унпа юнашар ларса чĕлĕмне чĕртсе ячĕ те, хăй ун патне мĕншĕн килнине каласа пачĕ.

— Питĕ ответлă ĕç,—терĕ вăл,—полковникпа штаб начальникĕ хăйсем чĕнсе калаçрĕç манпа. Нумайăн кайма кирлĕ мар, пилĕк-ултă çын пулсан—çитет. Ăçта юлташусем?

— Кунтах, канаççĕ,—пуçĕпе землянка еннелле кăтартрĕ Акатов. Унăн пичĕ çинчи кулă çухалчĕ, куçĕсенче темле урăхла çутă ялкăшма тытăнчĕ...

— Халех хатĕрленĕр,—терĕ лейтенант.—Эпĕ батальон штабĕнче пулатăп.

Акатов тăчĕ те землянкăна кĕрсе кайрĕ. Темиçе минутран унпа пĕрле шурă халатсем тăхăннă пилĕк боец тух-

рĕç. Пиллĕкĕшĕ те пĕр пек—патвар, вăйлă, çилпе кăштах куштăрканă хĕрлĕ сăнлă йĕкĕтсем. Кашниех—автоматпа, халат айĕнчи пиçиххирен икшер-виçшер граната çакнă, хĕвĕсене тата тепрер запасной диск чикнĕ.

— Эпир хатĕр!—кайса пĕлтерчĕ Акатов хăйсен командирне.—Задача парасса кĕтетпĕр...

Лейтенант вĕсене машинăсем валли тунă хӳтлĕхе илсе кĕртрĕ те кĕçĕрхи разведкăра мĕн тумалли çинчен ăнлантарма тытăнчĕ. Пурин те куçĕсем карттă çине тăрăнчĕç.

— Эсир тĕрĕс сведенисем илсе килнинчен пирĕн çитес наступлени ăнăçлă пуласси килет,—терĕ лейтенант.— Кашни тĕмескене, кашни лупашкана „хыпашласа“ пăхма тăрăшăр. Блиндажсем, окопсем хăш тĕлте вĕсен, пулемĕтсемпе орудисене ăçта лартнă, укрепленисем хăш тĕлте начартарах—пурне те пĕлес пулать...

— Ăнланатпăр, лейтенант юлташ.

— Епле асăрханмалли майсене хăвăр пĕлетĕр. Астăвăр, кирлă мар жертвăсем ан пулччăр. Пирĕншĕн—кашни çын хаклă!

— Пĕлетпĕр, пирвайхи хут мар вĕт...

— Ну, телей пултăр!

Разведчиксем хăйсен командирĕпе сывпуллашрĕç те вăрман хĕрринелле кайрĕç. Лейтенант вĕсем çине кăмăллăн пăхса юлчĕ.

— Кусем ахаль тавăрнас çук... Вĕсем темле йывăр задача парсан та—пурнăçа кĕртеççех!

Вăрман хĕрринчи юлашки йывăçсем айĕнче Акатов боецсене чарса тăратрĕ.

— Авă,—терĕ вăл, чылаях инçетри сăрт çинче курăнакан юрпа витĕннĕ çуртсем çине кăтартса,—пирĕн çавăнта çитмелле ĕнтĕ. Сăрт патнерех çитиччен пурте пĕрле каятпăр, унта вара виçĕ пая уйрăлса каймалла пулать. Эпир Быстровпа иксĕмĕр сăрт çамкине тӳрех хăпаратпăр, Петровпа Файзуллин — сылтăмран каяççĕ. Симонянпа Ищенко — сулахаярах... Кайран хăш тĕлте

пухӑнмаллине—ҫывӑхарах пырсан палӑртӑпӑр. Ыйтмаллисем пур-и?

— Ҫук, ӑнланнӑ ӗнтӗ,—ответ пачӗҫ боецсем.

— Ну, апла пулсан, юлашки хут чӗлӗм туртӑр та—шӑвӑнӑпӑр, вӑхӑта сая ярас мар.

Лӑпсӑркка чӑрӑш айӗнче махорка тӗтӗмӗ йӑсӑрланма тытӑнчӗ. Табакпа „аппаланман" Акатов вӑл хушӑра маларах тухрӗ те, пӗр йывӑҫ тӑрне ҫурри таран хӑпарса, бинокльпе пӑхма пуҫларӗ...

Каҫхи кӑвакрах тӗтре витӗр вӑл ялти хӑшпӗр пӳртсенчен шурӑ шӗвек тӗтӗм тухнине ҫеҫ асӑрхарӗ, урӑх нимӗн те курӑнмарӗ ӑна.

— Юрӗ, патне ҫитсен курӑпӑр,—шухӑшларӗ те вӑл, ҫӗре анса боецсене хускатрӗ.

Вӗсем пӗрерӗн-пӗрерӗн хирелле тухса, кӑпӑшка тарӑн юр ӑшне выртрӗҫ...

Акатов хӑй пуринчен малта упаленсе пычӗ, кашни 40—45 метртанах юлташӗсем ҫине ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхрӗ. Каҫ пулнӑ май ҫанталӑк татах сивӗтрӗ, вӗсене хирӗҫ кассӑн-кассӑн ҫил вӗрсе тӑчӗ, анчах ҫынсем шӑнма мар—хӗрнӗҫемӗн хӗрсе пычӗҫ. Пӗр пилӗкҫӗр метр пек кайсан, Акатов кӑштах канас тесе чарӑнчӗ те, месерле ҫаврӑнса выртрӗ (юр ӑшӗн ҫул туса упаленсе пыма питӗ йывӑр ҫав!).

Тӳпере пӗр ҫӑлтӑр та курӑнмасть, сӑнсӑр кӑвак пӗлӗтсем пӗтӗмпех хупласа лартнӑ иккен. Ҫавӑнпа кӗҫӗр уйра та питӗ тӗттӗм...

— Ку аван-ха пирӗншӗн... Хамӑра палӑртмасӑр ҫитме шанчӑк ытларах...—ҫӑмӑллӑн сывласа илчӗ Акатов.

Унпа юнашар ефрейтор Быстров пырса выртрӗ. Ку ҫын—Акатовӑн чи ҫывӑх тусӗ пулнӑ. Истра хулине нимӗҫсенчен каялла туртса илнӗ чух ун пурнӑҫне ҫӑлнӑ—Акатова ҫурӑмӗнчен штыкпа чикме чупсах ҫитнӗ нимӗҫе хӑйне чиксе пӑрахма ӗлкӗрнӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара вӗсем хушшинче нихҫан пӗтес ҫук туслӑх тӗвӗленнӗ, вӗсем пӗр-пӗринчен ниҫта та уйрӑлман, пӗри ӑҫта кайнӑ—тепри

те çавӑнтӑх пынӑ. Аслӑ командирсем те вӗсене уйӑрма тӑрӑшман, мӗншӗн тесен вӗсем пӗрле пулни ӗçе усӑ кӳнӗ çеç.

— Хыçалтисем килеççӗ-и?—ыйтрӗ Акатов.

— Пурте кунта,—терӗ Быстров.—Ма чарӑнтӑр?

— Эсир хашкама ернӗ пуль, терӗм...

— Ну-у, калаçатӑр кирлӗ мара!

— Апла пулсан—кайӑпӑр.

Каллех малалла шума тытӑнчӗç. Текех Акатов ял умӗнчи сӑрт патне çитиччен те чарӑнмарӗ. Кунта варэ вӗсем пӗр вӑхӑт канса выртрӗç. Акатов хӑйсен задачине тата тепӗр хут астутарса, камӑн ӑçталла кайса мӗн тумаллине кӑтартса пачӗ те, кайран пурне те çав лупашкана пухӑнма хушрӗ.

Боецсем икшерӗн ик еннелле шуса кайса куçран çухалсан, Акатовпа Быстров та сӑрталла хӑпарма тытӑнчӗç. Ерипен, чарӑна-чарӑна итлесе, асӑрханса хӑпарчӗç вӗсем. Халлӗхе ниçтан та пӗр сас та илтӗнмерӗ. Таврари ялсем, вӑрмансем, сарлака тикӗс уй-хирсемпе çырмасем нимӗнпе хускатман шӑплӑхпа тулнӑ вӑл каç. Анчах ку шӑплӑхултавлине туссем питӗ лайӑх пӗлнӗ,—хӑйсенчен аллӑ-утмӑл метртах тискер тӑшман ларнӑ-çке, вӑл кашни самантрах çак лӑпкӑ тавралӑха вилӗм сапма тытӑнма пултарнӑ...

Йӗплӗ пралук патне çитсен, вӗсем шалалла кӗмелли май шырама пикенчӗç. Икçӗр метра яхӑн упаленсе пычӗç пралук хӗррипе. Пӗр лупашкаллӑрах вырӑнта вара самаях пысӑк шӑтӑк тупӑнчӗ те, туссем ялалла кӗрсе кайрӗç.

...Питӗ хӑюллӑ рейд пулчӗ ку. Тӑшман йӑва çавӑрса ларнӑ ял тӑрӑх разведчиксем виçӗ сехет ытла сӑнаса çӳрерӗç. Пӗр çуртран тепӗр çурт патне, пӗр йывӑçран тепӗр йывӑç кутне куçса пырса, „хыпашламан“ пӗр кӗтес те хӑвармарӗç. Ӑçта мӗн пуррине, ӑçта мӗн вырнаçтарнине пӗтӗмпех пӗлекен пулса çитрӗç. Тӑшман кунта чӑнах та питӗ çирӗппӗн кӗрсе ларнӑ иккен,—темӗн тӗрлӗ укрепленисем туса, хӑй çӗр ӑшне чакаланса пытаннӑ,

унтан ăна хăватлă çулăмпа çеç ĕнтсе кăларма май пулнă. Хăш тĕле ытларах çунтармалли—халь паллă ĕнтĕ!

Акатовпа Быстров ялăн тепĕр хĕрнелле шуса кайрĕç.

— Вĕсем пире ку енчен кĕтмеççĕ, кунта хурал сахалтарах пулма кирлĕ,—тесе шут турĕç вĕсем.

Анчах кунта та пралук карнă мĕн.

— Круговая оборона тунă, халерсем,—терĕ Акатов.— Хытă хăраççĕ иккен!..

— Чĕрисем вырăнта мар ĕнтĕ, паллах...—ун шухăшне çирĕплетрĕ Быстров.

Сасартăк, туссем мал енчен хăйсем патнелле икĕ çын килнине курах кайрĕç. Çав самантрах, вĕсем пĕр сарай çумне, хўтте йăпшăнчĕç. Лешсем Акатовпа Быстров çинеллех пыраççĕ. Кăшт тăхтасан, лайăхах асăрхама май пулчĕ: иккĕшин те кăкрисем умĕнче автоматсем çакăнса тăраççĕ. Паллах—кусем нимĕç салтакĕсем...

— Мĕн тăвăпăр?—тусĕнчен шăппăн ыйтрĕ Быстров.

— Капут тăвăпăр, вот мĕн,—терĕ Акатов, çăмат кунчи ăшне чикнĕ штыка туртса кăларса.—Сан кинжал пур-и?

— Çук...

— Апла пулсан, автоматран магазинне уйăр та, приклалпа çапма хатĕрлен. Хамăр тĕле çитсен—эпĕ малти çине сиксе ларатăп, эсĕ—кайрине тирпейле... Асту, ĕçе шавсăр, питĕ хăвăрт тăвас пулать,—вĕрентрĕ Акатов.

— Пĕлетĕп...

Урăх вĕсем пĕр сăмах та чĕнмерĕç, кашниех хăйне-хăй çак темиçе самантран пулмалли тытăçăва хатĕрлерĕ. Кĕçĕр вĕсем нимĕçсене чылай куркалаnă, анчах вĕсене пĕрне те тивме май килмен—ыттисем сиссен вара пĕтĕм разведка харама кайма пултарнă. Халь ĕнтĕ, никам курман çĕрте, çак икĕ „фрица“ ниепле те тĕрĕс-тĕкĕллĕн иртерсе ярас килмест. Ытла та аллах пырса кĕнĕ-çке вĕсем!

Нимĕçсем вĕсен тĕлне çитрĕç... Иккĕшĕ те, шăннипе, кукрăлсах ларнă, аллисене хире-хирĕç çаннисем ăшне чикнĕ, йывăç тĕплĕ кĕççе-атăсемпе шаклаттарса пыраççĕ...

Акатов чавсипе Быстрова кăшт кăна тĕртрĕ те, малти нимĕçĕ çине араслан пек сиксе ларчĕ. Унпа пĕрлех, Быстров та кайрине пусса антарса çăварне хупларĕ. Ĕç калама çук хăвăрт, темиçе самант хушшинчех пулса иртрĕ: нимĕççем пĕр сас та кăлараймарĕç, ĕмĕрлĕхех кукрăлса выртрĕç. Туссем часрах вĕсен кĕсйисенчи хутсене кăларса илсе, автомачĕсене çакрĕç те—хирелле шăвăнчĕç.

— Трофей те пулчĕ,—терĕ Акатов, йĕплĕ пралук хыçне тухсан.—Атту эп кĕçĕр пушă алăпах таврăнмалла пулать пуль, тесе хăранăччĕ.

— Ну-у, эпир трофейсăр таврăнатпăр-и вара!—пуçĕпе сулса илчĕ Быстров.

Халь туссем хир тăрăх пыраççĕ. Тепĕр икçĕр-виççĕр метр кайсан сылтăмалла пăрăнмалла та,—çырма пулать,—унта вĕсене ытти юлташĕсем паçăрах кĕтеççĕ пуль ĕнтĕ. Епле пулнă-ши вĕсен ĕçĕ? Мĕн-мĕн курса тухнă-ши вĕсем?

Çил çаплах вĕрет, анчах халь хирĕç мар, çурăмран тĕртсе пырать вăл. Юр тарăн пулин те, хирпе пыма паçăрхинчен нумай çăмăлтарах, çитменнине вĕсем пĕрмаййă упаленсе мар, вырăнĕ-вырăнĕпе утсах пыраççĕ. Часах юлташсемпе тĕлпулса, тепрер сехет-иккĕрен полка, ăшă землянкăна çитсе, тăраничченех канма пулать... Çапла шухăшсемпе, çĕкленнĕ кăмăлпа, вĕсем ял вĕçĕнчи юлашки çуртсем тĕлĕпе иртрĕç.

— Чим!—терĕ Акатов, сасартăк кукленсе ларса.—Куратăн-и? Пăх-ха...

— Мĕн?

— Авă, малта...

Быстров тинкеререх пăхрĕ. Ялтан çырма еннелле умлăн-хыçлăн пĕр 25—30 çын утать иккен.

— Е разведкăна, е налёт тума каяççĕ,—пăшăлтатса илчĕ Акатов.—Мĕн те пулин тăвас пулать, тусăм... Мĕнле шутлатăн? Курса тăнă çĕртех—ашкăнма памастпăр пуль! Тăн кўртер пăртак.

— А мĕн тăвапăр?

— Атя, вĕсен çулне пӳлетпĕр! Засада тăватпăр та — автоматсенчен... Питĕ чаплă номер пулать!

Ку шухăшпа Быстров пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ. Вĕсем часрах юр ăшĕнчен сиксе тăчĕç те ял пуçĕнчен тӳрĕрен-тӳрĕ çырма хĕрринелле чупрĕç. Çул тăрук сылтăмалла пăрăнса аннă çĕре çитсен, вĕсем çул хĕрринчи канава, пĕр йывăç тĕмми хыçне чакаланса кĕрсе выртрĕç.

— Ман командăсăр нимĕн те ан ту, — терĕ Акатов. — Малтан обстановкăна хакласа пăхас пулать... Пересее — эп персен тин пер.

Нимĕçсем нумай кĕттермерĕç. Туссем канава вырнаçса выртсан пĕр вунă-вунпилĕк минутранах, вĕсем çул кукрине кĕпсĕртетсе çитрĕç. Акатов пĕрерĕн-пĕрерĕн шутласа выртрĕ вĕсене: 26 салтак. Пурте автоматсемпе. Паллах, пирĕн позицисем çине налёт тума каяççĕ!

— Пуçлар! — терĕ те пĕр хушă сывламан пек выртнă Акатов, спусковой крючок çине пусрĕ. Быстров та умлăн-хыçлăн темиçе черет кăларса ячĕ. Вара çавăнтах çичсакăр нимĕç кĕлетки çул çине тĕшĕрĕлсе анчĕ, нумайĕшĕ, ыратнипе, кăшкăра-кăшкăра выртаççĕ. (Сăмах майĕн каласан — суранланнă нимĕçсем яланах пусма тытнă сыснасем пек çухăраççĕ).

Акатовпа Быстров часрах çулăн тепĕр енне чупса каçса, ăнран тухса кайнă нимĕçсене таттисĕр çунтарма тапратрĕç. Тăруках персе ӳкереймен нимĕçсем ăçта кирлĕ унталла саланса кайрĕç. Анчах та вĕсем маскировочный халатсемсĕр пулнипе — юр çинче пурĕпĕр палăрчĕç, вĕсене тĕллесех пеме май пулчĕ. Хăйсене хыçран, хăйсем йышăннă ял енчен пересее ниепле те кĕтменскерсем, вĕсем малтанах ним тума пĕлмерĕç: кам перет, ăçтан переççĕ, ăçталла тарса çăлăнмалла? Пирĕн разведчиксем çав хушăра позицисене темиçешер хут та улăштарса, вĕсене нумайĕшĕсене пере-пере пăрахрĕç.

Çапах та — вĕсене те асăрхарĕçех, чĕррĕн юлнисем унтан та кунтан пеме тытăнчĕç. Сывлăш автоматсем

шатăртатнипе тулса ларчĕ. Çав вăхăтрах ял енчен мина çинçен улатса килни илтĕнчĕ, вăл çул хĕрринчен инçетре те мар ўксе шартлатрĕ. Пĕрин хыççăн—тепри, тата тепри... Пĕр харăсах темиçе пулемĕт ĕçлеме тытăнчĕ, унта та кунта орудисем кĕрслетрĕç...

Нимĕçсен станĕнче паника пуçланчĕ...

Разведчиксем, ним çине пăхмасăрах, вырăнĕсене пĕрмай улăштарса, хăйсен ĕçне турĕç. Юр çинче хускалмасăр выртакан кĕлеткесем йышлансах пычĕç.

Темиçе мĕлке çырманалла чупнине асăрхаса, Акатовпа Быстров, чупнă çĕртех пере-пере, вĕсем хыççăн ыткăнчĕç. Каллех виç-тăватă нимĕç ўкрĕç, пĕр-иккĕшĕ кăлтăрмаç пек йăванса анса кайрĕç... Быстров самантлăха чарăнса тăчĕ те вăрăм черет кăларса ячĕ. Анчах тăма кирлĕ мар мĕн—ун çывăхĕнчех йывăр мина ўксе çурăлчĕ. Быстров ўкрĕ, ун хăлхисем ним илтми хупланса ларчĕç... Ун патне Акатов чупса пычĕ.

— Мĕн пулчĕ? Лекрĕ-и?—тесе кукленчĕ вăл ун патне.

Быстров çĕкленесшĕн пулчĕ, анчах çавăнтах йывăррăн йынăшса ярса, каяллах ўкрĕ.

— Пĕтрĕм пулас...

— Ан лĕпĕртет! Пулма пултараймасть!—хыпкаланса илчĕ Акатов.—Каяс пулать вĕт, кунта вĕсем халех подкреплени яма пултараççĕ. Пеме те чарăнмаççĕ ав...

— Пултарай... мастăп...—татах йынăшса илчĕ Быстров.—Урасем... сылтăм алă... Эс пĕчченех кай, пĕлтер унта мĕн курнине...

— Ну, ку сăмаха пăрах эсĕ!—çилленчĕ Акатов.—Çăлăнсан—иксĕмĕр те çăлăнатпăр, пĕтмелле пулсан та—пĕрле!

Вăл ура çине тăчĕ те хăвăрт кăна йĕри-тавралла пăхса илчĕ. Хайсем пере-пере антарнă нимĕçсем юр çинче ним хускалмасăрах выртаççĕ иккен, хăшĕсем пулăшу ыйтса хуллен кăна нăйлатаççĕ. Ялти пулемĕтсем халь те лăп-ланман, çаплах шатăртатаççĕ, хушшăн-хушшăн миномĕт-сем кĕрслетсе илеççĕ.. Пĕрин хыççăн тепри, пĕлĕтелле

икĕ ракета чашкăрса хăпарса кайрĕç. Уйра кăнтăрлахи пекех çап-çутă пулса тăчĕ. Кунпа пĕрлех, тăшманăн пулемĕчĕсем тата хытăрах ĕçлеме тытăнчĕç. Çутăлакан пульăсем разведчиксен çуммипех шăхăрса иртсе юр ăшне тăрăнаççĕ.

Акатов часрах выртрĕ.

— Сăпса йăви хускалчĕ... — шухăшларĕ вăл, — шăвас пулать, текех кунта ыррине кĕтме çук...

Вăл каллех йывăррăн сывласа выртакан тусĕ патне пĕшкĕнчĕ.

— Ну, карăмăр, Гриша... Тăхтаса тăма юрамасть, çырмана анса суранусене çыхăпăр та—шăвăпăр...

Быстров ăна хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ,—вăл чăнах та халран кайнă-мĕн, халь хăй тĕллĕн нимĕн те тума пултарайман.

Акатов ăна ерипен çĕклесе çурăмĕ çине хучĕ те, юр ăшне пĕçĕ кăкĕ таранах путса, темиçе утăм малалла ярса пусрĕ. Анчах ял енчен пĕлĕтелле каллех ракетăсем пĕрхĕнсе хăпарчĕç, çутăра нимĕçсем пулемётсенчен сапма тытăнчĕç. Çавăнтах выртмалла пулчĕ.

— Тытасшăн, сволочьсем...—ылханса илчĕ Акатов.— Ну, эсир кун пек хăтланатăр пулсан, эпир урăхла тăвăпăр, пире хăратаймăн!

Вăл часрах маскхалат айĕнчи шинельне хывса юр çине сарчĕ те, тусне ун çине вырттарчĕ. Унтан пĕр автоматне хăй мăйĕнчен çакрĕ, виççĕшне—тусĕ çумне вырнаçтарчĕ.

— Ну, чипер вырт, Гриша, тӳс епле те пулин!

Çак сăмахсемпе шинелĕн пĕр аркинчен тытса, вăл Быстрова çырманалла туртса анса кайрĕ. Çырма тĕпне çитсен, васка-васках, суранĕсене унăн-кунăн çыхкаларĕ: ӳчĕпе тумтирĕ те пур çĕртен те юнланса пĕтнипе, тĕттĕм çĕрте суранĕсене лайăххăн тупса палăртма пулмарĕ çав. Анчах çакна питĕ лайăх ăнланчĕ: унăн тусĕ питĕ йывăр суранланнă, ăна часрах медпункта çитерес пулать...

Ял енчен çаплах пулемĕт сассисем илтĕнеççĕ, пуç тăр-

ринчен пульӑсем шӑхӑра-шӑхӑра иртеççĕ. Акатов ытти юлташĕсем çинчен аса илчĕ, анчах калаçса татӑлнӑ вырӑна каясси çинчен халь шухӑшламалли те пулмарĕ. Быстрова сĕтĕрсе кайма йывӑр, кунта пĕччен хӑварма— каллех юрамасть.

— Тӳрех полка каяс,—шут турĕ те вӑл, Быстрова канлĕрех майласа вырттарчĕ.

— Гриша, ну, мĕнле эс? Питех ыратать-и?

— Пуç çаврӑнать...—вӑйсӑррӑн ответ пачĕ Быстров.

— Тен, эрех ĕçĕн пӑртак? Флягӑра пур манӑн...

— Çук, кирлĕ мар... Ху ĕç, сана вӑй кирлĕ...

— Эс ман çинчен ан калаç-ха, эп сывӑ! Сана пӑртак пулӑшмĕ-ши, тетĕп.

— Çук, çук... Каяр луччӑ... май пулсан...

— Лӑпкӑн вырт эппин.

Акатов хӑйĕн тусĕ выртакан шинелĕн аркинчен çирĕппĕн тытса лартрĕ те сӑрталла чакаланма тытӑнчĕ. Сӑрта хӑпарса çитсен, сывлӑш çавӑрма, пĕр-ик минут пек канса выртрĕ, шинель çинчен шуса анма пуçланӑ юлташне тӳрлетсе вырттарчĕ, унтан тӳрех вӑрман çине çул тытрĕ. Темиçе хутчен те чарӑнса, тусне тĕрĕслесе пӑхрĕ: лайӑх выртать-и вӑл, сывлӑхĕ мĕнле... Малтанах Быстров хӑйĕнчен ыйтнисене хирĕç ответ паратчĕ, унтан (пачах халран кая пуçларĕ пулмалла)—калаçми пулчĕ. Акатова ку питех те пӑлхатрĕ, вӑл темрен-тем пуласран хӑраса, мĕнпур вӑйĕпе сĕтĕрчĕ ӑна вӑрман еннелле. Епле пулсан та, ӑна часрах медпункта çитерсе, тухтӑрсен аллине памалла. Хӑй тарласа лачкам шыва ӳкрĕ, чĕри унӑн мӑлатук пек шаккаса тӑрать, пуçĕ пĕçерекен пулса çитрĕ...

Акӑ ĕнтĕ вӑрман та инçе мар. Пулсан пулĕ пĕр икçĕр метр—унтан ытла мар. Акатов юлашки вӑйĕсене пухсах туртрĕ хӑйĕн тусне.

— Çитетпĕр, часах çитетпĕр...

Анчах шӑпах чарӑнмалла пулчĕ. Хыçалтан ракета çутатрĕ те, харӑсах—инçетрен те мар пек—нимĕç пулемĕчĕсем усал йытӑсем пек вĕрме тытӑнчĕç.

— Чăк-чак! чăк-чак!—пыра-пыра тăрăнчĕç пульăсем юр ăшне.

— Сăртран пересçĕ кусем... Вилесем патĕнчен...—тавçăрса илчĕ Акатов.—Начар-ха ку, лекме те пултараты!

Обстрел айĕнчен тухас тесе, вăл сылтăмалла пăрăнса кайрĕ. Уссиех пулмарĕ—нимĕçсем халь миномётсенчен пеме тытăнчĕç. Пирвайхи мина туссенчен пĕр улт-çичĕ метр малта çурăлчĕ, иккĕмĕшĕ—хыçалта... Вĕсем çине малтан та, кайран та юр сирпĕнчĕ.

— Вилкăна лекрĕмĕр! Вот, сволочьсем...—шăлĕсене çыртса лартрĕ Акатов. Шинель аркинчен тата хытăрах тытрĕ те, тата сылтăмарах кайма тытăнчĕ. Çав вăхăтра пуç тăрĕнчен тепĕр мина шăхăрни илтĕнчĕ. Самантранах вăл тăмана вĕçнĕ пек лăпăртатса, разведчиксемпе юнашар юр ăшне пашт! пырса ўкрĕ...

Пулать те çав этемĕн телей! Мина çурăлмарĕ. Юр ăшне пырса ўксенех вăл хăйне тавра çилтăман кăларса çаврăнчĕ, унтан вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пырса, юлашкинчен темиçе хут „фăр-р... фăр... фр..." туса илчĕ те лăпланчĕ. Анчах халь Акатов ниçталла кайма пĕлмерĕ, тусĕ çумне йăпшăнса выртрĕ. Ыванса çитнипе, питĕ йывăррăн хашкаса сывларĕ вăл.

— Ваня...—хуллен кăна сас пачĕ çав хушăра Быстров. Минăсем шартлатнипе кăштах ăна кĕчĕ пулмалла.— Ваня...

— Мĕн?—пуçне кăштах çĕклерĕ Акатов.

— Кай эсĕ... Манпа ĕç тухас çук, хăвна çăл. Кунта иксĕмĕр те пĕтсен—разведка сая каять... Ав, епле перет вăл... Кай, ман çине ан пăх...

— Ухмах эсĕ,—терĕ ăна хирĕç Акатов,—юлташа пăрахса хăвара тăп пулать вара. Çитетпĕр ĕнтĕ...

— Асту, Ваня... Чăнах кай...

— Ним те ан шарла! Выրт чипер.

Минăсем сулахаярах ўкме тытăннине кура, Акатов каллех вырăнтан хускалчĕ. Халь вăл вăрмана çитиччен те чарăнмарĕ, час та часах хăлха çуммипе шăхăрса ирте-

кен пульӑсем ҫине те пӑхмарӗ. Вӑрмана пырса кӗрсен тин пӗр вата юман хыҫӗнче кӑштах канса тӑчӗ те, татах малалла туртса кайрӗ хӑйӗн тусне...

Пилӗк сехет тӗлӗнче вӑл ӑнран кайна Быстрова хӗрлӗ хӗрес ҫакнӑ землянкӑна илсе ҫитерчӗ.

— Тем пулсан та—сыватасчӗ!—терӗ вӑл дежурнӑй фельдшӗра ывӑнса ҫитнипе аран сывласа.—Каччи пит маттур, разведчик...

Фельдшерпа санитарсем Быстрова часрах укол турӗҫ, суранӗсене тасатрӗҫ, эмел сӗрсе ҫыхрӗҫ—Быстров хускалмарӗ, вилнӗ пекех выртрӗ.

— Начар...—терӗ фельдшер, унӑн алтунинчи юн тымарне чылайччен тытса тӑрса.—Пульс питӗ вӑйсӑр, юн нумай ҫухатнӑ...

— Мӗн тӑвас пулать-ха эппин?

— Пит те васкавлӑн медсанбата илсе каяс пулать, эпир кунта текех ним тума та пултараймастпӑр...

Акатов урӑх нимӗн те ыйтмарӗ, тӳрех алӑк патнелле ҫаврӑнса утрӗ.

— Эсир ӑҫта каятӑр?—ыйтрӗ унтан фельдшер...

— Лаша кӳлме!

— Пирӗн хамӑрӑнах лашасем пур—кӳлнипех тӑраҫҫӗ.

— Каяр эппин часрах!

— Вӑл сирӗн ӗҫ мар, ӑна валли санитарсем пур.

Акатов фельдшера куҫӗнчен пӑхрӗ.

— Ирӗк парӑр мана кайма. Пӗлетӗр-и, вӑл пӗрре ман пурнӑҫа ҫӑлнӑ, халь манӑн ӑна ҫӑлас пулать!

— Юрӗ эппин, кайӑрах, сержант юлташ,—Акатов чӗререн ыйтнине ӑнланчӗ фельдшер.

Ним хускалман Быстрова ҫуна ҫине илсе тухса хучӗҫ. Акатов тилхепене тытрӗ те, минутранах йывӑҫсем хушшинче курӑнми пулчӗ. Халь вӑл паҫӑрхинчен те ытларах пӑлханчӗ: неушлӗ Гриша вилсех кайӗ? Ку шухӑш ун пуҫне ниепле те вырнаҫасшӑн пулмарӗ... Ҫук, пулма пултараймасть! Епле вилтӗр вара Гриша Быстров? Раз-

ведкӑна кампа ҫӳрес пулать вара? Чи хӑюллӑ, паттӑр помощник...

Ултӑ километр хушши тем пекех вӑрӑмӑн туйӑнчӗ. Ҫуна ҫинче суранлӑ ҫын мар, урӑххи пулнӑ пулсан—лашана ҫилтӑман ҫеҫ кӑларттармалла, анчах—юрамасть...

Тул ҫутӑла пуҫларӗ. Хӗвел тухасса систерсе, пӗлӗт хӗрри хӗрелсе килчӗ—ҫӗнӗ кун ҫуралчӗ. Шӑп ҫав вӑхӑтра Акатов медсанбат тӗлне ҫитсе чарӑнчӗ. Быстрова хӑй аллипех ҫӗклесе кӗчӗ те, ӑна кушетка ҫине хунӑ-хумапах:

— Ӑҫта сирӗн чӑн асли?—тесе ыйтрӗ.

— Мӗн тума кирлӗ сана?

— Значит—кирлӗ. Хӑшӗ пулать вӑл?

Юнашар алӑкран пысӑк куҫлӑхлӑ, шур халат тӑхӑннӑ ватӑрах ҫын тухрӗ.

— Мӗн пулнӑ, юлташ?

— Хисеплӗ тухтӑр юлташ!—ун патнелле пычӗ Акатов, темшӗн ҫӗлӗкне хывса.—Эсир тем тума та пултаратӑр...—Унӑн сасси чӗтренсе кайрӗ.—Тархасшӑн ҫӑлӑр ҫак боеца... Эп сире—виличчен манмӑп, Алтайран парне ярса парӑп, манан хам вӗлернӗ упа тирӗ пур...

— А мӗн тума кирлӗ ку калаҫу?—тӗлӗнчӗ тухтӑр.—Элир пур раненӑйсене те пӗр пекех пӑхатпӑр, пирӗншӗн пурте хаклӑ.

Акатов тата темскер каласшӑнччӗ—сӑмахӗ пырне ларчӗ, калаймарӗ. Быстрова халь ҫеҫ тухтӑр тухнӑ кабинета илсе кӗртрӗҫ. Акатов пӗччен тарса юлчӗ. Малалла мӗн тумаллине пачах та пӗлмерӗ вӑл. Кабинет алӑкӗ патне пычӗ те, юпа пек хытса тӑчӗ. Унӑн тем пекех алӑка уҫса шалалла пӑхса илес килчӗ, анчах больница таврашӗнче ун пек тума юраманнине пӗлнипе—хӑюлӑх ҫитмерӗ. Ҫапах та, кӑшт тӑрсан, вӑл хӑлхине алӑк ҫумнех илсе пырса, итлеме тытӑнчӗ. Малтан пӳлӗмри ҫынсем мӑкӑртатрӗҫ кӑна, унтан вӗсен сӑмахӗсем уҫҫӑнах илтӗнекен пулчӗҫ.

— Халех юн ярас пулать, ҫӑлмалли май—ҫав кӑна,—терӗ арҫын сасси (куҫлӑхлӑ тухтӑр пулмалла).

— Юн çук, Алексей Петрович,—ответ пачĕ ăна хĕрарăм сасси.

— Епле çук?

— Ĕнер çеç пĕтрĕ, Алексей Петрович, паян илсе килеççĕ...

— Ним чухлĕ те юлман-и?

— Пĕр кубик та çук...

— Апла пулсан—шанчăк сахал... Морфий те, камфара та çăлас çук ăна. Унăн юн нумай кайнă...

Акатов пĕтĕмпех ăнланчĕ: Гришăна çăлма—халех юн кирлĕ, медсанбатра юн çук... Вăл пĕтĕм кĕлеткипе çӳçенсе илчĕ, çамки çине темшĕн тар тапса тухрĕ... Шухăшсене йĕркене кĕртичченех—унăн сымтăм алли алăк хăлăпĕнчен туртрĕ.

— Тухтăр юлташ! Каçарăр...

— Мĕн кирлĕ?—тарăхса пăхрĕç ун çине пӳлĕмрисем.

— Сире юн кирлĕ... Каçарăр, эп итлесе тăтăм...

— Вара мĕн?

— Илĕр ман юна! Мĕн чухлĕ кирлĕ—çавăн чухлĕ илĕр, эп вăйлă, ман юн нумай... Ку боец—ман тус вăл, çапăçуран та эп çĕклесе тухрăм ăна!—пĕр чарăнмасăр, автоматран пенĕ пек, каласа тăкрĕ Акатов.

Пӳлĕмрисем кăна хирĕç тăруках нимĕн те каламарĕç, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç çеç. Акатов кĕтсе тăчĕ...

— Санăн юн хăш группа—пĕлетĕн-и?—тесе ыйтрĕ унтан пĕр хĕрарăмĕ.

— Пĕрремĕш! Акă, кунта та çырнă...—Акатов кăкăр çинчи кăсъинчен красноармеец кĕнекине туртса кăларчĕ.—Манăн тусăн та çавах, пирĕн пĕр группа!

Пӳлĕмрисем халь пурте тухтăр çине пăхрĕç. Тухтăр пуçĕпе сулса илчĕ:

— Иккĕшинне те тĕрĕслесе пăхăр... Май килет пулсан—илсе ярас.

— Май килет, килет—савăнса кайрĕ—Акатов.—Эп ăна точно пĕлетĕп! Улталамастăп ĕнтĕ...

— Юрӗ, юрӗ, ӗненетпӗр,—вӑл хытӑ хыпкаланаинчен кулса илчӗ пӗр хӗрарӑм.—Саланӑр.

... Юн илсе ярасси ӑнӑҫлӑ пулса иртрӗ. Трубка тӑрӑх юлашки тумламсем Быстрована юн тымарне кӗрсе кайсан, тухтӑр куҫлӑхне хывса шӑлчӗ те, ҫаплах кӗтсе ларакан Акатов патне пырса, ӑна хулпуҫҫинчен лӑпкаса илчӗ:

— Ан пӑлханӑр, сирӗн тус халь тата ҫӗр ҫул пурӑнма пултарать. Ҫӑлтӑр эсир ун пурнӑҫне!

— Спасибо, сире! Пин хут тав тӑватӑп!—ун аллине тытса чӑмӑртарӗ Акатов.

Каялла вӑл ҫилтӑман кӑларсах таврӑнчӗ.

Чӑн малтан, рота командирне разведкӑран илсе килнӗ сведенисене пӗлтерчӗ. Анчах вӗсенчен нумайӑшне рота командирне ытти разведчиксем пӗлтерме ӗлкӗрнӗ мӗн,—вӗсем Акатовпа Быстров хыҫҫӑнах таврӑнна пулнӑ.

— А хӑвӑр миҫе фрица пӗтернине калама пултаратӑн-и тата? — ыйтрӗ Акатовран лейтенант, ытти сӑмахсене калаҫса пӗтерсен.

— Иккӗшне точнӑ пӗлетӗп, ыттисене—ҫук, шутлама май пулмарӗ...—айӑпа кӗнӗ ҫын пек ответ пачӗ Акатов.

— Вунтӑхӑр ҫын, йывӑҫ тӑрне хӑпарса, бинокль витӗр юри хам шутларӑм,—терӗ лейтенант.—Вот епле ӗҫ тунӑ эсир, тусӑм!

— Пурӗ ҫирӗм пӗр фриц тирпейленнӗ эппин,—кулса ячӗ Акатов.—Шӑпах очко пулнӑ!

— Ҫапла пулса тухать!

Ҫав кунах вӗсен паттӑр ӗҫӗ ҫинчен пӗтӗм полк пӗлчӗ. Вӗсене пурте мухтарӗҫ, тӗлпулакансем пурте чӗререн ӑшӑ сӑмах калама тӑрӑшрӗҫ.

Апрель, 1942

# Лăпкă çын

Ыран ирхине наступлени пуçланассине пурте пĕлсе тăчĕç. Вăл саманта халь кашниех кĕтрĕ, кашниех хатĕрленчĕ. Икĕ уйăх ытла оборонăра пулни пурне те йăлăхтарчĕ, часрах малалла, хĕвеланăçнелле, нимĕçсен тимĕрленĕ атти айĕнче тунсăхласа выртакан тăван çĕре хăвăртрах чуралăх намăсĕнчен хăтарас кăмăл çĕкленсе вĕрерĕ.

Тĕттĕмленес умĕн, кăштах саралма пуçланă хурăнлăх çине сывлăм ӳкнĕ чух, виççĕмĕш батальона полковникпа генерал—дивизи командирĕ пычĕç. Вĕсем батальон наступление епле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрĕç.

— Аван,—терĕ юлашкинчен кăвак уссиллĕ генерал,—ку халăх çине çирĕппĕнех шанма пулать.—Кусем ним умĕнче те чарăнса тăрас çук, такама та, теме те çĕмĕрсе тăкма пултараççĕ. Ăнăçлăх сунатăп!

Вăл батальон командирĕн—çирĕм çулхи капитанăн аллине тытса чăмăртарĕ.

— Ыран тĕл пулăпăр-ха! Ятлаçма тӳр килмĕ, тетĕп. Ку ĕнтĕ сирĕнтен хăвăртан килет... Эсир епле çапăçма пултарнинчен!

— Паллах,—терĕ комбат.—Ку таранччен питех ятламанччĕ те ха пире, мĕн пулĕ...

— Ну, ну, асту. Шанатăп.

Генералпа полковник машин çине ларса тепĕр батальон еннелле кайсан, çамрăк комбат пур боецсене те кантарма хушса хăйĕн землянкине таврăнчĕ те, амăшĕ патне кĕске кăна çыру çырас тесе ларчĕ.

«Хаклă аннеçĕм!—тесе çырчĕ вăл.—Темиçе сехетрен эп хамăн боецсене тăшманăн позицийĕсене штурмлама илсе каятăп. Яланхи пекех, çак самантра манăн шухăшсем сан патна çаврăнса тухаççĕ. Пилле мана, аннеçĕм...»

Анчах малалла çырма май килмерĕ—шăпах çак самантра землянкăна пĕрмай обозра çÿренĕ рядовой Иван Куракин кĕрсе тăчĕ.

— Каçарăр чăрмантарнăшăн,—терĕ вăл,—эп сирĕн пата васкавлă ĕçпе килтĕм...

— Мĕн пулчĕ?

— Нимĕн те пулман та... Ыйту пур манăн.

— Кала эппин.

— Эп хама ротăна куçарма ыйтасшăн...

— Епле вăл... ротăна?—тĕлĕнерех пăхрĕ ун çине комбат.

— Çаплах. Хуть те хăш ротăна куçарăр.

— Мĕншĕн апла?

— Мĕншĕн тесен, текех обозра ларма пултараймастăп. Ахаль те, госпиталь хыççăн çичĕ уйăх лашасемпе тăрмашса пурăнтăм ĕнтĕ, çитет. Малти линие каяс тетĕп халь.

— Пирĕн сансăр та çын çитет, Иван Васильич...

— Çитет пулсан та, ытлашши пулмăп. Тархасшăн отказ ан тăвăр, пĕтĕм чĕререн ыйтатăп!

Комбат аллинчи карандаша аяккалла хурса, хăй умĕнче пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа тăракан боеца тинкерсе пăхрĕ.

Иван Куракин батальонра чи хисеплĕ çынсенчен пĕри пулнă, ăна ĕнтĕ пурте хăнăхса çитнĕ, юратнă. Хĕрĕхрен иртнĕскер, вăрçăччен Дон тăрăхĕнчи пĕр пуян колхозра конюх пулса пурăннăскер, батальон хуçалăхĕнче вăл калама та çук тăрăшса ĕçленĕ. Пĕр минут та ĕççĕр ларман вăл. Хăйĕн ездовой службине пуринчен те авантарах туса пынисĕр пуçне, вăл урапасем юсанă, хăмăт-ĕнерчĕксене тÿрлетнĕ, вĕренсем явнă, лашасене те хăех таканланă, камăн та

пулин атă-пушмак çĕтĕлсен—ăна та саплана. Тем тума та пĕлнĕ вăл. Çитменнине нихçан та кам та пулин—взвод командирĕ, е старшина—ĕç хушасса кĕтмен, ĕçне хăех тупнă. Кăмăлĕ вара унăн тĕлĕнмелле лăпкă пулнă, нихçан никампа харкашман, кутăнланма вуçех те пĕлмен. Çавăнпа та пуринчен те хисеп пулнă ăна. Хăй пек рядовойсем çеç мар, аслăрах командирсем те вара ăна ялан е „агте", е агпа—„Иван Васильич" тесе чĕннĕ. Иртнĕ хĕлти çапăçусенче аманнă хыççăн куçĕсем те ытла витĕрех курман та унăн, ăна стрелок туса малти линие ярасси çинчен никам та шутламан.

— Куракин пирĕн пĕтĕм хуçалăха тытса тăрать, никама та памастпăр вăл боеца,—тенĕ ун пирки сăмах тапрансан.

Çавăнпах комбат халь те ăна çапăçăва ярасшăн пулмарĕ.

— Епле сасартăк кун пек шухăш тытрăн вара эс?—Куракина çаплах куçĕнчен пăхса ыйтрĕ вăл.

— Тытрăм çав...

— Ямастăп эп сана ротăна, эс хăвăн вырăнта та питĕ кирлĕ çын. Сан вырăнна кама тăратас-ха манăн? Маларах пулнă пулсан, татахчĕ... Атту вĕт темиçе сехетрен çапăçу пуçланать, пурте вырăнта.

— Тархасласа ыйтатăп, капитан юлташ...

— Ан та ыйт. Татăклăн каларăм сана.

— Пĕр çапăçăва—яр хуть. Кайран каллех хам вырăна таварăнăп!

Комбат пирус тивертсе ячĕ те, кăштах шухăша кайса ларчĕ. Унтан, Куракин пĕтĕм чун хавалĕпе чĕререн ыйтнипе, вăл хăйĕн кăмăлне тултаракан ответ илмесĕр ним тусан та тухса каяс çуккине курса—килĕшрĕ.

— Юрĕ эппин, Иван Васильич. Пĕр çапăçăва кĕрсе тух. Анчах асту, кайран, сывă пулсан, каллех снабжени взводне каятăн!

— Пысăк тав, юлташ капитан. Хăш ротăна яратăн?

— Иккĕмĕшне, Яблоков лейтенант патне.

— Есть!

— Иван Куракин чăн-чăн строевик пекех вăшт! çавăрăнса тухса кайрĕ. Капитан паçăр пăрахнă карандаша каллех алла тытса, çырăва малалла çырма пикенчĕ.

— „Пĕлсех тăратăп, пĕтĕм чĕрепе туятăп, çак çапăçура тискер тăшман темле хирĕç тăрсан та, çĕнтерекенĕсем пурĕпĕрех эпир пулатпăр,—çырчĕ вăл,—мĕншĕн тесен...“

Шухăшсем çурхи шыв юххи пек капланса киле пуçларĕç. Капитанăн çак минутсенче инçетри хулара пĕр пĕччен пурăнакан ватă амăшне пурин çинчен те пĕлтерес килчĕ: боецсем çапăçу пуçланасса çав тери хавасланса кĕтнине те, лăпкă обозник Иван Куракин хăйне малти линие яма ыйтса тархасланине те, генерал унăн батальонне мухтанине те, пĕтĕмпех, пĕтĕмпех... Анчах темшĕн алли çырмарĕ унăн. Чĕри хыттăн тапса тăчĕ. Кĕтмен çĕртенех чĕлхе вĕçне техникумра чухне вĕреннĕ Пушкин сăввин сыпăкĕ пырса тухрĕ:

— Страшись, о рать иноплеменных!
России двинулись сыны;
Восстал и стар и млад, летят на дерзновенных,
Сердца их мщеньем зажжены.
Вострепещи, тиран! Уж близок час паденья!
Ты в каждом ратнике узришь богатыря...

Сасартăк телефон чăнкăртатрĕ. Комбата халех полк командирĕ патне пыма хушрĕç.

Çырăва çырса пĕтересси пулмарĕ, амăшне каласа парас тенĕ туйăмсем капитанăн чĕринчех юлчĕç.

---

Çапăçу тăвата сехетре тапранчĕ. Икĕ сехет хушши артиллери кĕмсĕртетнĕ хыççăн, тăшманăн позицийĕсем çине пирĕн самолетсем—пĕр ушкăн хыççăн тепри, умлăн-хыçлăн, вĕçĕ-хĕррисĕр вĕççе пырса çĕмĕрме пуçларĕç. Таврара пĕтĕмпех чĕтресе, кисренсе тăчĕ, снаряд е бомба ӳксе çурăлман вырăн та юлмарĕ, „катюшăсем“ черет хыççăн черет парса çунтарчĕç.

Нимĕçсем нумай тӳссе ларайманĕç, малти траншейсемпе окопсенчен сиксе тухса—каярахри линисем çине тарма тытăнчĕç. Çапах та, кунта та чарăнса тăрайманĕç вĕсем—пирĕн пехота хыçранах хăваласа пычĕ. Пирвайхи темиçе ял вара пирĕн алла çапăçусăрах лекрĕ. Кăнтăралла сулăнсан тин, самаях çӳллĕ сăрт çинче вырнаçнă сала патне çитсен, вăйлă çапăçу çыхланса кайрĕ.

Кунта нимĕçсен иккĕмĕш оборона линийĕ пулнă. Ăна вĕсем малтанах хатĕрлесе, темĕн тĕрлĕ укреплениссем туса тултарнă мĕн. Шуйттанла чеелĕхпе лартса тухнă огневой точкăсенчен пулясем пăр пек çурĕç. Пирĕн пехотăн ирĕксĕрех çĕр ăшне чакаланса кĕрсе выртма тӳр килчĕ.

Ĕçе каллех пирĕн артиллери тытăнчĕ. Нумай расчетсем тӳрĕ наводкăна тухрĕç. Татах, пĕр çур сехет хушши, пĕтĕм тавралăх чĕтрерĕ. Унтан вара тепĕр хут стрелоксем çĕкленчĕç. Хăшпĕрисем ĕнтĕ ялăн анат вĕçĕнчи анкартисем патнех çитрĕç, нимĕçсен траншейĕсене гранатăсем вăркăнтарма пуçларĕç...

Анчах сылтăм флангра ниепле те малалла кайма май килмерĕ. Пĕр пахчара виç амбразурăллă пит çирĕп дзот пулнă. Мăшăрланă виçĕ пулемет пур еннелле те таттисĕр вилĕм сапса тăнă, пуçа çĕклеме те паман. Пирĕн орудисем те печĕç ун çине, минометсем те пĕрмай тӳпкерĕç—дзот пурĕпĕр путланмарĕ.

— Тухатнă пуль ку шуйттан йăвине, тьфу!—тарăхса сурчĕ наблюдательнăй пунктра çамрăк комбат. Вăл ĕнтĕ тахçантанпах ку дзот çинчен куç илмесĕр бинокль витĕр сăнаса тăнă. Яла сылтăм енчен шăпах виççĕмĕш батальон çĕмĕрсе кĕмелле пулнă, анчах çак киревсĕр дзот пĕтĕм çула картласа лартнă, пĕр шит те малалла кайма паман. Ăна путармасăр яла кĕресси çинчен шутламалли те пулман.

— Вот, халера! Мĕн чорчĕпчен тунă ăна, ниепле те çĕмĕрлмест... Темиçе снаряд тӳп-тӳрех лекрĕ-çке!

Комбат ывăнса çитнĕ куçĕсене шăлкаласа илчĕ те, каллех бинокль витĕр пăхса сăнама тытăнчĕ.

Боецсем çав-çавах дзотран 250—300 метрта çĕр çумне йăпшăнса выртрĕç. Çутăлакан пулясем вĕсен хушшипе çыххи-çыххипе вĕçсе иртрĕç. Кашни темиçе секундрах дзот çывăхĕнче пирĕн снарядсемпе минăсем çурăлса, çĕре чава-чава сирпĕтрĕç.

— Штурмпа илесси ĕнтĕ куна... Халăх нумай пĕтме пултарать,—терĕ комбат хăйпе юнашар тăракан штаб начальникне.—Мĕнле шутлатăн? Намăс куратпăр вĕт капла, лекет вара генералтан пире...

— Тăхтар-ха пĕртак, тен „вăрçă турри"*) пулăшĕ,—ответ пачĕ лешĕ, комбат пекех куçне бинокльрен уйăрмасăр.

Вăхăт шурĕ. Лару-тăру улшăнмарĕ. Сулахайрисем ĕнтĕ урам вĕçне пырса кĕрсе, пӳртсем хушшинче çапăçма тапратрĕç, сылтăм фланг хусканаймарĕ. Кĕçех комбата полк командирĕ телефон патне чĕнсе приказ пачĕ:

— Текех пĕр минут та тытăнса тăма юрамасть. Хуçа (дивизи командирĕ ĕнтĕ) штурмлама хушать, епле пулсан та ял вĕçне тухса, тăшманăн чакса каймалли çулне татмалла.

— Ăнланатăп,—терĕ те ăна хирĕç комбат, трубкăна хурса тарăнăн сывласа ячĕ.—Вот, инкек килсе тухрĕ пирĕн тĕле, мать честная!

— Чим-ха, чим...—терĕ çав хушăра çаплах бинокль витĕр пăхса тăнă штаб начальникĕ.—Эп питĕ интереслĕ япала кура пуçларăм...

— Мĕн?—Комбат та часрах бинокле куç патне тытрĕ.

— Пирĕн пĕр боец дзот патнелле шăвать...

— Пулма пултараймасть!

— Ман куç умĕнчех пĕр 80 метр шурĕ...

— Ăçтарах вăл?

— Ав, утă купи пек йывăç тĕминчен сулахаярах.

— Чăнах та!

— Татах шăвать... шăвать... чарăнчĕ... Куратăн-и?

---

*) Артиллери.

— Куратăп. Кам-ши вăл?

-- Калама хĕн, çурăмĕ çеç курăнать вĕт.

— Эх, çиттĕрччĕ! Çитсен мĕн те пулин тăватех ĕнтĕ вăл, тупата!

— Пĕр-икĕ граната пулсан—ним те мар хупласа хурать...

— Каллех хусканчĕ, шăвать...

— Анчах пулемĕт ун çинеллех перет-çке! Çук, пулас çук çитесси, халех вĕлерсе пăрахаççĕ ăна. Эх!..

— Çапах та, малаллах пырать-ха вăл, шăвать...

— Тупата, герой! Пулясем çинех пырса кĕрет-çке... Кам-ши вăл, камăн çынни?

— Яблоков ротинчен пулма кирлĕ.

— Чĕрĕ юлсан та, вилĕ пулсан та манма юрамасть ăна.... Тĕлĕнмелле хăюллăх ку, хуть те мĕн кала!

— Чарăнчĕ.. Хусканмасть... Неушлĕ вĕлерчĕç?

Комбат, ниçта кайса кĕрейми сăнаса тăнăскер, тутине çыртса лартрĕ. Çак самантра вăл тем тума та, нимĕçсен дзочĕ умнелле çăмăр пек çăвакан пулясем айĕн шăвакан боеца пулăшмашкăн хăй тăрса чупма та хатĕр пулчĕ.

Минут хыççăн минут иртрĕ... Калама та çук вăрăм пулчĕç вĕсем! Дзот патне пĕр 50—60 метр таранах шуса çитнĕ боец хусканмарĕ. Амбразурăсем витĕр тăшманăн пулемĕчĕсем малтанхи пекех пĕр чарăнмасăр вилĕм сапса тăчĕç.

— Паллах, вилнĕ вăл,—терĕ комбат пусăрăнчăк сасăпа.—Çакăн пек çĕрте этем ăçтан хăтăлса юлтăр? Генерал приказне пурнăçлас пулать. Штурмлас... Урăх ним тума та çук халь тин. Ротăсемпе çыхăн...

Штаб начальникĕ ăна ответ парас вырăнне йывăррăн сывласа ячĕ.

— Эпĕ ĕç урăхла пулса тухасса шаннăччĕ...

Урăх ним те каламарĕ. Окопран тухрĕ те, çÿллĕ хăмăл ăшшĕн иккĕмĕш рота еннелле хырăмпа шуса кайрĕ.

Комбат тата тепĕр хут дзот çывăхĕнче выртакан боец çине пăхса илчĕ. Пасăрхи пекех, вăл пĕртте хусканман.

— Çапах та, ку герой кам пулнине кайран пӗлес-ха, унӑн паттӑрлӑхӗ çинчен çемйине хамӑннах çырса ярас...— шухӑшларӗ комбат Юлашкинчен.

---

Геройӗ—ӗнерхи обозник, рядовой Иван Куракин пулнӑ... Ӑза ӗнтӗ пурте вилнӗ тесе шутланӑ, анчах та вӑл чӗрӗ пулнӑ-ха. Чӑнах та, çуталакан вӗри пулясем ӑна темиçе çӗртен те шӑтарса кайнӑ, унӑн суранӗсенчен пӗрмай юн сӑрхӑннӑ, çапах та вӑл сывланӑ ха, унӑн чӗри те тапнӑ, ӑс-пуçӗ те чиперех ӗçленӗ.

— Пурпӗрех çитетӗп... Пурӗпӗр сирпӗтетӗп сире, сволочьсене...—тенӗ вӑл шӑл витӗр, сылтӑм аллинчи противотанковӑй гранатӑна хытӑран хытӑ чӑмӑртаса.—Тавӑратӑп сире... Арӑмшӑн та, ачасемшӗн те...

Иван Куракин халь юри вилнӗ пек пулса выртнӑ. Малтанах вӑл дзот патне курӑнми пытанса çитме ӗмӗтленнӗ, икӗ йӑран хушшипе чылай вӑхӑт ним сиен курмасӑрах шуса пынӑ, пулясем ун çийӗпе шуса иртнӗ, çурӑм çинчи шинельне çеç шӑтара-шӑтара кайнӑ, анчах каярахпа, пулясем харӑсах темиçе çӗртен пырса сӑхсан, Куракин кӑшт лупашкаллӑрах вырӑна çитнӗ те, нимӗçсене улталама шут тытнӑ.

— Вилнӗ пек пулас... Вилнӗ çынна таттисӗр перес çук вӗсем... Пуçӑм сывӑ пулсан, çав-çавах çитсе кӗрслеттеретӗп! Кӑтартам эп вӗсене...

Чылай выртмалла пулчӗ унӑн вилнӗ çын тӗсне кӑтартса. Нимӗçсем çаплах печӗç. Пӗр вершук çӗкленнӗ пулсанах, унӑн кӗлеткине вуншар пуля çитсе тӑрӑнма пултарнӑ. Унтан—те çур сехет иртрӗ, те ытларах, ӑна чухламарӗ вӑл—пуç çинче пулясем шӑхӑрма пӑрахрӗç, пӑч-пач кӑна, уйрӑмӑн-уйрӑмӑн, сӑпсасем пек сӑрлатса ирте-ирте кайрӗç.

— Халех... халех тӑратӑп та, чупатӑп. Пӗр çирӗм метр юлсан, малтан противотанковӑйне, унтан çӑмӑллисене ывӑтатӑп...—Куракинӑн чӗри тата хытӑрах тапма пуçларӗ.

Суранӗсем ыратнине те туймарӗ вӑл халь, пӗтӗм шӑм-

шак вут пек пĕçерсе тăнине çеç сисрĕ. Ĕнтĕ, вăл сиксе тăрас патнех çитрĕ, аллинчи йывăр гранатăн аврине тата çирĕпрех чăмăртарĕ.

— Урра-а!.. За родину, впере-ед!—тесе кăшкăрни ас-лати пек янраса кайрĕ çав вăхăтра.

Паллах, куна пирĕн боецсем кăшкăрнă, урăх никам та мар!..

Куракин пуçне вăштах çĕклесе, çав çĕнтерӳллĕ „урра" янранă çĕрелле пăхрĕ те, хăйĕнчен сулахай енчен сахал-тан та пĕр çĕраллă боец атака пуçласа янине курчĕ. Текех ĕнтĕ пĕр самант та, кăшт та тăхтаса тăма юраман: дзотри пулеметсем питĕ пысăк сиен кӳме пултарнă.

Хăйне çил вĕрсе хăпартнă пекех сиксе тăчĕ вара юн-ланса пĕтнĕ Куракин. Умри виç амбразурăллă дзотсăр пуçне вăл халь урăх нимĕн те курмарĕ, пĕр çавсем çине пăхса çеç чупрĕ малалла. Темиçе секундран—вилĕм йăви патне çитесси çирĕм-вăтăр утăм кăна юлсан—вăл мĕнпур вăйне пухрĕ те, аллинчи кĕске тукмак пек гранатăна дзот çинелле ывăтрĕ...

Калама та çук хăрушла вăйлă взрыв пулчĕ. Пĕр хушă ку вырăнта хура çăра тĕтĕмсĕр пуçне нимĕн те курăн-марĕ. Унтан, тĕтĕм сирĕлсен, дзот пулнă вырăнта тĕрлĕ пĕрене, тимĕр каштасем, чул, кирпĕч купи кăна палăрса тухрĕ.

---

Виç,ĕмĕш батальон командирне пĕрин хыççăн тепри телефон патне чĕнме тапратрĕç. Малтан полк командирĕ калаçрĕ, унтан дивизи командирĕ патĕнчен чĕнчĕç. Вĕсем хăйсен наблюдательнăй пункчĕсенчен темле боец тăшмаи-нăн пулемечĕсем çинех пырса кĕрсе, ку таранччен çав тери кансĕрленĕ дзота сывлăшалла сирпĕтнине курсах тăнă.

— Кам турĕ ку ĕçе?—ыйтрĕç вĕсем.

— Пĕлместĕп-ха... Яблоков ротинчен пулас, анчах вăл камне тĕп-тĕрĕс калама пултараймастăп,—ответ пачĕ комбат.

— Халех шыраса тупса пĕлтерĕр!

— Юрать!

Комбатăн хăйĕн те кун çинчен епле пулсан та хăвăртрах пĕлес килчĕ. Ку паттăра вăл вилнĕ тесе шутланăччĕ ĕнтĕ, анчах та çав „вилнĕ çын“—ав епле номер туса хучĕ! Темиçе самант хушшинче, тăр пĕччен, пĕтĕм батальона çул уçса пачĕ,—дзот сирпĕнсенех стрелоксем пĕр чăрмавсăрах яла кĕрсе кайма пултарчĕç, халь ĕнтĕ урăх нимĕн те чарса тăраймасть вĕсене. Çул уçă!

— Паянах, çапăçу хирĕнчех награда памалла тăвас...

Комбат ял еннелле чупрĕ. Çул çинче те вăл çав боец çинченех шухăшласа пычĕ.

— Вилнĕ ан пултăрах... Çитсе тупас, часрах тав тăвас ăна!

Анкартисем хыçĕнчи çырмара вăл чĕп-чĕр юн пулнă боеца икĕ санитар носилка çине хурса çĕклесе пынине курчĕ. Аманнă боецăн питне те бинтсемпе çыхса лартнă мĕн, ăна паллама та май пулман.

— Кам ку?—тесе ыйтрĕ комбат санитарсенчен.

— Рядовой...

— Хăш тĕлтен илсе килетĕр?

— Нимĕçсен дзочĕ патĕнче, пахчара выртатчĕ...

— Хушаматне пĕлмерĕр-и?

— Ыйтман.

— Пĕлесчĕ епле те пулсан! Калаçать-и вăл, çук-и?

— Эпир пырса тупнă чухах ним пĕлми выртатчĕ...

— Чимĕр-ха эппин, докуменчĕсене пăхар. Мана питĕ кирлĕ вăл!

Санитарсем носилкăна çĕре хучĕç те, вĕсенчен пĕри аманнă боецăн гимнастерка кăсъине хыпашлама тытăнчĕ. Боец шăпах тăна кĕнĕ самант пулнă пулмалла.

-- Кам ку, мĕн кирлĕ?—ыйтрĕ вăл аран-аран тухакан сасăпа.

— Капитан сан хушаматна пĕлесшĕн,—терĕ санитар.

— Мĕнле капитан?

— Хамăрăн ара, батальонри...

— Манни вара вăл?—Боец йывăррăн сывласа ячĕ.— Куракин вĕт эпĕ.

Комбат тĕлĕннипе картах сиксе илчĕ.

— Иван Васильич, эсĕ-и вара ку?

— Эпĕ çав... Пур çĕртен те шăтарса пĕтерчĕç, шуйттансем!

— Дзота путараканни эс пултăн-и?

— Эпĕ.

— Пурне те тĕлĕнтертĕн, Иван Васильич, геройран та герой пултăн! Куншăн сана пысăк награда тивет ĕнтĕ, генерал хăй хушрĕ сана тупма.

— Нимле награда та кирлĕ мар мана...—Куракин хăйĕн куçĕсене картлана бинта сирчĕ.—Эп хам ĕмĕтленнине, тата хамăн ача хушнине турăм кăна. Сана спасибо вара— çапăçăва янăшăн...

Комбатăн ăна хирĕç калама сăмах та тупăнмарĕ.

— Ну, юрĕ эппин,—терĕ вăл кăшт тăрсан,—май пулсанах санчаçе пыратăп-ха сана курма. Ун чух калаçăпăр.

— Пыр, эп сана унта пĕр япала кăтартатăп...

Вĕсем пĕр-пĕрин çине çав тери кăмăллăн пăхса илчĕç те, ашшĕпе ывăлĕ пек пĕр-пĕрне ыр сунса уйрăлчĕç.

---

Ик кунтан полевой госпиталь палаткисем вырнаçнă çăра хыр вăрманне ула кушак тĕслĕ пĕчĕк автомобиль пырса кĕчĕ. Ун ăшĕнчен кăвак çӳçлĕ генералпа çамрăк кăна капитан тухрĕç. Дежурный тухтăр вĕсене йывăр аманнисем выртакан палаткăна илсе кайрĕ.

— Куракин!—тесе чĕнчĕ тухтăр.—Сан патна хăнасем килчĕç!

— Мĕнле хăнасем пулччĕр?—тĕлĕнчĕ Куракин.

— Эпир килтĕмĕр, Иван Васильич!—аякранах аллине тăсса пычĕ ун патне генерал.—Ну, сывлăху мĕнле?

— Аптрамасть, тӳрленетĕп...—именнĕ пек пулчĕ Куракин.—Епле килсе тухрăр вара эсир кунта?

— Сана валли награда илсе килтĕмĕр,—терĕ капитан.—

Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗ, Иван Васильич, пӗрремӗш степень!

— Ытла та-ҫке...—пушшех именсе кайрӗ Куракин.— Мӗн тунӑ вара эп питех? Наградӑшӑн мар вӗт, ун чухнех ка арӑм сире... Хамӑн кӑмӑл ҫавӑн пек пулнипе... Наградӑсене ҫамрӑккисене ытларах парас пулать, вӗсем пирӗнтен маттуртарах пултараҫҫӗ.

— Ну, тусӑм, ку енчен пире ирӗк пар ӗнтӗ, кам мӗнле наградӑна тивӗҫлине эпир хамӑрах пӗлетпӗр!—терӗ те ӑна хирӗҫ генерал кӑмӑллӑн, Куракинӑн кӑкри ҫине ылттӑнлӑ орден вырнаҫтарма тытӑнчӗ.—Совет правительстви пирӗн геройсене пӗрне те манса хӑвармасть... Ну, пӗтӗм чӗререн тав тӑватӑп сана!

Генерал Куракинӑн сывӑ аллине тытса чӑмӑртарӗ.

— Часрах сывал та, каллех ман пата тавӑрӑн. Эп сана хӑвна майлӑ ӗҫ тупса парӑп. Канасса—кайран, тӑшмана пӗтерсе тӑксан канӑпӑр. Ҫапла-и?

— Тӗрӗс... Анчах та, те юрӑхлӑ пулатӑп-ҫке тин?

Куракинӑн куҫӗсем палӑрмаллах шывланчӗҫ.

— Ан пӑлхан, старик, тухтӑр каларӗ ӗнтӗ мана—пӗрик уйӑхран пӗтӗмпех виҫене ларать, тет.

— Уншӑн мар эп...—куҫҫулӗсене ҫӑтрӗ Куракин.—Телейпе... чӗре тулса ҫитнипе... Епле чыс турӑр эсир мана! Ӗмӗрте те шутламан кун ҫинчен...

— Тӗрӗссипе каласан, Иван Васильич, эпир те сана ҫакнашкал паттӑр ӗҫ тума пултарать тесе шутламан!—терӗ ӑна хирӗҫ капитан, кӑмӑллӑн кулса илсе.—Лӑпкӑ кӑна ҫынччӗ эсӗ, сан сассу та илтӗнместчӗ, тепӗр чух эс пурри-ҫукки те сисӗнместчӗ...

— Шавлама юратмастӑп ҫав эпӗ, тӗрӗс.

— Ҫапах та, каласа пар-ха ӗнтӗ халь, мӗнрен сасартӑк ҫапӑҫӑва кайма шут тытрӑн эсӗ? Ҫине тӑрса, тархасласах ыйтрӑн вӗт-ха! Малтанах эп сана ярас теменччӗ.

— Чӑнах та, интереслӗ ку,—терӗ генерал та, Куракинӑн уяр кун пек таса та ҫутӑ куҫӗсенчен пӑхса.—Нимӗҫ-

сен дзотне хуплаканни—ездовой Куракин, тесе пĕлтерсен, эп те самаях тĕлĕнтĕм.

— Вăл ака мĕншĕн пулчĕ,—лăпкăн ответ пачĕ Куракин,—вуласа пăхăр ҫакна...

Ҫавăнтах пуҫ айĕнчи бумажникрен лутăрканса пĕтнĕ кăвак хут татки кăларса, комбата тыттарчĕ.

— Мĕн вара ку?

— Ҫыру. Ман кĕҫĕн хĕрачан ҫырăвĕ. Вула.

Начар карандашпа ҫырнă чалăш-тĕлĕш саспаллисене аран уйăркаласа, капитан вула пуҫларĕ.

„Савнă атте, сана чĕререн салам яратăп. Сан ҫырăва илсе эсĕ сыввине пĕлсен питĕ савăнтăм, анчах ҫавăн чухнех аннене, тата Юркăпа Машăна аса илсе макăртăм. Вĕсене пурне те нимĕҫсем вĕлерчĕҫ. Эп пĕчченех тăрса юлтăм та, Васса инке патĕнче пурăнатăп. Аннене нимĕҫсем виҫĕ хутчен пăшал тимĕрĕсемпе хĕнерĕҫ, мĕншĕн тесен анне пĕрмаях партизансене кĕпе ҫуса паратчĕ. Ун ҫинчен нимĕҫсене хамăр ялти староста каласа панă. Кайран аннене хулари тĕрмене кайса хупрĕҫ, вара унта вăл питĕ асапланса вилнĕ, тет. Юркăпа Машăна хамăрăн хĕрлисем ҫитсе кĕрес умĕнхи кун улăхра персе пăрахнă. Вĕсем хамăр пăрупа сурăха нимĕҫсем тытса пусасран вăрмана хăваласа кайса пытарма шутланă. Ун чухне нимĕҫсем пирĕн ялта 21 ҫынна тата 63 ĕнене персе вĕлернĕ. Халь пире Хĕрлĕ Ҫар ирĕке кăларчĕ, тин хăрамастпăр. Анчах хĕлле епле пурăнассине пĕлместпĕр, мĕншĕн тесен нимĕҫсем тухса тарнă чух яла тĕппипех ҫунтарса ячĕҫ. Тата тăлăххăн пурăнма пит кичем, кашни кунах макăратăп. Савнă атте, эсĕ халь нимĕҫсене пирĕн аннешĕн те, Юркăшăн та, Машăшăн та хыттăн тавăр, вĕсене ытларах вĕлер! Пур нимĕҫсене те ҫĕнтерсен вара киле таврăн та, пĕрле пурăнăпăр. Ман сана питĕ курас килет. Чуптăватăп. Санăн пĕртен-пĕр пĕчĕк хĕрӳ—Клава".

Капитан ҫырăва вуласа пĕтерчĕ те, ăна Куракина каялла пачĕ. Темиҫе самант виҫҫĕшĕнчен пĕри те нимĕн

те чĕнмерĕç. Пĕчĕк хĕрача хăйĕн куççулĕпе çырнă сă-махсем пурин чĕрисене те çав тери ыраттарчĕç...

— Ку çырăва эп шăпах наступлени пуçланас умĕн илтĕм,—терĕ Куракин.—Тÿссе тăраймарăм вара, тÿрех комбат патне кайрăм. Манăн епле пулсан та нимĕçсене тавăрас килчĕ...

— Тĕрĕс шут тунă,—ырларĕ ăна генерал.—Ним айăп-сăр совет çыннисен, хĕрарăмсемпе ачасен кашни юн тум-ламĕшĕн тăшманăн юнне юханшыв пек юхтармалла, тет-пĕр вĕт. Эс çавăн пек турăн та ĕнтĕ, çавăнпа мухтатпăр сана...

Тепĕр кăшт тăрсан, генералпа капитан тухса кайрĕç.

— Каçар, Иван Васильевич, васкатпăр. Хĕрсех наступ-лени пырать, пирĕн çапăçу хирĕнче пулас пулать. А эс кан халь, часрах сывалма тăрăш...—тесе хăварчĕç вĕсем.

Куракин чылайччен шухăша кайса выртрĕ.

— Епле хакла хураççĕ пирĕн этемме... Чăнах та çав, пирĕн пек çынсем урăх ниçта та çук-тăр!

Каçхине вăл сестрана чĕнсе илсе, хĕрачи патне ответлă çыру çыртарчĕ.

«Юратнă ачам Клава, эс пĕлтернисем манăн ăшчикке хытă çунтарчĕç. Сан çыруна илсен тепĕр куннех, эс хушнă пек, çапăçура нимĕçсене хытă çĕмĕртĕм, нума-йĕшне вĕлертĕм. Макăрнинчен усси çук, хĕрĕм, çавăнпа та лăпланма тăрăш. Вăрçă пĕтсен эпир каллех телейлĕ пулса пурăнăпăр-ха...»

Ноябрь, 1943.

## Амăшĕн сăмахĕ

Кунĕн-çĕрĕн, çĕрĕн-кунĕн хăваларăмăр эпир тăшмана, ниçта та чарăнса тăма памарăмăр ăна. Тепĕр чух талăкра çирĕм-вăтăр çухрăм каяттăмăр, обозсем таçта çитиех татăлса юлатчĕç, штабпа та пĕр радио тăрăх кăна çыхăнкалаттăмăр. Ял хыççăн ял, сала хыççăн сала, сĕм вăрмансемпе шурлăхсенче вырнаçнă поселоксем, местечкăсем—пĕрин хыççăн тепри нимĕçсенчен тасалса пычĕç. Чуралăхран хăтарнă совет çыннисем çăкăр-тăварпа, савăнăç куççулĕсемпе йышăнчĕç пире, ыталарĕç, чуптурĕç, алăмăрсене чăмăртарĕç, тав турĕç, кашниех хăй патне кĕрсе канма чĕнчĕ, анчах эпир чарăнса тăмарăмăр, тăшманăн юнлă йĕрĕсем тăрăх пĕрмай малалла кайрăмăр. Хăш чух пĕр кун хушшинчех тăшман хăваракан заслонсемпе çич-сакăр çапăçу пулчĕ, темиçешер сехет пĕтĕм тавралăх кисренсе тăратчĕ,—анчах нимĕн те чараймарĕ пире, тăшмана лутăркаса тăкса пурĕпĕр малаллах ыткăнаттăмăр...

Калама та çук хăватлăн хăваларăмăр çав нимĕçсене вăл кунсенче! Хăй çулĕ çинче мĕн пуррине пĕтĕмпех шăлса каякан тăвăллă çил пек, çурхи чарусăр шыв юххи пек тасатса пытăмăр эпир тăван çĕршыва.

Пирĕн пирки пурте калаçма тытăнчĕç. Мотоциклистсем çул çинче хăваласа çитсе панă хаçатсенче хамăр çинчен вуларăмăр. Информбюро сводкисенче хамăр çинчен илтрĕмĕр. Пĕрмай, кашни кун:

— **Илья Бичурин батальонĕ тата вунă яла ирĕке кăларнă...**

— Бичурин паттăрĕсем нимĕçсем чакакан çул çине тухса, Германие чуралăха хăваласа каякан пин совет çыннисене хăтарнă...

— Икçĕр аллă фашиста „леш тĕнчене" ăсатнă геройкомбат Бичурин богатырĕсем...

Тĕрлĕ халăхсен ывăлĕсем те пурччĕ пирĕн батальонра. Тăван çĕршыв нумайăшне пысăк наградăсем панăччĕ, мĕншĕн тесен вĕсенчен кашниех геройла ĕçсем тунă. Пулеметчик-грузин Павлишвили пĕр çапăçурах çĕр çирĕм нимĕçе çулса тăкнă. Снайпер-казах Эрмамбетов сакăрвун пĕр фашиста вĕлернĕ. Калуга вырăсĕ Берёзкин пĕр атакăрах тăхăр тăшмана чиксе пăрахрĕ. Выл-пасар чăвашĕ Испуханов кăкри çинче, орденпа юнашар, „отличный миномётчик" значокĕ ялтăргатса тăратчĕ. Украина йĕкĕчĕ Раздобудько çу каçах „чĕлхе" тытса килсе чапа тухрĕ...

Ăнланатăр ĕнтĕ халь: никам та, ниепле вăй та чарса лартма пултарайман вĕсене. Тăшман темле тапăçлансан та, эпир пурĕпĕр çĕмĕрсе тăкнă ăна, пурĕпĕр малалла кайнă!

...Вунă кун ытла таттисĕр хăваларăмăр нимĕçсене. Ыванса çите пуçларăмăр ĕнтĕ, тата çынсем те самаях сахалланчĕç пирĕн. Вăрçă вĕт, çухатусăр пулмасть. Пĕр каçхине вара комбат приказ илнĕ:

— У. шывĕ хĕрринче иккĕмĕш эшелона тухатăр. Сирĕн вырăна урăххисем тăраççĕ.

Çак приказ пулман пулсан, эпир татах çапăçаттăмăр ĕнтĕ, татах малалла каяттăмăр—ун пирки никам та иккĕленмен, анчах приказ пулчĕ те, чарăнса тăтăмăр вара.

— Кĕçĕр çывăратăр,—терĕ пире комбат.

Апат пиçессе те кĕтсе илеймерĕç нумайăшĕсем çак сăмахсем хыççăн, ăçта выртнă—çавăнтах çывăрса кайрĕç. Вилнĕ пекех çывăрчĕç. Часовойсем кăна калле-малле уткаласа çÿрерĕç тĕттĕм вăрманта...

Анчах часовойсемпе пĕрлех пирĕн комбат та çывăрман иккен. Вăл плащ-палатка сарса выртнă та, кашни сехет—сехет çурăранах тăра-тăра постсене тĕрĕсленĕ. Тăшман

çывăхрах ларнă-çке, пирĕнтен пĕтĕмпе те темиçе çĕр метрта çеç—шыв урлă кăна. Кунта питĕ пысăк сыхлăх кирлĕ пулнă!

Çĕр каçа комбат миçе хут тăрса çÿренине пĕлместĕп, анчах ирхине ирех, хĕвелтухăç хĕрелсе килнĕ вăхăтра, пурте чи тутлă ыйхăпа çывăрнă чух вăл каллех пĕр часовой патĕнчен тепĕр часовой патне çÿренĕ.

Çакăнта вара вăл сасартăк çăра чăтлăхран пĕр вατă хĕрарăм васкаса тухнине курнă. Хĕрарăм çара пуçăн пулнă, унăн кăвак çÿçĕсем арпашса кайнă, сараппанĕ йĕп-йĕпе пулнă та çурăлса пĕтнĕ, хăй йывăррăн хашкаса сывланă, тăнлавĕ патĕнчен пичĕ тăрăх юн сăрхăннă. Ик аллипе вăл 3—4 çулхи ача кĕлеткине ыталаса çĕклесе пынă...

— Кам эс, ăçта каятăн?—тесе ыйтнă унтан комбат.

— Вилĕмрен таратăп, ывăлăм, çăлăнăç шыратăп,—тенĕ ăна хирĕç хĕрарăм.

— Мĕн пулчĕ апла?

— Нимĕçсем кĕçĕр пире вутта пăрахса çунтарма тапратрĕç,—тарма тăнисене пере-пере вĕлерчĕç, пĕр эп кăна çăлăнтăм пулас.. Амангрĕç, анчах вĕлерейменрĕç... Алăри ачана вĕлерсе пăрахрĕç ав...

Хĕрарăм сиксе чĕтренĕ, куçĕсем хăрушшăн çутăлнă. Пирĕн комбат, кайран хăй каласа панă тăрăх, пĕр хушă хытнă пек пулса тăнă, хăйĕн чĕри тÿсмелле мар пĕçерсе кайнă.

— Хăш ялта?—ыйтнă вăл темиçе самантран.

— Титовкăра...

— Çак шывăн леш енче-и?

— Çавăнта çав, ик çухрăм та çук...

— Юрĕ!—Комбат çавăнтах хĕрарăма хулĕнчен тытса, эпир çывăрнă çĕрелле кăтартнă.—Атя ман йĕкĕтсем патне, каласа пар вĕсене тĕпĕ-йĕрĕпе, пурте пĕлччĕр кун çинчен!

— Подъем! В ружье!—янраса кайрĕ команда ирхи шăплăхра.

Эпир—виççĕр çитмĕл çын—пĕр харăс, пĕр çын пек сиксе тăтăмăр.

— Становись!

Взводсемпе ротăсене йĕркеленсе тăма темиçе секунда çеç кирлĕ пулчĕ. Эпир ĕнтĕ пурте халех çапăçăва каймалла пуль, тесе шутларăмăр. Кашниех çумри патронсене, гранатăсене, автомат затворĕсене тыта-тыта тĕрĕслерĕ. Анчах та „шагом марш“ команда вырăнне комбат пачах та кĕтмен команда пачĕ:

— Садись!

Лартăмăр... Вара çавăнтах хамăр комбатпа юнашар юнланса пĕтнĕ сăн-питлĕ, ик аллипеле сывламан ача кĕлеткине тытса тăракан кăвак çӳçлĕ ватă хĕрарăма куртăмăр...

Пит те тĕлĕнсе пăхрăмăр ун çине.

— Мĕне пĕлтерет ку?..

Комбат ик утăм маларах тухрĕ. Унăн сăнĕ тăрăхах эпир темле ырă мар ĕç пулнине сисрĕмĕр, вăл питех те кĕтмен хыпар пĕлтерессе кĕтрĕмĕр.

— Хаклă тусăмсем,—терĕ комбат,—ыйăха татнăшăн кăмăлсăр ан пулăр, çавăн пек ĕç килсе тухрĕ...—Вăл хĕрарăм еннелле çаврăнчĕ.—Ну, кинемей, каласа пар ĕнтĕ нимĕçсем сирĕн ялта мĕн тунине.

Шăпах пултăмăр эпир. Пурте куççемпе çак ватă белорус хĕрарăмĕ çине тăрăнтăмăр. Вăл та, аллинчи ача виллине ерипен çĕре хучĕ те, пире пăхса çаврăнчĕ—пирĕн хушăмăрта хăйĕн çывăх тăванĕсене шыранă пекех пăхрĕ çав!

— Ывăлăмсем...—терĕ вăл хуллен.—Чăнах та эсир-ши ку? Ĕненессĕм те килмест, ватă куççем улшу кăтартнă пек туйăнать... Анчах та лайăхрах пăхатăп та, сирех, чăн сирех куратăп! Епле телей... Епле телей! Вăл телей çинчен калама сăмах та çитес çук... Мĕн чухлĕ кĕтнĕ пуль эпир сире!

Унăн питçăмартисем тăрăх шултра куççульсем сиксе анчĕç. Сасси тата ытларах чĕтĕре пуçларĕ.

— Эс лӑплан, кинемей,—терӗ ӑна комбат йӑвашшӑн.— Лӑплан та, йӗркипе каласа пар.

— Юрӗ, юрӗ, йӗркипех калӑп...—Пӗтӗмпех каласа парӑп сире!—хӗрарӑм куҫӗсене шӑлса илчӗ. Телейлӗ саманара пурӑннӑ чух—тӑххӑрӑн пурӑнаттӑмӑр эпир, халь тӑр пӗччен тӑрса юлтӑм... Икӗ ывӑлччӗ манӑн, икӗ кинччӗ, ачамсен ачисем тӑватттӑччӗ. Пурте пӗтрӗҫ, пурин пуҫне те ҫак ылханлӑ нимӗҫсем ҫирӗҫ. Ывӑлӑмсем иккӗшӗ те вӑрҫӑ пуҫлансанах фронта тухса кайрӗҫ,—пӗри Киев хулине хӳтӗлесе паттӑрӑн вилни ҫинчен пӗлтерчӗҫ, тепри пленран тарса килсе, тепӗр куннех партизана кайрӗ. Йытӑ чӗрелӗ этемсем каласа панипе—нимӗҫсем ун ҫинчен пӗлнӗ те, пире вара ҫемйипех асаплантарма тытӑнчӗҫ. Мӗн кӑна тумарӗҫ пуль! Кинӗме виҫӗ хутчен урам варне сарса хурса аллӑшар хут ҫаптарчӗҫ—унӑн сӗт пек шурӑ кӗлетки ҫинче пӳрнепе пусмаллӑх чӗрӗ вырӑн та юлманччӗ... Юлашкинчен, кӗрхи тӗттӗм каҫ, ӳсӗр карательсем пырса кӗчӗҫ те, пире пурне те урама хӑваласа кӑларса, ӑна тата тепӗр хут допрос тӑванҫи пулчӗҫ. Допросӗ—допрос майлӑ пулман, асаплантарни кӑна пулнӑ. Аякран кӑна илтсе тӑтӑмӑр эпир кин епле асаплӑн кӑшкӑрнисене, ҫывӑха ямарӗҫ пире. Ир енне, нимӗҫсем кӗпӗртетсе тухса кайсанах пӳрте чупса пытӑмӑр та—кин те, унӑн ачисем те урай варринче, юн кӳллинче выртнине куртӑмӑр. Нимӗҫ ятлӑ урнӑ кашкӑрсем кинӗн кӑкрисене, хӑлхисене, сӑмсине касса татнӑ, аллисене каялла пӑрса хуҫнӑ, ачисенне—тӑват ҫулхи Тамарӑнне те, ик ҫулхи Алеҫӗнне те—хырӑмӗсене ҫӗҫӗсемпе ҫурса хӑварнӑ... Пӗтрӗҫ манӑн юратнӑ ачамсем..

— Ку хуйӑха пурӑнса ирттертӗм кӑна—тепри сиксе тухрӗ. Партизанра ҫӳренӗ ывӑлӑм, ҫак вилнӗ ачан ашшӗ, разведкӑна кайсан аманнӑ та, ӑна нимӗҫсем плена илнӗ. Ҫав кунах вара виҫӗ ҫул юппинче ҫакса вӗлернӗ ӑна... Анчах ку та ҫитмест. Урнӑ кашкӑр нихҫан та юн ӗҫсе тӑранмасть, тет. Ик кунтан карательсемпе полицейскисем каллех пирӗн пата пырса, пӗтӗм пурлӑха ҫаратса

тухрĕç, килçурта вут тĕксе хыптарса ячĕç, тепĕр кинне хăйсемпе пĕрле илсе кайрĕç. Тăрса юлтăм вара ик тăлăх ачапа—нимсĕр, пĕр тĕпренчĕк çăкăрсăр, çири кĕпепе. Ялçыннисем пулăшман пулсан, çавăн чухнех вилмеллеччĕ эпир. Хăшĕ çур пăт çăнăх пачĕ, хăшĕ çĕрулми, хăшĕ кив сăкман... Тытăнкаласа пытăмăр вара çапла...

— Çапах та, темле хĕн пулнă пулин те, темле асап тӳснĕ пулсан та, эп пурĕпĕрех хамăрăннисем килессе кĕтсе пурăнтăм. Килĕç-ха, тавăрĕç-ха, теттĕм. Эсир килнине курмасăр вилес марччĕ, теттĕм. Çав ĕмĕт кăначчĕ манăн! Манăн çеç мар, пурин те шухăшсем çавăн çинче кăначчĕ...

— Кĕтни сая каймарĕ пирĕн. Эсир çывхарсах килни çинчен илтме пуçларăмăр. Чĕремĕрсем хаваслăрах тапма тытăнчĕç, тамăкран хăтăлса тухас шанчăк ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ. Хамăрăн ероплансене курсан, эсир тупăсенчен пенине илтсен, эпир епле савăннине каласа та пама çук. Халь çитеççĕ, халь çăлăнатпăр, терĕмĕр пĕрне пĕри.

— Нимĕçсем ку хушăра пушшех урса кайрĕç. Килхушшисенчен те кăларми пулчĕç пире. Пĕр-пĕрин патне çӳреме те чарчĕç. Тăвата çынна, каç пулсан урама тухнăшăн, „партизансем патне кайма хатĕрленнĕ“ тесе, пĕр виселица çинех çакрĕç. Темиçе хĕрарăма вилес пек хĕнесе тăкрĕç. Çавăнтах яла хыпар çитрĕ: чакнă чух нимĕçсем пĕтĕм пурлăха, ним юлмиччен çаратса тухаççĕ, çынсене хăйсемпе пĕрле хăваласа каяççĕ, терĕç. Çакна илтсен вара ялçыннисем вăрмансене тарма тапратрĕç. Кашни каç—çĕрĕ-çĕрĕпе—шурлăхсем урлă, чăтлăхсем витĕр сĕм вăрмансене тарчĕ халăх. Ачи-пăчипе, выльăхĕ-чĕрлĕхĕпе пĕрлех тарчĕ. Тăшмансем ĕретлĕн сиссе те юлаймарĕç ăна—ик каçра ял пуш-пушах пулса юлчĕ...

— Эпĕ те тарма хатĕрлентĕм. Кӳршĕпе калаçса татăлнăччĕ ĕнтĕ, вăл мана хăйçемйипе пĕрле илсе кайма пулчĕ,—ик пĕчĕк ачапа пĕччен малтанах тухса каяймарăм эпĕ. Анчах кайрат та ĕлкĕрме пулмарĕ...

Пур-çук тырра пахчана алтса чикрĕм çеç, килхушшине старостапа виçĕ нимĕç пырса кĕчĕç.

— Атя! — терĕç кăна вĕсем.

— Ăçта? — тесе ыйтрăм эпĕ. Хамăн чĕре çĕçĕпе чикнĕ пекех ыратса кайрĕ.

— Ăçтине кайран курăн, ут! — кăшкăрса пăрахрĕ староста.

— Ачасене никампа хăварма çук-çке...

— Ачусем те пĕрлех пыччăр!

Ним те калаймарăм вара, ачи-пăчипех тухса утрăм. Лекрĕм ĕнтĕ, тинех хăтăлаймастăп, пĕтрĕм, тесе пытăм ăшăмра. Чĕре тĕрĕссинех сиснĕ мĕн, пире чăнах та, ятарласах, вĕлерме илсе кайнă...

— Мăн урама тухсан пĕр килхушшине кӳртрĕç те, йăпăр-япăр пӳрте хупса лартрĕç. Унта пирĕн пеккисем — ватти-вĕтти — пĕр 20—30 çын лараççĕ те иккен. Кăшт тăхтасан тата тепĕр 10—12 çынна илсе пычĕç. Тĕрмене хупнă пекех — тĕксе кӳртеççĕ те, тул енчен питĕрсе лартаççĕ. Алăк патĕнче пăшаллă салтак тăрать.

Тытăнтăмăр пĕр-пĕрин хушшинче пăлханса калаçма...

— Ма илсе килчĕç пире кунта?

— Мĕн тума шутлаççĕ-ши ĕнтĕ?

— Ним айăп та çук-çке пирĕн...

— Германие хăваласа каяс теççĕ пулсан — ĕçлеме юрăхсăр эпир, пур ватăпа вĕтĕ кăна.

— Тем тесен те, ырра мар-ха ку!

Çак сăмахсене калама ĕлкĕрнĕччĕ çеç — сасартăк чӳрече кантăкĕ чăнкăрр! — турĕ те, урай варрине граната ӳксе шартлатрĕ. Çулăм, тĕтĕм, этем кĕлеткисем, вăркăннă япаласем — пĕтĕмпех хутăшса кайрĕ. Пĕрисем ыратнипе çухăрма тытăнчĕç, теприсем хăранипе кăшкăрса ячĕç. Халь ĕнтĕ пире кунта мĕн тума хăваласа пухни сăмахсăрах паллă пулса тăчĕ...

— Эпĕ пĕр ачине тытрăм та, чӳрече витĕр сикес тесе ыткăнтăм. Анчах чӳрече тĕлне çитсенех, мана хирĕç пăшал сасси кĕрслетрĕ. Пуля тăнлава чавса кайрĕ, эп

ӳкрӗм. Ҫав хушӑра ыттисем пӗр харӑс алӑк ҫине пырса тӑрӑнса, алӑка петлисенчен кӑларса ывӑтма ӗлкӗрнӗ. Ҫиччӗн-саккӑрӑн пӗр харӑс сиксе тухрӗҫ пулмалла. Татах, умлӑн-хыҫлӑн, пӑшал сассисем янраса кайрӗҫ. Эп тӗтӗм ӑшӗнче урай тӑрӑх упаленсе, хам ачасене шырама тытӑнтӑм. Аслине тупрӑм—вилӗ выртать, граната шӑпах ҫамкинчен лексе ҫӗмӗрсе пӑрахнӑ. Унтан кӑшт аякка-рахра—кӗҫӗннине тупрӑм. Вӑл сывлатчӗ-ха. Вара ӑна часрах ҫавӑрса тытрӑм та—тулалла сиксе тухрӑм. Сисмен те, ҫав вӑхӑтрах пӳрте вут хыпса илнӗ иккен, нимӗҫсем хыптарса яма та ӗлкӗрнӗ ӑна.

— Самантлӑха та чарӑнса тӑмарӑм эпӗ, часрах сарай хыҫнелле, пахчаналла чупрӑм, анчах пӗрре пӑхса илнипех куртӑм: пӳртрен сиксе тухнисем килхушшинче хӑшӗ вилӗ выртатчӗҫ, хӑшӗ юлашки хут тапаланатчӗҫ. Икӗ нимӗҫ пӗр старике алли-уринчен тытса, ҫунакан пӳрт патнелле чупса кайрӗҫ—вутта ывӑтма ӗнтӗ, сарай кӗтессинче тепри парӑнман ҫамрӑк хӗрарӑма ман куҫ умӗнчех кӑкринчен штыкпа чикрӗ...

— Эп тартӑм. Вӑй ӑҫтан тухнине те пӗлместӗп. Питӗ хытӑ чупрӑм. Хыҫалтан пӗрмай печӗҫ, пульӑсем сӑпсасем пек вӗҫсе иртрӗҫ, пӗри хулпуҫҫие шӑтарса кайрӗ, ӳкрӗм, анчах ҫав самантрах каллех тӑрса чупрӑм. Ҫырма хӗррине ҫитсен, ҫӳллӗ ҫыранран сикрӗм, мӑй таран шыва кӗрсе кайрӑм—ҫапах та хӑтӑлтӑм, ҫитеймерӗҫ мана. Шыв урлӑ каҫса вӑрман патне ҫитсен, ачана ҫӗре хурса, вӑл сывви сывӑ маррине пӑхрӑм. Вилсе кайнӑ иккен, мӗскӗн, тӳсей-мен унӑн пӗчӗк чӗри!

— Хытӑ макӑртӑм... Унтан ачан кӗлеткине ҫӗклерӗм те, ирччен ӑҫта та пулин ҫитсе тухӑпах, кам та пулин мана хӗрхенсе ачама этем ӗретлӗ пытарма пулӑшех, тесе—тӳрӗ-рен тӳрӗ хӗвелтухӑҫнелле утрӑм. Кунта вара сире, хамӑрӑн тӑвансене тӗл пулма тӳр килчӗ... Хуйхӑм та чакнӑ пек пул-чӗ сире курсан, чӗре ыратни те ҫемҫелнӗн туйӑнчӗ...

Хӗрарӑм к[illegible]ама чарӑнчӗ. Шӑп пулчӗ таврара. Пирӗн-нисем нума[illegible] шӗ тарӑнӑн сывласа яни илтӗнчӗ.

— Урăх пире нимĕн те каламăн-и, кинемей?—ыйтрĕ комбат.

— Мĕн калам ĕнтĕ? Ахаль те пĕтĕмпех каларăм...— терĕ хĕрарăм.

...Чăнах та çав, урăх пире нимĕн те калама кирлĕ пулман. Пирĕн чĕресем ахалех тулса çитрĕç. Ун хăрушă калавне итленĕ чух—пире ăнсăртран тĕл пулнă хĕрарăм мар, хамăр ирĕке кăларма пуçланă пĕтĕм Украина, пĕтĕм Белоруççи,—Днепрăн леш енче чуралăхра хĕкхур куракан пĕтĕм совет çыннисем хăйсен асапĕсем çинчен кăшкăрса, хăйсене часрах хăтарма чĕннĕн туйăнчĕ. Пирĕн ăшра çак вăхăтра мĕнешкел вĕри курайманлăх, хаярлăх вĕресе хăпарнине каласа та пама çук.

Никамран малтан Калуга вырăсĕ Берёзкин сиксе тăчĕ.

— Комбат юлташ, мĕн туса ларатпăр эпир кунта?— терĕ вăл, пурне те пăхса çавăрăнса.

Ун хыççăн украинец Раздобудько тăчĕ:

— Эп текех тӳссе тăраймастăп!

— Атьăр часрах малалла!—пĕр харăсах çĕкленчĕç грузин Павлишвилипе казах Эрмамбетов.

— Малалла илсе кай, комбат юлташ!

— Ниепле канăç та кирлĕ мар пире!

— Халех çав яла çавăрса илер, тен нимĕçсем халь те пирĕн çынсене çунтараççĕ пуль...

— Пĕр самант та тăхтас мар!

Темиçе секундра пĕтĕм батальон йĕркеленсе тăчĕ, команда та кирлĕ пулмарĕ ăна валли. Пăлхавлăн калаçнине, хăвăртрах тапранмашкăн шавлăн хатĕрленнине лăплантарма çеç команда пачĕ комбат.

Вара, эпир кăшт шăплансан, каллех шур çӳçлĕ хĕрарăмăн сасси илтĕнчĕ.

—Васкăр, ывăлăмсем, часрах кайăр! Хăтарăр хамăрăн çынсене, вĕсем кĕтеççĕ сире! Ниçта та, ним умĕнче те чарăнса ан тăрăр!..

Эпир хусканса кайрăмăр... Çур сехетрен пирĕн батальон ял çывăхĕнче кăкăр таран шывлă çырма урлă чупса

kaçpĕ. Темиçе минутран яла штурмлама тапратрĕ. Нимĕçсем темрен те печĕç пирĕн çинелле, анчах усси пулмарĕ—пирĕн хаярлăх вĕсен пулемечĕсемпе автомачĕсенчен нумай вăйлăрах пулчĕ.

Çав каçхи пек хăватлăн „урра“ кăшкăрнине нихçан та илтменччĕ эпĕ. Пирĕн автоматсен кĕпçисем нихçан та ун пек хĕрменччĕ. Унччен малтан, тен, эпир нихçан та çакăн пек хаяррăн çапăçманччĕ-и...

Ирччен ялта пĕр нимĕç те юлмарĕ. Тарса ўкрĕç тесе ан шутлăр. Пурте çав ялтах выртса юлчĕç,—кайран пирĕн „масар команди“ вĕсен виллисене ял хыçĕнчи çырмана икĕ кун турттарчĕ, тет.

Хамăр эпир татах малалла кайрăмăр.

Хăлхара яланах вăрманта тĕл пулнă вата хĕрарăмăн сăмахĕсем янрарĕç:

—Васкăр, ывăлăмсем... Хăтарăр хамăр çынсене, вĕсем сире кĕтеççĕ...

Октябрь, 1943.

# Юрă пурĕпĕр янранă...

Эпир Днепр шывĕн сылтăм енче, çÿллĕ сăрт çинче ларăттăмăр. Каç пулатчĕ ĕнтĕ, леш енчи кÿлĕсемпе шурлăхла вырансенчен ерипен пăс пек тĕтре çĕкленсе хăпарма пуçланаччĕ, анчах Днепр пирĕн умра темĕн пысăкĕш тăрăхла тĕкĕр пекех çутăлса выртатчĕ.

Сулахай çыранран паром килессе кĕтсе, эпир—виçĕ офицер, пурте хамăр аслă Союзăн тĕрлĕ выранĕсенче çуралса ÿснĕскерсем—чаплă та хăватлă Днепрăн илемĕ çине пăхса лартăмăр. Икĕ çул ытла кунта нимĕçсем пулнă, хăйсен ирсĕр карланкисене Днепрăн таса шывĕпе киллентернĕ, анчах икĕ кун каялла эпир вĕсене кунтан ĕмĕрлĕхех хăваласа ятăмăр. Днепр каллех совет шывĕ пулса тăчĕ, хăйĕн чăн-чăн хуçисен аллине куçрĕ, каллех ирĕккĕн сывла пуçларĕ...

Днепр çине уяр çанталăкра çÿллĕрех вырăнтан пăхса тăнă чух, нимрен малтан Гоголĕн вилĕмсĕр произведенисем аса килеççĕ: ун çинчен никам та Гоголь пек çырайман вĕт-ха... Çак каçхине те, сăртран аялалла, Днепрăн илемне таçта çитиех, пĕтĕмпех курса ларнă май, мана ача чухнех вуласа вĕреннĕ сăмахсем аса килчĕç. Хăйсене тĕллĕнех çăвартан тухса кайрĕç вăл сăмахсем:

— Чуден Днепр при тихой погоде...

Юлташсенчен пĕри те шарламарĕç, малтанхи пекех Днепр çинчен куç илмесĕр пăхса ларчĕç. Чылайран тин вĕсенчен пĕри, хăй ĕмĕрĕ тăршшипех цифрăсем шутласа

пуранна пулин те поэзие питĕ юратаканскер, пуçне ман еннелле çавăрчĕ те:

— Урăхла калас пулать халь,—терĕ.

— Мĕншĕн? Гоголь çапла çырнă вĕт?—ыйтрĕ унтан виççĕмĕш юлташ.

— Пулин. Эп çапла калăттăм: чуден Двепр при всякой погоде, когда он .. советский.

— А-а, ку тĕрĕс ĕнтĕ!—кăмăллăн кулкаласа илтĕмĕр эпир.

Çав вăхăтра, сасартăк, Днепрăн леш енче, улăхра, шурлăхлă вырăнсенче ӳсекен çӳçе тĕмĕсем хушшинче такэмăн илемлĕ, уçă сасси янраса кайрĕ. Çивĕч сунатлă кайăк пек çӳлелле вĕçсе хăпарчĕ юрă айлăмран, таса шыв юххи пек уççăн янкăртатма тапратрĕ.

> Ай-хай вăйлă шыв—аслă Днепр-шыв!—
> Килсе çитрĕмĕр, кĕтсе ил пире...

— Ак япала!—терĕ çак сăмахсене уйăрса илсенех иккĕмĕш юлташ.—Готово!

— Мĕн—готово?

— Юрра улăштарма та ĕлкĕрнĕ! Ун сăмахĕсем пачах урăхлаччĕ, пит лайăх пĕлетĕп... Ăна пирĕн полкри хор хĕлĕпех юрласа пурăнчĕ. Унта „сан пата пыратпăр", тенĕ...

— А халь ĕнтĕ килсе тухрăмăр та, улăштармаллах çав,—терĕм эпĕ. Ху ав Гоголе те улăштарма тытăннă та!

— Пожалуй, тĕрĕс те пулĕ...

Юрă çаплах янрарĕ. Эпир ăна калама çук тинкерсе, ăшăпа пиçнĕ çын шыв ĕçнĕ пек итлесе лартăмăр. Вăл пирĕн пĕтĕм шухăшсене, кăмăла, туйăмсене çавăрса илчĕ. Юррăн юлашки сăмахĕсем каçхи шăплăхра таçта инçете-инçете янраса кайса çухалсан тин сăмах хушма хал çитрĕ пирĕн.

— Аван юрă...—терĕ иккĕмĕш юлташ.—Анчах сăмахĕсем тупата урăх, малтавхи мар.

— Творчество, мĕн тăвассу пур...—ответ патăм ăна.

— Тĕрĕс, творчество... Халăх творчестви, халăх пултаруллăхĕ,—килĕшрĕ вăл.

Калаçăва виççĕмĕш юлташ хутшăнчĕ.

— Халăх творчестви, ман шутпа, çĕр айĕнчен тапса тăракан çăлкуç пекех,—терĕ вăл.—Çăлкуçне пĕр çĕртен питĕр—вăл тепĕр вырăнтан тапса тухать... Ку та çавнашкалах. Темиçе кун каялла пĕр ялта мана питĕ тĕлĕнмелле, чĕрене тивекен истори каласа пачĕç. Ешĕл эп çырма пултаракан çын пулнă пулсан, кун çинчен тупата ĕретсĕр хăватлă поэма çырнă пулăттăм. Кам пĕлет, тен кайран нумайăшĕсем çырĕç-ха...

— Мĕнле пит чаплă истори вара вăл? Мĕн çинчен? Пĕлме юрать пулсан, тен пире те калăн?

Ку офицер—сапёр-разведчиксен взводĕн командирĕ пулнă. Хамăр ирĕке кăларакан ялсене вăл час-часах никамран малтан, пехотăран та малтан пырса кĕнĕ, çулйĕрсене тĕрлĕ минăсемпе „сюрпризсенчен" тасатнă. Ялсенчи совет çыннисемпе тĕл пулса калаçса—тĕрлĕрен хыпарсене вăл пуринчен малтан пĕлнĕ. Çавăнпа та халь, вăл „пĕр истори" тесенех, эпир ун çине пысăк интереспа пăхса, калавне кĕтрĕмĕр...

— Хура виселицăллă яла астăватăр-и эсир?—тесе ыйтрĕ вăл пирĕнтен, хăй калавне пуçличчен малтан.—Кунтан пĕр вунă-вуник çухрăмра, питех те илемлĕ шыв хĕрринче, улăхра... Чăнах та, ялĕ çук ĕнтĕ, нимĕçсем чакса кайнă чух ăна ним юлмичченех çунтарса янă, пĕр виселица кăна—нимĕçсен тискерлĕхĕн символĕ пек—тăрса юлнă...

— Астăватпăр-çке.

— Вот, шăпах çав ялта пулнă ку тĕлĕнмелле истори. Ăна мана халь çеç вăрмантан тавăрăннă хĕр-партизансем каласа пачĕç. Калаçăвĕ те çав хура виçелицăран пуçланса кайрĕ... Нимĕçсем ку яла пырса кĕрсен, ытти çĕрти пекех, кунта та пĕтĕм пурнăça вилĕм сывлăшĕ пусса илнĕ. Çынсем—чĕрĕ чунсем пек мар, мĕлкесем пек çеç çӳренĕ, килĕсенчен тухма та, саспа калаçма та хăранă, мĕншĕн тесен кашни сапур çинчех нимĕç коменданчĕн

хура свастикăпа çирĕплетсе лартнă приказĕсем çакăнса тана. Вĕсенче пуринче те икĕ сăмах уйрăмăнах курăнна: „юрамасть“... тата „персе вĕлеретпĕр...“ Этемĕн чун-хавалĕ çĕкленнине кăтартакан паллăсем—кулăпа юрă кунта пуçĕпех манăç пулнă, таçта çĕр тĕпне анса кайнă пекех çухалнă. Çынсен кăмăлĕсем кĕрхи тĕттĕм каç пек пулса тăнă. Вĕсем кашни утăмра хăраса, кашни самантрах пуç çине çĕнĕрен çĕнĕ хурлăх йăтăнса анасса кĕтнĕ...

Ял варринче, колхоз правленийĕ пулнă çуртра, нимĕçсен коменданчĕ пурăнна. Унăн кашкăр тĕслĕ виçĕ йытăовчарка пулнă, вĕсемсĕр вăл пĕр утăм та ярса пусман. Кашни йытă пуçнех тата пĕрер полицейски пулнă. Каçкаç вара масар шăплăхĕпе тулнă ялта çав коменданг çуртĕнчен тухакан музыка сасси—пытару кĕвви пек янранă. Музыкăна питĕ юратнă тет вăл комендант! Кашни каçах пӳрт умĕнчи пахчана хăйĕн хаклă йышши аккордеонĕпе*) тухса ларса, вĕçĕ-хĕррисĕр епрешке вальссем вылянă, хăй таçта консерваторине ылттăн медальпе пĕтерсе тухнипе мухтанна, тет... Каçхине музыкăпа киллексе ларнă хыççăн вара—ирхине пирĕн колхозниксене ватти-вĕттипех йытăсемпе ĕçе хăваласа тухнă, кам та пулин кăшт айăпа кĕрсенех вилсе кайиччен çаптарнă, аллисене каялла çыхса нӳрĕк подвала пăрахнă, стариксен сухалĕсене çунтарнă, çамрăк хĕрарăмсене темиçешер куна чĕчĕ ачисенчен уйăрнă—тем те пĕр, пурне каласа та пĕтерес çук!

Чылай вăхăт çапла пурăннă вăл. Ĕнтĕ, ку вырăнсенче ĕмĕрлĕхех тымар яма та шут тунă пулмалла—хăйне валли чи лайăх çĕрсене суйлама тытăннă. Анчах тăруках унăн пур ĕмĕчĕсем те кутăн-пуçăн çаврăнса ишĕлсе аннă, юлашкинчен хăйĕн те кунтан тухса тарма тивнĕ...

Пĕтĕм ĕç юрăран пуçланса кайнă.

Çуллахи пĕр лăпкă каçхине çак сысна аçи пек самăр нимĕç-комендант пӳрт умĕнчи пахчара хăйĕн вальсĕсене

---

*) Баян евĕрлĕ—музыка инструменчĕ.

выляса пĕтернĕ хыççăн çывăрма кĕме хатĕрленнĕ-мĕн. Çав вăхăтра, пачах та кĕтмен çĕртен, яла икке уйăракан çырман тепĕр енчи урамра питĕ вăйлă, уçă хĕрарăм сасси юрласа янă:

И-эх! Аслă шывăн çийĕпе
Акăшсем ишеççĕ.
Тарăр, йытă нимĕçсем,
Хĕрлисем килеççĕ.

Комендат сасартăк юман юпа пек хытса тăнă. Мĕн пулса иртнине ниепле те ăнланайман вăл, ăнтан тухса кайнă качака таки пек унăн-кунăн пăхма пултарнă çеç... Ăна пăхăнса тăракан ялта тахăшĕ юрă юрлама хăюллăх çитерне! Нихçан шутламан, кĕтмен япала! Бунт вĕт ку, пăлхав! Епле пулма пултарнă-ха кун пек хăрушă ĕç?!

Комендант пĕрре кăвакарса, тепре хĕрелсе кайнă, унăн çамки çине шултра тар тапса тухнă. Леш енчи юрă çаплах янранă:

Ту çинче тăрать машина,
Улăхра—пĕр танкĕ.
Ман савниййĕм партизан,
Хам та партизанка.

Ман савниййĕм паттăр яш,
Хам та паттăр хĕр эп,
Иккĕн иккĕ тыттарсан—
Юлмĕ фашист чĕррĕн.

Нимĕç ку юрра ăнланман, анчах çине-çинех „партизан" тени ун хăлхине аванах пырса кĕнĕ. Шăнтакан чир ернĕ пек сиксе чĕтреме тытăнса, вăл часрах пÿрте чупса кĕнĕ. Пÿртре никам та пулман. Ку ăна пушшех хăратса пăрахнă. Вара вăл стена çинчи пăтаран автомата илсе урама каялла сиксе тухнă та, ним тĕлсĕрех—юрă илтĕннĕ еннелле черет хыççăн черет кăларса яма тытăннă...

Автомат сассине илтсе, ун патне хăйне сыхласа пурăнакан полицейскисенчен пĕри ыткăнса пынă.

— Мĕн пулнă? Кама перен?

— Илтместĕн-и мĕн, пăхăр çамка!—кăшкăрса пăрахнă ăна комендант.—Ав!

Полицейски пуçне комендант тĕллесе кăтартнă çĕрелле çавăрса, унпа пĕрлех итлеме тытăннă. Вăйлă та уçă хĕрарăм сасси халь те чарăнман, çаплах юрланă...

И-эх! шăнкăр-шăнкăр шывĕнче
Тутăра çăватăп.
Партизан пулсан—каятăп,
Полицай çине—суратăп!

Хамăн партизанăмпа
Çурçĕрччен çўреттĕм.
Халĕ пире уйăрчĕç—
Полицайсем—йытăсем.

— Мĕн çинчен юрлать вăл сысна?—хаяррăн ыйтнă полицейскисенчен урса каяс патнех çитнĕ комендант.—Партизансем çинчен пулас? Вĕсене мухтать пуль-ха!

— Тĕрĕс, господин комендант...—тенĕ ăна хирĕç полицейски тутисене аран хускатса.

— Мĕн тĕрĕс?!

— Мухтать...

— А пире хурлать пуль?

— Пуринчен ытла пирĕн йышшисене...

— Агитаци эппин? Бунт?

— Çапла пулса тухать...

Комендант бомбĕжкăран тарма хатĕрленнĕ пек унталла-кунталла пăхса, хашка-хашка чупкаланă. Унтан тăрук полицейскисем çине сиксе ўкнĕ:

— Мĕн пăхса тăратăр? Мĕн кĕтетĕр? Сире çавăншăн çăкăр çитерсе усратăп-и эп? Халех кайса тытса килĕр вăл партизан юрăçине—мунча кўртем эп ăна. Кĕçĕрех çакатăп. Марш!

Полицейскисем комендантăн йыттисене ертнĕ те, юрлакан хĕрарăма шырама чупнă. Унталла ыткăннă, кунталла, ăнсăртран тĕл пулакан çынсенчен ыйтнă ун çинчен, юрăçă камне тата вăл ăçтине каласа памасан хăй-

сене тытса хупассипе, çаптарассипе хăратнă, анчах никам та пулăшман вĕсене. Юрăçă çĕр тĕпне путнă пекех çухалнă... Ир енне сулăнсан вара йĕп-йĕпе тара ÿкнĕ полицейскисем хăйсен хуçине салхуллăн пырса пĕлтернĕ:

— Тупаймарăмăр... Ялтан тухса кайнă пулмалла.

— Тухса кайнă пулсан — аванччĕ, — тенĕ комендант, кăштах лăпланса. — Анчах астăвăр — эп вăл хĕрарăм сассине тепре илтсен, никамран малтан сире лекет!

— Çук ĕнтĕ, урăх юрлаттармăпăр, — сăмах панă ăна полицейскисем.

Анчах вĕсем ун пек шантарма ытлашши васканă.

Çакăнтан пуçласа — кашни каç тенĕ пекех, çĕр çине хура шăналăк пек тĕттĕмлĕх шуса ансан, çав хĕрарăмăн сасси янранă. Паян — пĕр çĕрте, ыран — тепĕр вырăнта. Юррисем унăн пурте нимĕçсекчен мăшкăллакан юрăсем пулнă, вĕсене пăхăнмасăр пурăнма, вĕсене хирĕç кĕрешме чĕннĕ...

Çакăнтан пуçласа — комендант ыйхине çухатнă, хĕрарăмăн сасси илтĕнсен вăл ниçта к..са кĕрейми пăлханнă, полицейскисене ял тăрăх хăйĕн йыттисемпе пĕрле чĕлхисене кăларса яричченех чуптарнă.

— Тупăр! Тытăр! Илсе килĕр!..

Усси пулман. Темле шырасан та, хĕрарăм-юрăçă тупăнман. Полицисем ял тăрăх ыткăнма тытăнсанах юрă чарăннă, анчах çитес каçхине ун сасси каллех илтĕннĕ.

Комендант приказ кăларнă: „Юлашки вăхăтра каç-каç ялта киревсĕр юрăсем илтĕнеççĕ. Германи влаçĕсен ячĕпе — юрлама чаратăп. Кашни юрлакан çынна партизан вырăнне шутласа, тытсанах вĕлеретпĕр“.

Ку та пулăшман. Юрă пурĕпĕр янранă...

Çакăнпа пĕрлех, таврара партизансем пирки ытларах илтĕнме пуçланă. Кунта — поезда çырана сиктернĕ, лере — нимĕçсен обозне тапăннă, тепĕр çĕрте полицейскисене çапса пăрахнă. Халăх вĕсем çинчен çав тери хавасланса калаçнă, куншăн чĕререн савăннă.

Комендант кунран кун хытăрах хăракан пулса пынă. Хăйне сасартăк пырса тапăнасран, вăл хăй пурăнакан çурта тавра этем ытамне кĕмен юман пĕренесенчен икĕ ĕретлĕ çӳллĕ сапур — чăн-чăн крепость тутарнă. Ялти пĕтĕм халăха пĕр чарăнмасăр пилĕк кун та пилĕк каç ĕçлеттернĕ вăл. Виçĕ полицейски вырăнне ун патĕнче 25 жандарм пурăнма тытăннă.

Çапах та, малтанхи лăпкăлăх каялла таврăнман...

Нимрен ытла, каçхи тĕттĕмлĕхре пĕтĕм халăх сасси пек янракан юрă ăнран кăларнă ăна. Вăл юрă уншăн чĕререн çивĕч çĕçĕпе чикнĕпе пĕрех пулнă!

Облава хыççăн облава тума тытăннă комендант. Епле пулсан та, вăл çав юрра путлантарма тăрăшнă.

Ептĕ темиçе хĕрарăма та сĕтĕрсе пынă ун патне жандармсем. Вĕсене кашниех хĕненĕ, темĕн тĕрлĕ асаплантарнă — юлашкинчен вĕсем айăплă марри паларнă, мĕншĕн тесен хĕрарăмсем комендатурăра ларнă вăхăтра юрă каллех çуралса тухнă.

Ялта мĕн пулса иртнĕ — çавăн çинчен янранă вăл...

Пĕринче, полицейскисем таврари ялсенчен тĕрлĕ пурлăх, апат-çимĕç çаратса таврăннă чух, вĕсене партизансем тапăннă. Лавĕсене туртса илнĕ, хăйсене питĕ хытă тӳпкесе янă. Çав каçах юрăçă çавăн пирки тăрăхласа юрлагă:

Полицайсем чыс тăвасшăн
Коменданта — нимĕçе.
Партизансем тытрĕç те —
Хăлха чикки пачĕçĕ.

Партизансем-йĕкĕтсем
Ялсене пыраççĕ,
Полицайсене тытса
Шаккаса хураççĕ.

Сасартăк, нимĕçсем ялти çамрăксене Германие чуралăха ăсатма тапратнă. Нимрен те пысăк хурлăх пулнă ку. Кашни килтех куççуль тăкăннă, кашни çемьерех хăй-

сен ачисене хӑтармалли меслет шыранӑ. Ҫав шиклӗ вӑхӑтра каҫсерен ялҫыннисем ҫапла юрӑсем илтнӗ:

Атте-анне, сывӑ пулӑр,
Уйӑраҫҫӗ-ҫке пире,
Чурана ярас пире.

. . . . . . . . . . . . .

Ҫывӑх мар Берлинӑн ҫулӗ,
Тух, аннем, ӑсат хӗрне...
Сывпуллашӑпӑр эпӗр куҫҫуллӗн,
Кам пӗлет,—тен, ӗмӗрнех.

Ку юрӑсем халӑх хушшинче тата ытларах кичемлӗх сарнӑ, хӑрушлӑх мӗн тери пысӑккине тавҫӑрса илме пулӑшса пынӑ. Вара Германие ӑсатма палӑртнӑ ҫамрӑксем ӑҫта кирлӗ унталла тарма тапратнӑ. Ҫынсем хӑйсем каланӑ тӑрӑх, вӗсем пурте партизан отрячӗсене кая-кая кӗнӗ иккен.

Комендант халь тем тума та хатӗр пулнӑ. Вӑл пурне те персе вӗлеретӗп, яла тӗппипех ҫунтарса яратӑп, тесе юнама тытӑннӑ.

— Тупса парӑр мана ҫав юрлакана!

Ку та усӑ кӳмен ӑна. Пӗр сӑмахпа ҫеҫ ответ панӑ ӑна ҫынсем:

— Пӗлместпӗр...

Вара комендант чееленме шут тытнӑ. Вӑл кашни каҫах ялӑн пур кӗтессисене те засадӑсем лартма тытӑннӑ. Кашни 2—3 кил хыҫӗнчех автоматлӑ кашкӑр сыхласа ларнӑ. Ҫапла майпа, пӗр тӗттӗм каҫхине юрӑҫа тытнӑ-тытнах. Пысӑк садри йывӑҫсем хушшине пытаннӑ хӗр пӗр ҫаврӑм ҫеҫ юрлама ӗлкӗрнӗ мӗн, сасартӑк ун умне тӗттӗмлӗхрен виҫҫӗн-тӑваттӑн сиксе тухнӑ. Ниҫталла та тарайман вӑл. Ӑна ҫавӑнтах ҫапса ӳкерсе, прикладсемпе хӗнесе тӑкнӑ, таканлӑ атӑсемпе таптанӑ, унтан, юнланса пӗтнӗскере, аллисене каялла ҫыхса, комендант патне сӗтӗрсе пынӑ. Лешин вара хӑйӗн куҫӗсене те ӗненес кил-

мен... Ун умӗнче тӗлӗнмелле илемлӗ, сап-сар ҫӳҫлӗ, сутӑсенкер куҫлӑ ҫамрӑк хӗр тӑнӑ. Ҫавракa пичӗ тӑрӑх унтан та кунтан юн сӑрхӑннӑ... Ҫавӑнтан хӑраса пурӑнма тивнӗ иккен ӑна!

Тем вӑхӑтченех пӑхса тӑнӑ ун ҫине ӑнран тухса кайнӑ комендант. Унтан сасартӑк, урнӑ кашкӑр пек пулса кайса, вӑл хӗре кӑкринчен чышса ӳкернӗ, мамӑк евӗр ҫемҫе ҫӳҫӗсенчен тытса урай тӑрӑх сӗтӗрме тапратнӑ, тапнӑ, ҫапнӑ... Ывӑнсан, пӗлми пулса ҫите пуҫланӑ хӗре вӑйпах ҫтена ҫумне тӑратса, тимӗр пек сивӗ пӳрнисемпе ӑна пырӗнчен пӑчӑртаса лартнӑ:

— Юрла ӗнтӗ! Хӑвна епле ҫакасси ҫинчен юрла!..

Хӗр юлашки вӑйӗсене пухса, ун ҫине вӗри курайманлӑхпа пулнӑ куҫӗсемпе пӑхса илнӗ. Ним те шарламан. Унтан коменданта питӗнчен лач! сурнӑ...

Кун хыҫҫӑн ӑна ӗпле асаплантарнине никам та пӗлмест, мӗншӗн тесен комендант хӑй пӳлӗмӗнчен жандармсене те хӑваласа кӑларнӑ. Анчах хӗре вӑл ҫав тери тискеррӗн пусмӑрлананӑ хыпар сарӑлнӑ.

Тепӗр кунне ӑна валли ятарласах виселица тунӑ та, ҫакса вӗлернӗ. Ҫакнине пӑхса тӑма пӗтӗм халӑха хӑваласа пухнӑ. Хӗрарӑмсем куҫҫулӗсене ҫӑтса, ӗсӗклесе тӑнӑ, арҫынсем шӑлӗсене ҫыртнӑ, вӗсен чышкисем хӑйсен тӗллӗнех чӑмӑртаннӑ...

Комендант питӗ хаяррӑн сӑмах калanӑ, халӑха вӗҫӗмсӗр юнанӑ, темӗн тӗрлӗ хурлӑхпа асап сӗннӗ.

— Юрлама мар, пӗр сӑмах калайми тӑватӑп сире! Тӗрмере ҫӗртетӗп, пӗрерӗн ҫакса пӗтеретӗп!

Хулӑм вӗренпе пӑвса ҫакнӑ хӗр-юрӑҫӑн ылттӑн ҫӳҫӗсем каҫ пуличченех хӗвел ҫуттинче ялтӑртатса тӑнӑ. Каҫ пулсан, хӗрӗн виллине вӑрласа каясран хураллама, комендант виҫӗ полицейскине кӑларса тӑратнӑ. Каҫӗ ӑшӑ, лӑпкӑ пулнӑ, пӗлӗтре ҫӑлтӑрсем ялкӑшнӑ, таса тӳпене тулли уйӑх ярӑнса тухнӑ... Хурлӑх пусса илнӗ ял хӑрушла шӑплӑха путнӑ. Ниҫта та пӗр сас та илтӗнмен...

Сехет хыҫҫӑн сехет шунӑ ҫапла. Унтан сасартӑк, инҫет-

ре те мар, юрă çуралса тухса, калама çук вăйлăн янраса кайнă. Каллэх хĕр сасси юрланă:

Ялпа сывпуллашрăмăр, хирпе сывпуллашрăмăр,
Тухрăмăр та карăмăр çилĕ пытарса.
Кĕтĕр тăвансем пире, кĕтĕр савнисем пире,
Таврăнăпăр тăвăл пек—нимĕçе шăлса!

Çĕрле ял çине таçтан бомба пырса ӳкнĕ пекех пулнă вара ку. Виселица патĕнчи часовойсем пĕр-пĕрин патне чупса пырса йăпшăннă. Тĕлĕкре аташса выртакан комендант, юрра илтсе, хăйне такам пуçран çапнă пек сиксе тăнă. Пур нимĕçсем пекех тĕшмĕш пулнăскер, вăл ку юрра виселица çинчи хĕр юрлать пуль, тесе шутланă.

— Жандармсем! Ганс, Эрих, Фридрих! — çухăрса янă вăл. Кам юрлать? Ăçта юрлать? Илтетĕр-и эсир мĕн те пулин?

— Илтетпĕр, анчах камне пĕлме пултараймастпăр, — тесе ответ панă лешсем.

— Кайса пăхăр — çакни юрламасть-и? Большевиксенчен тем те кĕтме пулать... Вĕсем вилсен те хăрушă пирĕншĕн!

— Унта виçĕ часовой тăраççĕ, господин комендант...

— Кайса калăр, чарччăр ăна! Юрлать пулсан — тепĕр хут персе вĕлерччĕр!

— Ун пек пулма пултараймасть, господин...

— Ан вĕрентĕр мана, эп сирĕнтен лайăхрах пĕлетĕп. Юрă çаплах илтĕннĕ, вăл чарăна пĕлмесĕр янранă. Комендант хушнипе çав самантрах пĕтĕм гарнизона ура çине тăратнă, жандармсем ниçта кайса кĕрейми чупкаланă, автоматсенчен ним ĕретсĕр пеме тапратнă. Юрă пĕр вăхăтлăха чарăннă, анчах тепĕр çур сехетрен каллех çуралса тухнă.

Çутăличченех шавланă нимĕçсем, ирччен те лăпланайман. Ирхине вара комендант хĕрĕн вилĕ кĕлеткине часрах виселица çинчен антарса, масар çине кайса чикме хушнă.

— Çĕр айĕнчен кăшкăраймĕ!

Хӗре выльăх пекех, тупăксăр-мӗнсӗрех пытарнă, çитменнине — вăрттăн, ялçыннисем сисиччен.

— Халь тин сасси илтӗнеймӗ ӗнтӗ, кансӗрлеймӗ мана, — тенӗ комендант. Хăраса пурăннине сирсе ярас, пăлхануллă самантсене манас, тесе, вăл эрех ӗçсе лартнă. Каçалла сулăнсан, иртнӗ вăхăтсенчи пекех аккордеонне çӗклесе, пӳрчӗ умӗнчи пахчана тухса ларнă. Каллех хăйӗн епрешке вальсӗсене выляма пуçăннă. Унăн пуçӗнче каллех çак пуян вырăнсенче помещик пулса пурăнас шухăшсем çуралса ӳсе пуçланă.

— Пин гектар çӗр.. Вунă-вунпилӗк ял ман алăра пулать. Темиçе пин тарçă... Миллионлă доходсем!

Ун пӳрнисем хăйсене тӗллӗнех урăх клавишсем çине куçса, темле ташă кӗввине выляма пикеннӗ. Ие жандарм, комендантпа пӗрлех ӗçсе халь пыркка аçисем пек хӗрелсе кайнăскерсем, пӳртрен чупса тухса ыталаннă та, ташлама тытăннă.

Анчах нумай ташлайман вӗсем.

Ял хыçӗнчен, масар енчен, вӗсем патне хăватлă, никам пусарса лартма пултарайман юрă янраса çитнӗ. Иртнӗ кунсенчи пек пӗччен хӗрарăм сасси мар — пысăк, вăйлă хор юрланă ăна!

Уйăх та хӗвел пекех пурччӗ пирӗн пӗр пике,
Халӗ те асрах-ха вăл, халь те чӗререх.
Çӳçӗ—сар кăлканччӗ ун, шăпкăрч пек юрлатчӗ,
Куçӗ çунтаратчӗ ун витӗр витӗрех.

Комендант аллинчи аккордеон сасартăк улшу тискер сассем кăларнă та, çӗре ӳкнӗ. Ташлакан жандармсем юпасем пек пулса тăнă. Комендант пӗр хушă нимӗн те калама пултарайман. Юрă вăйлăран вăйлă илтӗннӗ:

Халь ăçта-ши, çăлтăр пек, çутă та таса куçсем,
Халь ăçта-ши çав хӗрӗн ӳт-пӗвӗ канать?

— Партизансем вӗт ку! — кăшкăрса янă комендант, мӗн пулса иртнине тинех тавçăрса илсе. — Пурне те тă-

ратăр! Халех, çак самантрах! Çавăрса илĕр, пурне тĕ тытса килĕр!.. Хăвăрт, сыснасем! Е хăвăра малтан вĕлерсе пĕтерессе кĕтетĕр-и?

Юрӑ халь аслати сасси пекех кĕрленĕ унăн хăлхинче:

Хĕршĕн тавăрмашкăнах йăтрăмăр пăшал...

Жандармсемпе полицейскисем, автомачĕсенчен пеме хăтĕрленсе, масар еннелле чупнă. Хăйсене мĕн кĕтнине пăлах та чухламан вĕсем. Масар патне çитесси пĕр çĕр—çĕраллă метр юлсан вара, вĕсене хирĕç пĕр харăс виçĕ пулемĕт шатăртатма тапратнă. Партизансем паçăрах кĕтсе ларнă вĕсене, хăйсен юратнă юрăçине çакса вĕлерншĕн нимĕçсене хаяррăн тавăрма тупа тунă вĕсем. Çавăн та халь вĕсен пулемĕчĕсемпе автомачĕсем чарусăр ĕçленĕ...

Малти жандармсем çавăнтах — тек нихçан та тăрайми пулса ӳкнĕ, каяраххисем пур çĕрелле тарма тапратнă, анчах партизансен пульисем вĕсене пур çĕрте те хăваласа çитнĕ. Çав вăхăтрах масар хĕррине вырнаçтарса лартнă икĕ миномĕт ĕçлеме тапратнă. Йывăр минăсем, пĕрин хыççăн тепри, урам тăрăх ӳлесе иртсе, шăпах комендантăн „крепăçĕ" çине пырса ӳкнĕ. Темиçе самантран ку çăхан йăви талккишпех хыпса илнĕ.

Ял хыçĕнче, пулемĕт сассисемпе хутăш, „урра" кăшкăрни янраса кайнă. Партизансем яла пырса кĕнĕ...

Нимĕç сывлăшĕ те юлман вара кунта. Хĕрарăм тумне тăхăнса тарма тăнă коменданта хресченсем хăйсемех хуса çитсе тытнă та, хăй тутарнă виселица çинех туртса çакнă. Унăн „крепăçне" çĕрпе танаштарнă — йĕрне те хăварман.

Хĕр-юрăçăн масар тăпри çине партизансем пĕчĕк памятник туса лартнă. Эп юриех кайса куртăм ăна. Питĕ гиптерлĕ, хитре тунă. Чул юпа çумне çыпăçтарнă пăхăр листи çине çапла çырса хунă:

„Партизанка Маша. Пуҫне тӑван ҫӗршывшӑн хунӑ. Унӑн ятне те, унӑн юррисене те халӑх нихӑҫан та манас ҫук".

Чӑнах та ҫав, ун пек ҫынсене эпир ӗмӗрте те манма пултарас ҫук. Вӗсен ячӗсем яланах халӑхри ҫӗнтерӳ юррисем пек янрамалла...

Декабрь 1943.

В. № 2159

1944
Акт № 1241/7
Вкладн. л.

## ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Вĕри чĕре | 3 |
| Старик № 33 | 31 |
| Салтак чунĕ | 72 |
| Юлташ пурнăçĕ | 82 |
| Лăпкă çын | 101 |
| Амăшĕн сăмахĕ | 115 |
| Юрă пурĕпĕр янрать | 125 |


2 ОТК


Редактор *С. В. Эльгер.*

НТ 00226 Подписано к печати 30-VI—44 г. Заказ 1045 Тираж 3.000 экз.

Типография № 1 Упр. полиграф. пром. при СНК ЧАССР, г. Чебоксары

Цена ~~5 руб. 50~~ коп.

44-3380/14
0-55
11156
Чув.
2-527
4

*ЛЕОНИД АҪАКОВ*

# НА ПОЛЕ БОЯ

*рассказы*

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары—1914